К76
Д18
К-44157

А.П.Данилов

Журналистами становятся по призванию

Национальная библиотека ЧР
k-044157

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

МИНИСТЕРСТВО ОБРАЗОВАНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ

Чувашский государственный университет имени И.Н.Ульянова

А.П.Данилов

Журналисты становятся по призванию

Творческая деятельность Ивана Яковлевича Тенюшева

Чебоксары 1998

ББК 76.1

Журналистами становятся по призванию. Творческая деятельность Ивана Яковлевича Тенюшева /Автор и составитель А.П.Данилов. - Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1998. - 92 с.

ISBN 5-7670-0331-0

Книга подготовлена к 75-летию Ивана Яковлевича Тенюшева, заслуженного работника культуры Чувашской Республики, члена Союзов писателей и журналистов России, доцента факультета журналистики Чувашского госуниверситета.

Для широкого круга читателей.

К-44157

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ББК 76.1

ISBN 5-7670-0331-0

© Издательство
Чувашского
университета
© Данилов А.П.

ПРОВЕ...
20-10 15 ИЮН 20..

ДЕЛО ЕГО ЖИЗНИ

Публицисту и писателю Ивану Яковлевичу Тенюшеву выпала интересная судьба: ему довелось стоять у истоков подготовки журналистских кадров в Чувашии. В шестидесятых годах в республике остро ощущалась нехватка национальных журналистских кадров. С открытием университета возникла идея готовить их в новом учебном заведении с первого же года его существования. В ноябре 1967 г. по рекомендации правления Союза журналистов республики И.Я. Тенюшева пригласили на кафедру чувашского языка и литературы вести журналистские дисциплины. Так зародилась подготовка журналистских кадров в университете путем специализации. Начал он работу почасовиком, вскоре стал ассистентом, а впоследствии – старшим преподавателем и доцентом.

Скажем прямо: нелегко давалась ему работа по подготовке специалистов нового профиля, так как ни программ, ни учебных пособий по дисциплинам национальной журналистики тогда не было. Ночи напролет приходилось ему сидеть и корпеть над составлением конспектов лекций, циклов упражнений по дисциплинам специализации. Шаг за шагом им были разработаны курсы лекций по истории чувашской журналистики, основам журналистики, переводу газетных материалов с русского на чувашский язык, литературному редактированию и мастерству журналиста. Им также была продумана система прохождения студентами журналистской практики в средствах массовой информации в летнее каникулярное время. Труд практикантов ими оплачивался.

Подготовка журналистских кадров в университете осложнялась тем, что группа профессоров ставила палки в колеса. Они выдвинули ложную версию о том, что ведение журналистских дисциплин не углубляет, а мешает филологической подготовке студентов; сделали попытку свести на нет нужное дело путем перевода на факультативные начала даже постановлением бюро обкома КПСС. Однако удалось сохранить специализацию журналистских кадров в университете в первоначальном

статусе. Во всех этих перипетиях преподаватель журналистики сумел проявить гибкость и напористость.

- Мне вообще везло в жизни, – рассказывает он сам. – На моем жизненном пути постоянно встречались настоящие друзья, которые охотно протягивали руку помощи. Такими оказались заведующие кафедрами член-корреспондент Академии педагогических наук, профессор М.Я. Сироткин, профессор И.И. Одюков, деканы профессор М.М. Михайлов, доцент В.Я. Канюков. В деле подготовки журналистских кадров во всем поддерживают наши усилия первый ректор университета профессор С.Ф. Сайкин, ректор университета академик Л.П. Кураков.

В подготовке журналистских кадров доцент И.Я. Тенюшев считает главным правильный подбор контингента студентов. Журналистами становятся по призванию. Следовательно, у них, как и у поэтов, должно быть нечто данное богом, то есть определенный задаток в способностях, увлечение данным видом деятельности. Именно таких следует искать среди абитуриентов, среди творческой молодежи. Главное в судьбе молодого человека - сесть в свои сани. А о журналистах доцент судит так: они должны быть наблюдательными и вдумчивыми людьми, борцами за правду и справедливость, нести ответственность за все происходящее.

В первое время журналистские дисциплины преподавал в университете только И.Я. Тенюшев. С расширением подготовки журналистских кадров пригласили на почасовых началах вести практические занятия тогдашнего редактора газеты "Пионер сасси" Клима Сергеевича Сергеева, ответственного секретаря газеты "Коммунизм ялавĕ" Владимира Петровича Петрова. Через некоторое время удалось "приманить" из Казанского университета доцента Константина Константиновича Петрова. В течение первых 18 лет в университете путем специализации было подготовлено и направлено на работу по полученной профессии 150 журналистов, большинство которых продолжает успешно трудиться в редакциях газет и журналов, на телевидении и радиовещании. Многие из них стали ведущими руководителя-

ми средств массовой информации. В числе таких назовем председателя Комитета Чувашской Республики по печати Н.А. Григорьева, главного редактора флагмана чувашской печати – газеты "Хыпар" А.П. Леонтьева, редакторов газет "Чăваш ен" и "Хресчен сасси" И.И. Семенова и С.Л.Павлова, заместителя редактора газеты "Хресчен сасси" В.Н. Рыбкина, ответственных секретарей редакций газет "Советская Чувашия" и "Хыпар" В.И. Васильева и Т.В. Ильину, председателя правления Союза журналистов Чувашской Республики В.П. Комиссарова и многих других. Ряд выпускников университета трудятся на ключевых должностях в чувашском телевидении и радиовещании (Т.В. Ильина, М.Н. Мареева, Л.Н. Сачкова, И.Н. Перов, Л.И. Ильин, Ю.А. Фролов), редакторами районных газет (Н.Д. Ларионов, А.И. Тихонов, В.Н. Константинов, Н.А. Порфирьев, И.А. Прокопьев, Ю.П. Листопад и др.). Пятеро выпускников продолжительное время находилось у руля вузовской газеты "Ульяновец". Приведенные факты красноречиво свидельствуют о том, что подготовка журналистских кадров в университете велась и ведется на должном уровне.

Иван Яковлевич делом своей жизни по-прежнему считает журналистику и подготовку кадров для нее. Он продолжает работать доцентом факультета журналистики, ведет ответственные лекционные и практические курсы: историю чувашской и русской журналистики, литературное редактирование и книгоиздательское дело.

Родился И.Я. Тенюшев 19 января 1923 года в селе Алманчикове Батыревского района Чувашской Республики в крестьянской семье. В Великую Отечественную войну он вместе со своими ровесниками надел серую солдатскую шинель. Признаться, оказался счастливее многих. Из парней 1923 года рождения девяноста девять из ста остались лежать на полях сражений. Был трижды ранен, однако находил силы снова воспрянуть духом. Награжден орденами Красной Звезды, Отечественной войны 1 степени, медалями. Удостоился личной благодарности маршала И.С. Конева.

Бывший воин в 1955 г. окончил Чувашский государ-

ственный педагогический институт им. И.Я. Яковлева и отделение журналистики Высшей партийной школы при ЦК КПСС в 1964 г. Кандидатскую диссертацию по теме "Литературно-публицистическая деятельность чувашского просветителя И.Я. Яковлева" защитил во Львовском государственном университете им. Ивана Франко. В соответствии с полученным образованием работал ответственным секретарем редакции районной газеты, редактором районной газеты, редактором комсомольско-молодежной газеты Чувашии, заведующим отделом редакции республиканской газеты "Коммунизм ялавӗ", заведующим сектором печати, телевидения и радиовещания Чувашского обкома КПСС. Ему довелось принимать самое активное участие в возрождении газеты "Пионер сасси", в создании библиотечки "Капкана" и всечувашской газеты "Вучах" и быть главным редактором последней. В течение десяти лет возглавлял университет общественных корреспондентов республики в качестве его ректора.

После выхода на пенсию продолжал работу на должностях редактора и старшего редактора в Чувашском книжном издательстве. Одновременно перешел в бизнес – организовал Производственно-издательское и торговое малое предприятие "Булгар". Кроме того, он имеет личный патент на печатную продукцию. Выпущено им и его малым предприятием 21 книга, много другой печатной продукции. К ним следует отнести книги "Рецепты народной медицины", "Там, где жил и воевал В.И. Чапаев", "Рассказы о животных", "Чудо природы-грибы" и др.

Известно, на данном отрезке времени книгоиздание не является прибыльным бизнесом, но альтернативное издательство используется им как творческая студия студентов-журналистов. В данное время они готовят книгу "Мечты и разочарования предпринимателей". Осуществлен выпуск книги об агрофирме им. Ленина Батыревского района.

К творческой литературной деятельности приобщился с 1946 г. опубликованием в журнале "Ялав" рассказа "Таварӑу" (Месть). С тех пор он постоянно выступает

в печати публицистическими, литературоведческими и художественными произведениями. Им опубликовано 14 книг.

Свои основные научные труды он посвятил истории и теории чувашской журналистики, анализу публицистической деятельности тех или иных деятелей чувашской культуры. К ним относятся: "Роль стенной печати в организации и воспитании детского коллектива" (1959), "Радио – важная форма партийной пропаганды" (1960), "Чувашский праздник учюк" (в показе И.Я. Яковлевым, 1971), "У истоков письменности" (1971), "При братской помощи" (1973), "Такой статьи не было" (1974), "Литературно-публицистическая деятельность чувашского просветителя И.Я. Яковлева" (1980), "Журналистская практика. Программы и методические указания по учебной и производственной практике студентов отделения чувашского языка и литературы" (1983), "Массовые рейды рабочих и сельских корреспондентов в Чувашии" (1983), "Оружием публициста" (О публицистической деятельности чувашского народного поэта Я.Г. Ухсая, 1984), "Незабываемые встречи" (О литературно-публицистическом творчестве И.Н. Никифорова-Яндаша,1984), "В поисках нового" (О научной деятельности К.К. Петрова, 1984), "Он звал к борьбе" (О творчестве журналиста и писателя Д.А. Деомидова, 1986), "Завещание известного писателя" (О творчестве В.З. Иванова-Паймена, 1987), "Первые чувашские публицисты" (1987), "И.Я. Яковлев-публицист" (1980), "Пиши да умеючи" (1988), совместно с А.П. Павловым "Чувашскому книжному издательству – 70 лет" (1990), "Чувашскому книжному издательству – 75 лет" (1995). Им также написаны и опубликованы книги "Ял Советĕнче" (В сельском Совете, 1958), "Из опыта работы школьной парторганизации" (в соавторстве с В.Н. Николаевым, 1961), "Организация самостоятельной работы студентов" (в соавторстве с другими учеными, 1984) и др. Указанные его труды опубликованы отдельными книгами или в сборниках и журналах.

И.Я. Тенюшев причастен к переводческой работе. Лучшими переводными книгами его являются трилогия

Л.Н. Толстого "Детство. Отрочество. Юность", Н. Котыша "Чайка". В газетах и журналах постоянно публикуются художественные произведения Ивана Яковлевича. Их сборник был издан в 1956 году под названием "Çыхман çапă шăпăр мар" (Рыба в реке – не в руке). Однако опубликованные рассказы и очерки пока еще так и не увидели воплощения в отдельный сборник. В 1994 году читатели с большим интересом встретили его роман "Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç" (Их оставалось только трое). Кстати, это издание было раскуплено буквально в несколько недель. Автор находит время и для продолжения писательской деятельности. Он подошел к завершению подготовки к печати сборника исторических легенд. Дописывает вторую книгу романа "Их оставалось только трое", где ведется повествование о боевых буднях солдат и офицеров в годы Великой Отечественной войны. Как всегда богата творческая деятельность И.Я. Тенюшева в текущем году. Готова первая часть учебного пособия "Зарождение и развитие чувашской публицистики и журналистики". Усиленно ведет он работу над второй книгой. В журналах "Ялав", "Тăван Атăл" и сборнике научных трудов выступил с тремя статьями по вопросам публицистической и просветительной деятельности И.Я. Яковлева. По вопросам истории и теории публицистики опубликовал четыре статьи в республиканских газетах. Пишет как на родном, так и на русском языках. В дни празднования 150-летия со дня рождения И.Я. Яковлева выступил на научно-практических конференциях в Чебоксарах, Ульяновске, Батыреве и Цивильске с пятью докладами с показом просветительной деятельности патриарха чувашской культуры в современной прессе.

На факультете журналистики доцент И.Я. Тенюшев пользуется уважением как студентов, так и своих коллег. Он добросовестно исполняет обязанности заместителя декана по научной работе, ученого секретаря Совета факультета и куратора группы. Он не ограничивается тем, что неустанно ведет научную работу, к этому делу вовлекает студентов факультета. На студенческой научной конференции, в секции истории жур-

налистики, организованой им вновь, 11 студентов выступили с докладами.

И.Я. Тенюшев награжден Грамотой Академии педагогических наук РСФСР, Почетной грамотой Президиума Центрального Комитета профсоюза работников культуры, Почетной грамотой обкома КПСС и Совета Министров ЧАССР, Почетной грамотой Союза журналистов СССР. В 1987 году удостоился получения ежегодной журналистской премии им. С.В. Эльгера. Многолетний плодотворный труд своего земляка по воспитанию молодого поколения алманчиковцы отметили присвоением звания Почетного гражданина села. Совсем недавно, Указом Президента Чувашии от 17 февраля 1998 г., И.Я. Тенюшеву присвоено звание "Заслуженный работник культуры Чувашской Республики".

Иван Яковлевич состоит членом Союза журналистов Чувашской Республики, принят в члены Союза писателей России. Неутомимо ведет он разностороннюю, многогранную творческую деятельность. Значительному кругу читателей он известен как журналист-публицист, писатель-романист и исследователь-ученый. Его отличают завидное трудолюбие, внутренняя дисциплина и постоянное стремление к поискам. Много сил и энергии он отдает благородному делу воспитания молодого поколения, подготовке журналистских кадров, изучению истории и теории чувашской журналистики.

ПУБЛИЦИСТ, ТĔПЧЕВÇĔ, ПИСАТЕЛЬ

***(Т.Алексееван диплом ĕçĕнчен.
Ăслăх ертÿçи А.П.Данилов доцент)***

Диплом ĕçне пурнăçланă вăхăтра Иван Яковлевич чăнахах та пур енлĕ пултаруллă çын пулнине туйса илтĕм. Вăл публицист та, тĕпчевçĕ те, писатель те. Унăн питĕ нумай ĕç пичетленнĕ. Курс ĕçĕнче кĕскен публицистикăпа тĕпчевçĕ ĕçне çутатрăм. Диплом ĕçĕ çырнă чухне çак темăна татах та тарăнрах çутатса парасси тĕп тĕллевсенчен пĕри пулчĕ. Ытларах И.Тенюшев чăвашсен малтанхи публицисчĕсене тĕпченĕ. Тĕслĕхрен, Спиридон Михайлович Михайлов–Янтуш, Николай Иванович Золотницкий, Иван Яковлевич Яковлев. И.Яковлевăн пултарулăхĕнчи ĕçнехĕлне тĕпĕ–йĕрĕпе çутатса пама тăрăшнă.

Чăваш патшалăх университетĕнче журналистикăпа специализаци илекен студентсем валли вĕренӳ пособийĕсем те çырнă. Уйрăмах çаксене асăнса хăварма пулать: “Чăваш АССРĕнчи ĕçялкорсен массăллă рейчĕсем”, “Журналистская практика, программа студентов отделения чувашского языка и литературы”, “Организация самостоятельной работы студентов” ĕçĕсем.

И.Тенюшев массăллă информаци хатĕрĕсен ыйтăвĕсемпе кăна мар, ытти тĕпчев ĕçĕсем те чылай çырнă. Çавăнпа та 1987 çулта И.Тенюшева, истори наукисен кандидатне, Чăваш кĕнеке издательствин редакторне, Чăваш кĕнеке издательстви пичетлесе кăларнă “Чăвашсен малтанхи публицисчĕсем” кĕнекешĕн Çемен Элкер ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕн ятне панă.

Диплом ĕçне пурнăçланă чухне эпĕ хамăн ума виçĕ тĕллев лартрăм. Чи малтанах пичетленсе тухнă кĕнекесемпе паллашасси. Тĕпчев ĕçĕнче паллă публицистсен пултарулăхне хаклани, журналистикăпа публицистикăн пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсене çутатнине пăхса тухасси. Юлашки тĕллев писатель ĕçне мĕнле хутшăннине тата мĕнле произведенисем çырнине палăртасси пулчĕ.

И.Тенюшевăн пултарулăхĕ питĕ пуян. Вăл куçару ĕçĕпе те ĕçленĕ. Унăн виçĕ куçару кĕнеки кун çути курнă.

Вăл калавсем те çырма ăста. “Çыхман çапă шăпăр

мар", "Тимĕр нумай калаçмасть" истори халапĕ, "Йĕпреçпе Шемек" легенда", "Çĕнĕ вăй", "Юратнă арăм", "Сухăр вĕлтĕрен". Вĕсем тĕрлĕ журналсенче пичетленсе тухнă. 1994 çулта "Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç" вăрçă темипе çырнă пысăк роман кун çути курнă. Çав çултах "Тăван Атăл" журналта "Малтанхи çапăçусем" роман пичетленнĕ. Автор хăй те Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Çавăнпа та романти персонажсене, конфликта, тĕп идейăна та ăнланмалла çутатса панă. Манăн И.Тенюшевпа хăйĕнпе те час-часах курса калаçма тӳр килчĕ. Диплом ĕçне çырса пурнăçланă чухне кĕнекесем тупса парас енĕпе те нумай пулăшрĕ. Вăл ырă кăмăллă та ĕçчен çын. Тивĕçлĕ канура пулин те алă усса лармасть, университетра вăй хурать.

И.Тенюшевăн тĕрлĕ хаçатсенче пичетленнĕ материалĕсене те курма пулать. Вăл вырăсла та, чăвашла та çырать. Хаçатра пичетленсе тухнă публикацисен списокĕпе те паллашрăм. Журналистикăн кашни жанрĕпе çырнă. И.Тенюшевăн тĕпчев ĕçĕ паянхи кун та журналистикăна аталанма вăй парать.

Иван Яковлевич Тенюшев 1923 çулта январĕн 19-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Алманчăра çуралнă. Ялти çичĕ çул вĕренмелли шкултан ултă çул хушшинче вĕренсе тухсан, вăл Патăрьелĕнчи педагогика училищине вĕренме кĕрет. Кунта икĕ çул çурă вĕренсен, Чăваш АССР Çутĕç министрĕн приказĕ тăрăх ăна вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыракан темиçе юлташĕпе пĕрле учитель пулса вĕрентме яраççĕ. Иван Тенюшевăн Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимешĕнчи пуçламăш шкулта пĕрремĕш класа вĕрентмелле пулса тухать. Малтанхи вăхăтра йывăрлăхсем те сике-сике тухнă. Вăл кунта часах ачасем валли илемлĕ литература тата хор кружокĕсем йĕркелет. Хăйĕн тăрăшулăхĕпе, тимлĕхĕпе кĕçех пурте пĕлекен учитель пулса тăрать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче ăна аслă классене вĕрентме куçараççĕ.

Педучилищĕрен вĕренсе тухсан, Тенюшев аслă вĕренӳ заведенийĕнче вĕренме ĕмĕтленнĕ. Анчах çак ĕмĕт Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнипе ун чухне пурнăçа кĕреймесĕр юлнă. Ирсĕр фашистсемпе вăл Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче, каярахпа Великие Луки çывăхĕнче çапăçнă.

“Чăваш коммуни” хаçат 1942 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче И.Я.Тенюшев фронтовикăн çырăвне “Манăн пурăнас килет” ятпа пичетлесе кăларать. Унта çакăн пек йĕркесем пур:

“Манăн пурăнас килет! Манăн çут тĕнче илемĕпе савăнас килет. Манăн хам çуралнă тăван кил-çуртра тăван атте-аннене йăпатса, телейлĕ пурăнас килет. Манăн Тăван çĕршыва татах та ытларах илем кӳрессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлес килет. Манăн çын пек пурăнас килет. Çавăнпа та тискер кайăк пулса кайнă нимĕçе вĕлермелле. Çавăнпа та эпĕ пеме – винтовка, чикме çивĕч хĕç тытрăм”.

Вăрçăн вăрăм çулĕсем Будапешта илсе çитеричченвăл виçĕ хут аманнă, сывалсан каллех алла хĕçпăшал тытнă.

Демобилизаци йĕркипе киле таврăнсан, Тенюшев Чкаловски районĕнчи “Коммунизм байрагы” хаçат редкцийĕн ответлă секретарĕнче, Йĕпреç районĕнчи “Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн” хаçат редакторĕнче, “Коммунизм ялавĕ” хаçат редакцийĕн пай заведующинче ĕçлет, КПСС Чăваш обкомĕнче пичет, телевиденипе радио секторĕн заведующийĕнче ĕçленĕ тапхăрта И.Я.Тенюшев “Пионер сасси” хаçата, “Капкăн” библиотекине кăларма пуçлассишĕн тăрăшать.

Шупашкарта университет уçăлсан И.Я.Тенюшева унта вĕрентме чĕнеççĕ. Республикăна журналистсен квалификациллĕ кадрĕсем кирлĕ. Çакна май И.Н.Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнчи чăваш чĕлхипе литература уйрăмĕнче студентсене журналистикăна специализаци йĕркипе вĕрентме пуçлать Иван Яковлевич. Студентсен малтанхи ушкăнĕ журналистикăна вĕренме университет уçăлсанах, вăтăр çул каяллах, пуçланнă. 1971 çулта вара вĕсем, аслă пĕлӳ илсе, прессăра ĕçлекенсен йышне хушăннă. Çамрăкрах чухне И.Тенюшев сăвă хыççăн сăвă шăрçалать, вĕсене Патăрьел районĕнчи “Колхоз байрагы” тата Елчĕк районĕнчи “Колхоз ялавĕ” хаçатсенче пичетлет. Часах сăввисем вара Шупашкарти хаçат-журналта курăнма пуçлаççĕ. “Сунтал” 1940 çулти тăххăрмĕш номерте пичетленĕ “Çуллахи каç” сăвăра çутçанталăк илемĕпе пуянлăхне сăнласа парать.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн Тенюшев сăвă-сем мар, ытларах калавсем хайлать. Вĕсене республикă-ри хаçат-журналта пĕрин хыççăн теприне кун çути кă-тартать. Каярахпа çав калавсене "Çыхман çапă шăпăр мар" ятпа уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларать.

"Кашни произведени хăйне евĕр илĕртет пире. Хăшпĕр кĕнеке кăмăла майĕпен, систермесĕр тыткăна илет, ăна вуланăçемĕн вулас килет. Ун пек чухне кĕнеке авторĕпе пĕрле хумханатăн, савăнатăн. И.Тенюшевăн нумай пул-масть республикăри кĕнеке издательствинче пичетленсе тухнă "Çыхман çапă шăпăр мар" кĕнекине алла илсен, тӳрех çавăн пек кăмăл-туйăм çуралать"[1].

Пединститутра вĕреннĕ çулсенче ăна тăлмачсен кру-жокĕн ертӳçи туса хураççĕ. Вăл ертсе пынипе кружок членĕсем Кави Наджмин "Çурхи çилсем" кĕнекине чă-вашла куçарса кăлараççĕ. Çавăн хыççăн И.Тенюшев бе-лорус калавĕсене, А.Серафимович произведенийĕсене куçарас ĕçе хутшăнать. Л.Н.Толстойăн "Ача чухнехи тата çамрăклăхпа яш ĕмĕр", Н.Котышăн "Чайка" кĕнекисене куçарса пичетлет.

И.Я.Тенюшев массăлла информаци хатĕрĕсен енĕпе тата ытти ыйтусемпе пайтах тĕпчев ĕçĕсем тунă. Çав шутра "Ял Советĕнче" /1958/, "Роль стенной печати в организации и воспитании детского коллектива" /1959/, "Радио-партилле пропагандăн паха форми" /1960/, "Из опыта работы школьной парторганизации" /1961/, тепĕр авторпа пĕрле/, "Çамрăк журналистсен кружокĕ" /1980/, "Литературно-публицистическая деятельность чувашского просветителя И.Я.Яковлева" /1980/ кĕнекесемпе статьясе-не асăнса хăвармалла. Ăслăлăх енĕпе пурĕ 89 статья пичетлесе кăларнă.

И.Я.Тенюшев университетăн методика советĕнче "Сту-дентсем харпăр хăй тĕллĕн ĕçлессине йĕркелесси" сек-ци ĕçне активлă хутшăнать. Историпе филологи факуль-тетĕнче И.Я.Тенюшева Ученый совет членне суйланă. Факультетри "Студенческий горизонт" стена хаçачĕн ред-коллегийĕнче вăй хурать. Вăл ертсе пынипе факультетри çамрăк журналистсен "Çивĕч перо" кружокĕн занятийĕ-сем интереслĕ те усăллă иртнĕ.

"Пионер сассинче" Тенюшев кашни çулах университет

абитуриенчӗсен "Ҫамрӑк журналист" конкурсне йӗркелет. Ку хаҫатрах юнкорсен "Ҫивӗч перо" шкулне ертсе пынӑ. Ҫав вӑхӑтрах Иван Яковлевич – журналистсен икӗ ҫуллӑх семинарӗн ертӳҫи. Шупашкарти рабкорсен икӗ ҫуллӑх шкулӗнче те вӑл занятисем тӑтӑшах ирттернӗ. И.Я.Тенюшев – Чӑваш Республики журналисчӗсен Союзӗ правленийӗн членӗ, журналистсене ҫулсерен паракан С.В.Элкер ячӗпе хисепленекен премии комиссийӗн членӗ те пулнӑ.

И.Тенюшев "Чӑваш халӑх ҫутлӑхҫин И.Я.Яковлевӑн литературӑпа публицистикӑри ӗҫӗ-хӗлӗ" темӑпа диссертаци хӳтӗлесе истори наукисен кандидачӗ пулса тӑнӑ.

И.Я.Тенюшев хӑйне чи малтанах педагог тата журналист тесе шутлать. Икӗ профессийӗпе те унӑн ӳсӗмсем ҫук мар: ялти пуҫламӑш шкул учителӗнчен – аслӑ вӗренӳ заведенийӗн доценчӗ, факультет деканӗн заместителӗ /1972-1979 ҫулсенче/, райхаҫат редакцийӗ секретарӗнчен – республикӑри ҫамрӑксен хаҫачӑн редакторӗ, парти обкомӗнчи сектор заведующийӗ таран илсе пырать ӑна ӗҫченлӗхпе пултарулӑх ҫулӗ. Университетри ӗҫӗ Тенюшевӑн икӗ профессийӗнчен пӗрре туса хурать: вӑл тӑван Чӑваш Республикинчи хаҫат-журнал валли журналистсем хатӗрлет.

И.Я.Тенюшева 1961 ҫулта РСФСР педагогика наукисен Академийӗн Хисеп грамотине, 1968 ҫулта Культура работникӗсен профсоюзӗн Центральнӑй Комитет Президиумӗн Хисеп грамотине панӑ. Кунсӑр пуҫне, ӑна Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр, I степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗсемпе тата пилӗк медальпе наградӑланӑ.

Паллӑ ӗҫӗсене татах та асӑнса хӑварма пулать. "Чӑвашсен малтанхи публицисчӗсем" /1987/, "Чувашскому книжному издательству – 70 лет" /1990, А.П.Павлов авторпа пӗрле/, "И.Я.Яковлев – публицист" /1990/, "Чувашскому книжному издательству – 75 лет" /1995, А.П.Павлов авторпа пӗрле/, "Вӗсем виҫҫӗн ҫеҫ юлчӗҫ" /1994/.

Халӗ И.Тенюшев "Пӑлхар" издательствӑн директорӗ пулса ӗҫлет. Ҫав вӑхӑтрах Чӑваш патшалӑх университетӗнчи журналистика факультетӗнчи студентсене вӗрентет. Пултаруллӑ тӗпчевҫӗ, писатель, хастар публицистран ҫамрӑксен вӗренсе юлмалли чӑнахах та питӗ нумай. И.Тенюшевӑн пултарулӑх ҫул – йӗрӗ пуян та вӑрӑм.

ИВАН ТЕНЮШЕВ – ТĔПЧЕВÇĔ

1. И.Я.Яковлев публицистикине тĕпчени

Чăвашсен аслă та чаплă çутлăхçи И.Я.Яковлев хăй вăхăтĕнчи çынсене тĕрлĕ енлĕ пысăк ыйтусемпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе тĕлĕнтернĕ. Вăл, чи малтанах, чăваш çырулăхне пуçласа янă, халăха çутта кăларас ĕçе йĕркеленĕ. И.Я.Яковлев чăваш фольклорне пуçтарса тĕпченĕ, пĕрремĕш букварьсен тата тăван чĕлхепе вуламалли кĕнекесен авторĕ пулнă. Вăл чăвашсен пĕрремĕш ачапăча писателĕ, литература критикĕ, чаплă тăлмачă, хаçатсемпе журналсен активлă корреспонденчĕ те пулнă.

“И.Я.Яколевăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ, унăн тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕ çинчен сахал мар çырнă ĕнтĕ. Анчах та унăн публицистикăлла ĕçĕсене тĕплĕ те тарăн, сарлака çутатса паракан ятарласа çырнă наукăлла ĕç халиччен пулманччĕ-ха. Çак тĕлĕшпе илсен, И.Я.Тенюшевăн “И.Я.Яковлев – публицист” кĕнеки журналистсемшĕн кăна мар, историксемпе литературоведсемшĕн те, лингвистсемшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ парне пулчĕ”[2].

Чăваш публицистики, чăваш журналистики çуралса аталанни Яковлев ячĕпе тачă çыхăнса тăнине ĕнентерсе, тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать Тенюшев. Вăл И.Я.Яковлевăн илемлĕ литературăпа публицистикăри пултарулăхне тăватă тапхăра уйăрса тишкернĕ. Пĕрремĕш тапхăр /1867-1875 çç./ публицист чăвашсен йăли-йĕрки тата шăпи пирки мĕн шутланипе çыхăннă. Вăл публицистикăпа гимназие вĕренме кĕрес умĕнех интересленме пуçлать. Пĕрремĕш произведенийĕ “Чăваш уявĕ учюк” ятлă. Ăна пичете хатĕрлеме М.В.Арнольдов, вырăс журналисчĕ тата педагогĕ, пулăшнă. “Жанр енчен пăхсан, ку произведенисторипе этнографи очеркĕ. Ăна çырса кăларасси чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе ĕненĕвне пăсса кăтартакан материалсем пичетленсе тухнинчен килнĕ. Вĕсенчен пĕрне А.Пантусов “Кăрмăш уездĕнчи чăвашсем мĕне ĕненеççĕ” ятпа пичетленнĕ /Симбирские губернские ведомости. 1867. Февралĕн 23-мĕшĕ тата 28-мĕшĕ/”[3]. Официаллă историографипе православи чиркĕвĕ майлă авторсем чăвашсене мĕскĕне хурса кăтартма пăхнине И.Я.Яковлев пичетри малтанхи сăмахĕнчех хирĕç тăрать, тăван халăхĕн пурнăçне тĕрĕс ӳкерчĕксемпе кăтартать.

Н.И.Золотницкий туса хатĕрлесе Хусанта çаптарнă пĕрремĕш чăваш календарĕ пирки çамрăк автор çав çулхинех рецензи çырса пичетлет. Кунта Яковлев оригиналлă алфавит тума кирли çинчен малтанхи хут калать. Вăл ку тапхăрта çавăн пекех "Театр витĕмлĕхĕ çинчен", "Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн малтанхи утăмĕсем", "Шкул – çемье тата унăн нушисем" материалсем çырнă. Вĕсем педагог тĕнчекурăмĕ епле аталанса пынине палăртма пулăшаççĕ. Яковлев пуçламăш тапхăрта çырнă произведенисенчен чылайăшĕ халăха çутта кăларас тĕллевсемпе тӳрремĕн çыхăнман, çапах та вĕсенче автор халăха хӳтĕлени, ăна тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕхрен хăтарассишĕн ăнтăлни яр–уççăн палăрса тăрать.

И.Я.Яковлевăн пуçламăш тапхăрти /1867–1875 çç./ публицистикăлла ĕçĕсенче унăн тĕнчекурăмĕ аталанса çирĕпленни курăнать. "И.Тенюшев вара хăйĕн кĕнекинче И.Я.Яковлев чăвашсен пĕрремĕш ача–пăча писателĕ тата публицисчĕпе критикĕ пулнине, "И.Яковлева чăваш публицистикин ашшĕ тесе шутламалла" /141 с./ тенине нумай–нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пултарнă"[4].

Акă, кĕскен кăна, мĕнле çĕнĕлĕхсем пĕлетпĕр эпир çак кĕнекене вуласа пынă майăн. Хăш–пĕр авторсем Яковлев публицистикăпа гимназире вĕреннĕ чухне ĕçлеме пуçланă теме пăхаççĕ пулсан, И.Тенюшев ку шухăша хирĕçлет. Вăл Яковлев гимназие вĕренме кĕме хатĕрленнĕ вăхăтрах публицистикăпа ĕçленине ĕненмелле тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать. И.Я.Яковлевăн "Чăваш уявĕ учюк" ятлă очеркĕ 1867 çулхи мартăн 28–мĕшĕпе апрелĕн 4–мĕшĕнчех "Симбирские губернские ведомости" хаçатра, майăн 13–мĕшĕнче вара /çав çулхинех/ çав хаçатра "Солдалык кнеге" пичетленсе тухнă. "Манăн хаçатпа çыхăнса ĕçлеме пуçлани эпĕ гимназие вĕренме кĕме хатĕрленнĕ вăхăтпа тивет", – палăртать вăл хăй.

Чăваш публицисчĕ И.Я.Яковлев малтанхи ĕçĕсенчен пуçласах патшан бюрократла чиновникĕсене, пуясшăн, укçа–тенкĕшĕн антăхакан тĕн çыннисене тăрă шыв çине кăларнă, вырăс мар халăхсене ирĕксĕрлесе вырăслатассишĕн тăрăшнине çивĕччĕн хирĕçленĕ. Вăл халăхсем хушшинчи иксĕлми туслăхшăн хыпса çунакан çын, пур–

не те ырӑ тума тӑрӑшакан гуманист пулнӑ. Пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ лайӑх пурӑнтӑр тесе тӑрӑшнӑ.

Пултарулӑхӗн иккӗмӗш тапхӑрӗнче /1875–1893 ҫҫ./ И.Я.Яковлев публицист чӑваш нацине вӑй кӗртмелли программа туса хатӗрлет. Хусан вӗренӳ округӗнче чӑваш шкулӗсен инспекторне лартнӑ май, вӑл ырӑ шухӑшсемпе ӗмӗчӗсен ҫуначӗсене анлӑрах сарса ярать, сарлакарах та сулмаклӑрах плансем тӑвать. "Маларахри ӗҫӗ-хӗлӗпе халӑха ҫутта кӑларассин пысӑкрах тӗллевӗсене пурнӑҫлама шанчӑклӑ никӗс хывать педагог. Халӗ вара хӑйӗн умне тӑван халӑх валли ҫӗнӗ шкулсем уҫас, чӑваш хӗрӗсене хут вӗрентессине йӗркелес тӗллев лартать"[5]. Программин малтанхи йӗрӗсене "Хусан вӗренӳ округӗнчи чӑвашсене хут вӗрентесси ҫинчен пуҫа килнӗ шухӑшсем" ҫырура /1876 ҫ./ палӑртать. Кунта автор ҫӗнӗ шкулсем ӑҫта уҫмаллине, уҫнисене мӗнле пулӑшмаллине тӗплӗн ҫырса кӑтартать. "Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ ҫумӗнче хӗрарӑмсен училищине уҫни ҫинчен" статьяра /Церковные ведомости. 1893. Июнӗн 12-мӗшӗ/ публицист чӑваш хӗрӗсене хут вӗрентмеллине никӗслет. Ку вӑл Яковлев тӗп хула пичетӗнче кӑларнӑ пӗрремӗш статья пулнӑ.

Ҫавӑн чухнех унӑн тепӗр статйи – "Чӗмпӗрти чӑваш учителӗсем хатӗрлекен шкул тата ун ҫумӗнчи хӗрарӑмсен училищи" – миссионерсен обществин кӑларӑмӗнче кун ҫути курать /Православный благовестник. 1893. №11/. Хӗрарӑмсене хут вӗрентесси пирки чӑваш педагогӗ ҫырнӑ статьясене мал ӗмӗтлӗ интеллигенци ырласа кӗтсе илнӗ, мӗншӗн тесен унта халӑха ҫутта кӑларас енӗпе ҫӗнӗ тӗллевсене уҫса панӑ.

Кулленхи ӗҫӗ-хӗлӗнче Яковлев чӑвашсене хут вӗрентессин тӗп никӗсне туса хатӗрлет, вӗсене Атӑл тӑрӑхӗнчи вырӑс мар ытти халӑхсене те ҫутта кӑларма юрӑхлӑ тума тӑрӑшать. Хут вӗрентессин кӑткӑс ыйтӑвӗсене татса панипе пӗрлех вӑл тӑван халӑхӑн йывӑр шӑпи пирки ытларах та ытларах шухӑшлать.

Яковлев обществӑпа гражданла тата илемлӗ литературӑпа публицистикӑри ӗҫне-хӗлне чӑваш нацине ура ҫине тӑратмалли программӑна пурнӑҫа кӗртес тӗллевпе туса пыни пирки асӑнтӑмӑр ӗнтӗ. Ку программӑна вара

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
К-44157

"халăх массисен халсăр та тĕттĕм сиййĕсенче çутăпа культура сарасси", хĕрарăмсене хут вĕрентессине анлăрах туса пырасси, тăван халăхăн наци ăнкарăвне вăратасси, ăна малта пыракан вырăс тата тĕнче культури çумне явăçтарасси, хресчен хуçалăхĕн агротехника шайне çĕклесси тата пĕтĕм халăха нушасăр пурăнмалла тăвасси кĕнĕ.

"И.Я.Яковлев пултарулăхĕн виççĕмĕш тапхăрне тĕпчевçĕ чи вăрăмми те чи тухăçли тесе шутлать. Вăл 23 çула тăсăлать – 1894 çулта пуçланса 1917 çулччен. Халăха çутта кăларассишĕн паллă педагог ырми-канми тăрăшнин тĕллевĕсене кăтартать Тенюшев"[6]. Кĕнекере И.Я.Яковлев хăйне хирĕç тăракансемпе епле кĕрешни те куç умне яр-уççăн тухса тăрать. И.Яковлевăн ирĕксĕрлесех вырăслатас политикăна сивлекен, вырăс мар халăхсене хут вĕрентмеллине ĕнентерӳллĕн кăтартакан, кивĕ йĕркесемшĕн тăракан патша чиновникĕсене, шкул ĕçне хăйсен аллине çавăрса илессишĕн тапаçланакан пупсене тăрă шыв çине кăларакан статйисене кĕнекере уйрăмах тимлĕн пăхса тухнă.

Яковлевăн 1917–1922 çç. çырнă ĕçĕсем те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак тапхăрта Иван Яковлевич В.И.Ленин патне виçĕ çыру çырнă. "Ульяновсен çемйи çинчен аса илни", "Николай Иванович Ильминский", "Манăн пурăнăç" ятлă асаилӳсем çырса хатĕрленĕ. Çак ĕçсене кĕнеке авторĕ пысăк хак парса тишкерет.

Кĕнекери виççĕмĕш сыпăка "И.Я.Яковлев публицистăн ăсталăх уйрăмлăхĕсем" ят панă. Ку сыпăкра чăваш публицисчĕн эткерлĕхне тишкернĕ май публицистика предмечĕпе объекчĕ тата унăн тĕллевĕсемпе задачисен теорийĕ енĕпе тĕпчевçĕ хăйĕн шухăшĕсене тĕплĕн никĕслесе калани çĕнĕ кĕнекене самаях пуянлатать.

Виççĕмĕш сыпăкра Яковлев хăйĕн публицистикăлла произведенийĕсенче чăвашсен пурнăçĕнчи нумай ыйтăва çĕклет. Вĕсене çырмалли темăсене Яковлева пурнăç хăй хушса пынă. Унăн творчестви пурнăçри хирĕçӳсене анлă фронтпа хускатать. Çав хирĕçӳсене вăл пурнăçран илнĕ, унăн "тĕшне" тупса çырма пĕлнĕ. Хирĕçĕве çынсем хутшăнаççĕ, ăна хăйсемех татса параççĕ. Апла, публицистăн çынсем çинчен, çынсем валли çырмалла.

Яковлев публицистăн шухăшĕ вăрăм та тĕтреллĕ мар, уçăмлă та кĕске, хĕсĕнчĕк пулмаллине лайăх ăнланнă, çавăнпах вăл: "Эсĕ мĕн калани мар, сана ăнланни кирлĕ" теме юратнă. Хăйĕн вĕренекенĕ пулнă А.В.Рекеев патне çырнă çырăвĕнче çакнашкал вырăн пур: "1.Мĕн çинчен çырнине темиçе хутчен те вуласа тух, ытлашшине, ĕçпе çыхăнманнине чĕр. 2. Çынсем мĕнле калаçаççĕ, çапла çыр. 3. Тĕп-тĕрĕс те кĕске çыр. 4. Грамматикăна тĕплĕ тата ăнланса вĕрен".

"Яковлев çырма тытăниччен, чи малтанах, ку тема халăха кирлĕ-и, çук-и? тесе шутланă. Кирлĕ мар пек туйăнсан, çырман. Яковлев хăйĕн геройĕсене темиçе штрихпах сăнласа кăтартма пултарнă"[7].

Чăваш журналистики историне Яковлев публицистики тарăн йăранпа акăнса юлнă. Унăн литературăпа публицистика тематикин тĕп никĕсĕ халăх пурнăçне лайăхлатмалли çулсене шыраса тупса, вĕсене пурнăça кĕртесси пулнă.

Чăваш нацине аталантарассишĕн тăрăшнăран Яковлевăн ун чухнехи пурнăçпа тӳрремĕнех çыхăннă темăсене хускатма, çивĕч конфликтсене уçса пама тивнĕ. Конфликта татса памалли юрăхлă çулсене тĕрĕс кăтартни автора арбитр вырăнне лартать. Çавăнпа пĕрлех пайтах произведенисенче Яковлев – публицист арбитр çеç мар, ĕçе-хĕле хастарлă хутшăнакан та пулса тăрать. Хирĕçĕве татса памалли майсене шыраса тупни, вĕсене уçăмлăн кăтартни – Яковлев публицистикин ырă енĕ. Кунта автор çак çулпа пырать: чи малтан хирĕçӳ тупсăмне уçса парать, унтан тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тăвать, çавăн хыççăн хирĕçĕве пĕтермелли çулсене кăтартать. "Туслă çемье" корреспонденцие вара Яковлев урăхла йĕркеленĕ. Ку произведенире тĕрлĕ халăх ачисем – вырăссем, тутарсем, чăвашсем – пĕр шкулта пĕрле тăрăшнине, туслă çемьери пек пурăннине кăтартнă. Вулакана автор хăй шухăшĕсен ытамне кĕртет, анчах пĕтĕмлетӳ тумасть, мĕн патне чĕнет – ун пирки те тӳрремĕн çырмасть. Апла пулин те тĕллевĕ паллă. Корреспонденци тытăмĕ хăех вулакана автор чĕнĕвĕ патне илсе çитерет: халăхсем пĕр-пĕринпе туслă пурăнмалла.

Кĕнекен тепĕр паха енĕ – И.Я.Яковлев педагог-де-

мократ пулнине кӑтартакан произведенисене тӗплӗн тишкерни. Уҫӑмлӑ фактсемпе никӗслесе, автор утӑм хыҫҫӑн утӑм унӑн ӗҫӗ-хӗлӗн тӗллевӗсен ҫӑмхине сӳтсе парать. Вӑл пӗтӗм чӑваша – арҫынсене те, хӗрарӑмсене те – хут вӗрентессишӗн, вырӑс культурипе ҫывӑхлатасшӑн, кӳршӗллӗ халӑхсемпе туслӑ пурӑнтарасшӑн, ҫӗр ӗҫ культурине ӳстерсе, хресченсен пурнӑҫ шайне хӑпартасшӑн тӑрӑшнӑ.

"Ҫакна палӑртса хӑварас килет: И.Я.Яковлев пултарулӑхне тӗпченӗ май кӗнеке авторӗ патшалӑх архивӗсенче ыйтӑва анлӑрах, тӗплӗнрех ҫутатма пулӑшакан, халиччен пӗлсех кайман материалсем тупнӑ, вӗсемпе усӑ курнӑ"[8].

Тӗрлӗ жанрпа ҫырнӑ Яковлев. Корреспонденци, статья, рецензи, ҫыру жанрӗсемпе ҫырнӑ паха материалсем те пур унӑн. Тенюшев ӑста публицистӑн памфлет жанрӗпе ҫырнӑ "Атӑл тӑрӑхӗнчи вырӑс мар халӑхсем хушшинчи мисси пирки" произведение тӗплӗн пӑхса тишкерсе тухать. Яковлев хӑйӗн памфлетӗнче чӑваш культурине малалла аталантарма чӑрмантаракансене, тӗрлӗ реакционерсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларать.

И.Тенюшев хӑйӗн кӗнекинче И.Я.Яковлевӑн публицистикӑри калама та ҫук пысӑк ӗҫӗсене тӗплӗ те нумай енлӗ тишкерсе тухнӑ, юлашкинчен ӑна "Чӑваш публицистикин ашшӗ" тесе хакланӑ. Тӗрӗс хак панӑ Яковлева автор. Ман шутпа, ҫак паха кӗнекене чӑвашла та пичетлесе кӑлармалла. Кӗнеке вӗҫӗнче И.Я.Яковлевӑн паллӑрах произведенийӗсене хушса парсан лайӑх пулӗччӗ.

2. Паллӑ публицистсен пултарулӑхне хаклани

И.Я.Тенюшев паллӑ публицистсен пултарулӑхне питӗ тӗплӗн те тарӑннӑн тишкернӗ. Ӑна эпир "И.Я.Яковлев – публицист" кӗнекинче те куртӑмӑр. 1987 ҫулта авторӑн тепӗр тӗпчев ӗҫӗ – "Чӑвашсен малтанхи публицисчӗсем" ятпа кӗнеке пичетленсе тухать. Ку кӗнекере чӑваш публицистикипе журналистики аталанӑвӗн ҫул- йӗрне пӗтӗмӗшле кӗскен пӑхса тухнӑ. Вӑл чи малтанах журналистикӑпа публицистика терминсен пӗлтерӗшне уҫса парать. Журналист паян кирлӗ паха социаллӑ информаци пухса, тишкерсе пӗтӗмлетет; ӑна пичет, телевидени, ра-

дио, кино пулăшнипе тата ытти майсемпе халăх хушшине сарать. Журналистика массăллă пропагандăпа агитацин çивĕч хатĕрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Публицистика – журналистăн литературăри ĕçĕ-хĕлĕн продукцийĕ, вăл çырнă произведенисем. Илемлĕ тата ăслăлăх литературипе пĕрле публицистика литературăн тĕп тĕсĕсенчен пĕри пулса тăрать. Пăхса тухнă терминсем иккĕшĕ ик тĕрлĕ ăнлавсене палăртаççĕ. Çакăнпа пĕрлех вĕсене пĕрлештерекенни те пур: икĕ сăмахĕ те периодика пичечĕпе, урăхла каласан, хаçат-журналпа çыхăннă. Журналистика историйĕ вара периодика пичечĕ, публицистика епле аталанса пынине тĕпчет.

Кунта Александра Фукс "Хусантан Шупашкара кайни" статйи пирки те асăнса хăварнисем пур. Çĕрпӳ уесĕнчи Г.Сизов рецензи çырать. Малтан рецензент чăвашсен Европăри пек вĕренӳ çеç мар, хăйсен саспаллийĕсемпе çырулăхĕ те çуккине палăртать. Апла пулин те ку халăхăн хăйĕн астрономи, физика тата ботаника пур. Александра Фукс шухăшлав енĕпе чăваша катăка хуни тĕрĕс маррине яр-уççăн кăтартать. Сăмахсене халăх епле калать, çапла çыртарасшăн Г.Сизов. Вăл асăрхаттарнă тăрăх, хĕрарăмсем пуçа "хишпу" мар, "хошпу", хĕрсем "тухъя" мар, "тохъя" тăхăнаççĕ. Рецензи содержанийĕ тăрăх пăхсан, унăн авторĕ – питĕ нумай вуланă ăнкаруллă çын; вăл чăвашсем хушшинче пурăнать, вĕсен чĕлхине, пурнăç условийĕсемпе йăли-йĕркине лайăх пĕлет. А.А.Фуксăн "Хусантан Шупашкара кайни" статйи пирки "Çĕрпӳ уесĕнче пурăнакан çын асăрхаттарнисем" йышши произведенисем чăваш публицистикипе журналистики историйĕ умĕнхи тапхăра кĕреççĕ. Историйĕ каярахпа – публицистика çулĕ çине тата ыттисем тухсан пуçланать.

Чăваш публицистикин çулне Раççейри общество шухăшлавĕн мал ĕмĕтлĕ идейисем тата прогрессивлă вырăс публицистики çутатса тăнă. Чăвашсен пирвайхи публицисчĕсем хăйсен пултарулăхĕн малтанхи утăмĕсене вырăс публицистики ӳсĕмĕн никĕсĕ çинче тунă. Çав публицистика витĕм кӳнипе XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче чăваш публицистики хăйĕн умне халăха çутта кăларассине йĕркелес, унăн культурине аталантарас, пурнăçне çăмăллатас тĕллевсем кăларса тăратать.

Чăваш журналистикин 1917 çулчченхи историйĕ виçĕ тапхăра пайланать:

1. Чăваш çутлăх юхăмĕн пуçламăш тапхăрĕнчи публицистика /1768–1866 ç.ç./. 2. Çутлăх юхăмĕ аталанса вăй илнĕ тапхăрти публицистика /1867–XIX ĕмĕр вĕçĕ/. 3. Революцичченхи демократипе пролетари пичечĕ /XX ĕмĕр пуçламăшĕнчен тытăнать/. Чăваш çутлăх юхăмĕн пуçламăш тапхăрĕнчи публицистика тĕллевĕсем анлах мар. Чăваш публицистики аталанăвĕн иккĕмĕш тапхăрĕ нимрен ытла И.Я.Яковлевăн обществăпа педагогика, литературăпа публицистика тĕлĕшĕнчи ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă. Иккĕмĕш тапхăрти публицистсем – просветительсем халăх массине çутта кăларасшăн, вĕсен культурин шайне çĕклесшĕн, чухăнлăхран хăтăлма пулăшасшăн. Çĕнĕ çырулăх йĕркелесе яни публицистика произведенийĕсене тăван чĕлхепе çырма май парать. Вĕсем содержанийĕпе те, формипе те наци публицистики пулса тăраççĕ.

И.Тенюшев кĕнекен иккĕмĕш сыпăкĕнче чăваш çутлăх юхăмĕн пуçламăш тапхăрĕнче наци публицистики çурални çинчен çырса парать. Автор 1851–1866 çулсене илсе кăтартать. И.Тенюшев Спиридон Михайлов-Янтуша чăваш публицистикине пуçарса яраканĕ тесе шутлать. Ăна пур енлĕн çутатать, тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать. Спиридон Михайлович Михайлов-Янтуш /1821–1861/ Чикме уесĕнчи Юнкăпуçра хресчен çемйинче çуралнă. Илемлĕ публицистика произведенийĕсем тата ăслăлăх ĕçĕсем пайтах çырнă. Уйрăм кĕнекепе унăн "О музыке чуваш" /1852/, "Чувашские разговоры и сказки" /1853/, "Капустки, простонародные игры в Козьмодемьянском уезде" /1885/ тата "О ярмарках в Козьмодемьянском уезде в 1856 году и о ценах на привозные товары в г.Козьмодемьянске" /1857/ пичетленсе тухнă.

Тĕпчевçĕсем Михайлов чăвашсен пĕрремĕш публицисчĕ пулнине манса хăвараççĕ. Чи малтан çакна Н.П. Петров асăрхать: "Литературăпа публицистика ĕçне С. Михайлов 1851 çулта тытăннă. 1852 çулта "Казанские губернские ведомости" ятлă хаçатра пĕрремĕш очеркĕ, Шалти ĕçсен министерствин журналĕнче "Чăваш эпир полтăмăр" сăвви пичетленсе тухнă", – çырать вăл[9]. С.Ми-

хайлов публицист пулнине тӗрӗс палӑртать тӗпчевҫӗ, сӑвви унӑн пулманнине каярахпа пӗлет.

Спиридон Михайлова ҫамрӑклах публицистикӑпа тӗпчев ӗҫӗ илӗртнӗ. Ҫак ҫул ҫине вӑл истори темипе тухнӑ.

"Чикме уесӗнчи пултӑран пасарӗ" этнографи очеркӗ (1852) публицистика тӗллевӗсене татах та ҫывӑхтарах. Уесри пултӑран пасарне ҫырса кӑтартакан произведени туслӑ пурӑнма, малта пыракан вырӑс культурине йышӑнма чӗнет.

Спиридон Михайлов публицистикин тематики анлӑ. Публицист чӑвашсем тӗттӗм халӑх пулнине палӑртать. Вӗсене вӑл ҫав тӗттӗмлӗхрен кӑларасшӑн. Вӑл тӗттӗмлӗх ҫинчен кӑна мар, тӗшмӗшлӗх ҫинчен те ҫырать. Ҫак темӑпа ҫырнисенчен "Шупашкар ҫыннисем – сыснана явап тыттаракансем". Ячӗ айне "Халӑх легенди" тенӗ пулин те, жанрӗпе вӑл – сатира заметки.

Этнограф пулнӑ май Михайлов чӑваш халӑхӗн пурнӑҫ йӗркипе культурине анлӑн ҫутатать, вырӑс тата мари халӑхӗсен пурнӑҫ йӗркине те манса хӑвармасть. Публицист халӑх ӗҫӗ-хӗлӗпе йӑли-йӗркине, унӑн культури тепӗр халӑх культурине мӗнле витӗм кӳнине тӗпчет. Тӑван халӑхӗн XIX ӗмӗрти пурнӑҫне Михайлов "Чӑвашсен кӗске этнографийӗ" статьяра тӗплӗн ҫутатать. Автор унта чӑваш мӗн пӗчӗкренех ӗҫе хӑнӑхнине палӑртать. И.Тенюшев публицистӑн кашни статйине ӑнланмалла ҫырса панӑ. Вӑл статьяри хӑшпӗр йӗркесене илсе парать. Кӗнеке вуланӑ май пирӗн ума Спиридон Михайлов-Янтушӑн ӗҫӗ-хӗлӗ тӗкӗр ҫинчи пек тухса тӑрать.

Чӑваш халӑхне тӳре-шара пусмӑрланине публицист "Хваттер хуҫипе калаҫни" (1859) ҫулҫӳрев очеркӗнче витӗмлӗ сӑнлать. Михайлов публицистики жанрсемпе пуян. Унӑн произведенийӗсен жанрӗсенчен И.Тенюшев ҫаксене тупса палӑртать: заметка, корреспонденци, статья, очерк. Публицистика ӗҫӗнче Спиридон Михайлов 10 ҫул вӑй хунӑ. И.Тенюшев вулакансене публицистӑн пурнӑҫӗпе тата ӗҫӗ-хӗлӗпе пур енлӗн тӗпчесе паллаштарать.

Кӗнекен иккӗмӗш пайӗ "Николай Золотницкий чӑвашсене тата вырӑс мар халӑхсене хутла вӗрентмелли майсем ҫинчен" ятлӑ. Золотницкий пире чӑвашсен малтанхи букварьне тата календарьне ҫырнипе паллӑ. Вӑл

чăваш чĕлхи наукин никĕсне хываканĕ. Ку енĕпе унăн чи пысăк ĕçĕ – "Сăмах тĕпĕсен чăвашла-вырăсла словарĕ". Золотницкий хресченсен ачисене çеç мар, çамрăк рабочисемпе алăстисене те хутла вĕрентесшĕн, çак тĕллеве пурнăçа кĕртмелли майсем шырать. Ун пек майсенчен пĕри – хуласенче вырсарникунхи шкулсем уçасси. Вăл ачасене çаптарнине, хĕненине хирĕç тăнă. Рабочисемпе алăстисен пурнăçĕ йывăррине Золотницкий "Вяткăри вырсарникунхи шкул пĕрремĕш çур çулта" статьяра уçăмлăн кăтартать.

Николай Золотницкин публицистикăри пултарулăхĕнче калăпăшĕпе чылаях пысăк "Чăваша хутла вĕрентмелли майсем çинчен" статья паллă вырăн йышăнать. Ăна хаçатра та, уйрăм кĕнекен те пичетлесе кăларнă. Ку статйине чăвашсене хутла вĕрентес ыйтупа ятарласа çырнă. Автор хăй шухăшĕсене пурнăçа кĕртме тытăнни, чăваш ачисене малтанласа вĕрентмелли учебниксем хатĕрлеме пуçăнни çинчен вулакансене хĕпĕртесе пĕлтерет. Публицист Раççейре ирĕклĕхшĕн пынă кĕрешĕвĕн иккĕмĕш тапхăрĕнче – революциллĕ демократсен юхăмĕ вăй илнĕ вăхăтра ĕçлесе пурăннă. Анчах автор вĕсен тĕллевĕсенчен аякра тăнă. Эпир пăхса тухнă произведенийĕсем çутĕç ыйтăвĕсемпе çырнă публицистика шутне кĕреççĕ. Вăл фактсемпе пулăмсене тата вĕсемпе çыхăннă лару-тăрăва тĕплĕн тишкерет. Унăн корреспонденцийĕсемпе статйисенче критика чылаях паллă вырăн йышăнать. Юлашкинчен çак статьяра И.Тенюшев каланă сăмахсем питĕ вырăнлă. "Пирвайхи чăваш публицисчĕсем прогрессивлă вырăс журналисчĕсем пулăшнипе кăна пичетре хăйсен сассине пама пултарнă. Вĕсене вырăс журналисчĕсем çырма вĕрентнĕ, хăйсен прессинче пичетлеме май тупса панă. Чăваш публицистики хăйĕн аталанăвĕнче вырăс общество шухăшлавĕн мал ĕмĕтлĕ туртăмĕсен йĕрĕпе пынă, вырăс публицистики ӱсĕмĕн никĕсĕ çинче аталаннă".[10]

Виççĕмĕш пысăк пай – "Чăваш публицистикинче çутлăхпа демократи туртăмĕ вăйланни /1867-XIX ĕмĕр вĕçĕ/". Кунта И.Тенюшев чăвашсене наци çулĕпе аталантармалли программăна И.Я.Яковлев туса хатĕрленине çырса кăтартать. И.Тенюшев унта "Чăваш уявĕ учюк" очерк çин

чен çырать. Очеркра Яковлев тăван халăх пурнăçне, культурине, йăли-йĕркине сăнавлă куçпа тишкерет. И.Я.Яковлевăн публицистикăри ĕçĕ-хĕлĕ 1867 çулта пуçланнă та 1922 çулччен пынă. Автор унăн пултарулăхне тăватă тапхăра пайлать. Пултарулăх çулĕн пуçламăш тапхăрĕнче "Çулталăк кĕнеки" рецензи, "Театр витĕмлĕхĕ" /1870/, "Чĕмпĕр чăваш шкулĕн малтанхи утăмĕсем" /1870/, "Шкул-çемье тата унăн нушисем" /1870/ тата ытти произведенисем те çырнă. Яковлевăн илемлĕ литературăпа публцистикăри ĕçĕ-хĕлĕ тематика енчен нумай тĕрлĕ пулнипе палăрса тăрать. И.Тенюшев архив документчĕсемпе пĕлсе ĕçлени те курăмлă. Автор кашни произведенийĕпех çывăх паллашни те курăнать. Унти чи кирлĕ фактсене, пулăмсене илсе кăтартать тата ăна мĕн кирлĕ таран ăнлантарса парать. Малтанах илсе кăтартнă пултарулăх тапхăрĕнчи пур статйине те асăнать. Тĕслĕхрен, публицистикăри пултарулăхĕн виççĕмĕш тапхăрĕнче "Атăл тăрăхĕнчи урăх халăхсем хушшинчи мисси пирки" памфлет çырать публицист, "Чĕмпĕрти чăваш учителĕсен шкулĕн кĕске очеркĕ" брошюра пичетлесе кăларать. Халăхшăн тăрăшакансем çинчен публицист мухтаса та ырă сунса çырать, вĕсене малашне те хастарлă пулма хавхалантарать. Яковлев хăйĕн чылай произведенийĕсен никĕсне халăх сăмахлăхне, халапĕсене хунă. Çакна "Пулă сĕрни", "Тĕлĕт -тĕлĕт Микулай", "Кашкăр" тата ытти тĕрленчĕксемпе калавсенче куратпăр.

Илемлĕ литературăпа публицистика произведенийĕсенче Яковлев мĕн курнине-илтнине, хăй мĕн лайăх пĕлнине çырса кăтартать. Яковлевăн публицистикăри пултарулăхĕнчи палăрса тăракан тепĕр уйрăмлăх - маларах каланă шухăша пĕрмаях тарăнлатса çĕнетни. Хăйĕн тĕллевĕсене халăх лайăх пурнăç çинчен ĕмĕтленнипе çыхăнтарса, публицист вĕсене кашни хутрах анлăлатать, уçăмлăрах тăвать. Тенюшев Яковлев стильне те тĕпченĕ. Унта танлаштурусем чылай пулнине палăртать. Унăн пултарулăхĕнче синтаксис параллелизмĕ те танлаштару пек тухса тăрать. Тĕслĕхрен, И.Тенюшев "Война и чувашская школа в Симбирске" кĕнекерен çак йĕркесене илсе парать: "Çутăпа ăшă илес тесе, кирек хăш ӳсентăран та хĕвел еннелле туртăнать. Пытармалли вăрттăнлăх мар,

пулăшу илес шутпа нумайăшĕ, ăшă хĕвел еннелле туртăннă евĕр, Николай Яковлевич Шатров патне пыраççĕ, пыраççĕ те пушăлла каймаççĕ.[11]

Яковлев шучĕпе кирек хăш шухăша та никĕслемелле тата фактсемпе çирĕплетмелле. Иккĕлентерекен материала вулакан ырласса кĕтме çук. Авторăн кĕскен те уçăмлă çырмалла, редакци вара шухăша улăштаракан тӳрлетӳсем хăй тĕллĕн тума пултараймасть.

Чăваш публицистикипе журналистикине аталантарас ĕçре те Яковлев тӳпи пысăк. Тĕрĕссипе вĕсен аталанăвĕн никĕсне çак чаплă педагог хывнă. Ку никĕс – чăвашсен çĕнĕ çырулăхĕ. Кунсăр пуçне, чăваш публицистикин малтанхи произведенийĕсене те тăван чĕлхепе вăл çырнă. Наци кадрĕсем хатĕрлессипе тунă ĕç чăваш журналистикине çуралса аталанма май панă. Чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕ "Хыпар" редакцийĕн сотрудникĕсенчен нумайăшĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ.

Яковлев публицистики пысăк пĕлтерĕшлĕ. Унăн произведенийĕсем халăха хутла вĕренме, культурăпа ăслăлăх еннелле утма чĕннĕ, халăхсен туслăхне çирĕплетмелли çулсене кăтартнă. Халăха хутла вĕрентессине йĕркеленипе, публицистикăри ĕçĕ-хĕлĕпе вăл ĕçхалăх массисен ăнланулăхне сарма, общество пурнăçĕнчи активлăхне ӳстерме пулăшнă.

Çутĕç халăх комиссарĕ А.В.Луначарский 1928 çулта чаплă чăваш педагогĕ 80 çул тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 60 çул тултарнине палăртнă кунсенче Ульяновскри чăваш педагогика тата ялхуçалăх техникумĕсене телеграмма янă, унта çапла каланă: "Чăваш ĕçхалăх массисем, иртнĕ саманара çав тери йывăр пусмăр тӳснĕ пулин те, массăллăн хут вĕренессин тата наци çырулăхĕпе шкулĕн малтанхи никĕсне хывма пултарнă. Чăваш хресченĕсен чи чухăн сийĕсенче çуралса ӳссе чапа тухнă Яковлев, унăн хăй пекех хресченсем хушшинчен тухнă ĕçри юлташĕсем, чăваш ĕççыннисен массăллă культуришĕн çур ĕмĕр хушши ĕçленĕ тата кĕрешнĕ. Чăваш халăхне наци енĕпе çĕклессишĕн çур ĕмĕр ĕçлени чăваш ĕççыннисен миллионлă массисене Октябрьти аслă революцие активлă хутшăнма хатĕрленĕ".[12]

И.Тенюшевăн "Чăвашсен малтанхи публицисчĕсем"

кӗнекинче С.М.Михайлов, Н.И.Золотницкий, И.Я.Яковлев пултарулӑхне тишкерни тӗп вырӑн йышӑнать. Ҫаксем чӑнахах та публицистсем пулнине, автор вӗсен статйисене тӗпчесе, пӗр тӗп шухӑш патне килсе тухать. Ҫак шухӑша ӗнентерес тесе, авторсен статйисене жанр, стиль енчен тишкерет. С.Михайлова, Н.Золотницкие, И.Яковлева публицист тени ҫителӗксӗр пек. И.Тенюшев вӗсене чи малтанхи публицистсем тесе шутлать. Вӑл ҫак паллӑ ҫынсен пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлне тӗпӗ-йӗрӗпе тӗпчесе, вулакана ӑнланмалла, пуян фактсемпе ҫырнӑ. Кунта, паллах, автор чӑваш халӑх историне ӑста пӗлни курӑнать. Ҫакӑ ытларах "Чӑваш публицистикипе журналистики аталанӑвӗн ҫул-йӗрӗ" сыпӑкӗнче палӑрать.Кӗнекере В.И.-Ленинӑн сочиненийӗсен пуххисенчен илнӗ йӗркесем те пур, мӗншӗн тесен вӑл хӑй вӑхӑтӗнче вырӑнлӑ шутланнӑ. Уншӑн автора айӑплама кирлӗ мар. Чӑваш публицисчӗсен пултарулӑхӗпе тата ҫав тапхӑрти ҫивӗч ӑс-тӑнлӑ ҫынсен произведенийӗсемпе пире пӗтӗмӗшле паллаштарать.

И.Тенюшев журналистсемшӗн, студентсемшӗн тата филологи, истори ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекенсемшӗн питӗ пысӑк ӗҫ тунӑ. Ҫак тӗпчев паянхи публицистсене те пысӑк пулӑшу парасса шанас килет.

3. Журналистикӑпа публицистикӑн пӗтӗмӗшле ыйтӑвӗсене ҫутатни

И.Тенюшев журналистикӑпа публицистикӑн пӗтӗмӗшле ыйтӑвӗсене ҫутатни акӑ мӗнле палӑрать. Чӑваш патшалӑх университетӗнче чӑваш чӗлхипе литература уйрӑмӗнчи студентсене журналистикӑна специализаци йӗркипе вӗрентме тытӑнсан, вӗсене валли ятарлӑ вӗренӳ пособийӗсем ҫырса пичетлесе кӑларма пуҫлать. Тӗслӗхрен, "Чӑваш АССРӗнчи ӗҫялкорсен массӑллӑ рейчӗсем" вӗренӳ пособийӗ 1983 ҫулта тухать. Ку пособи 4 сыпӑкран тӑрать. Пӗрремӗш сыпӑк "Ӗҫялкорсен рейчӗ – хаҫат редакцийӗ йӗркелекен массӑллӑ ӗҫӗн паха форми". И.Тенюшев рейд пӗлтерӗшне, унӑн уйрӑмлӑхне уҫса парать. Хаҫатран илнӗ хӑшпӗр материалсене тишкерӳ тӑвать. Акӑ вӑл мӗнле ҫырать: "Ӗҫялкорсен рейчӗ тесе ӗҫе ӑнаҫлӑ йӗркелеме тата чӑрмавсемпе ҫитменлӗхсене пӗтер-

ме пулăшас, малти опыта тишкерсе çутатас тĕллевпе пичет, телевиденипе радиовещани активисчĕсем, рабочисемпе колхозниксем, специалистсемпе пĕрле предприятисенче, колхозсемпе совхозсенче, учрежденисемпе организацисенче ирттерекен обществăлла тĕрĕслеве калаççĕ. Çав тĕрĕслев вăхăтĕнче тупса палăртнине пĕтĕм бригада пĕрле сӳтсе явса тата пĕтĕмлетсе çырни рейд материалĕ пулать".[13]

Рейд вăхăтĕнче тĕрĕслев бригадин кашни членĕ вăл е ку пулăма хăй куçĕпе курать, хăйĕн ăс-хакăлĕпе виçет. Çавăнпа рейд хыççăн пурте пĕрле сӳтсе явни, тишкерсе хаклани, пĕрле çырни кирлĕ, мĕншĕн тесен рейд материалĕ пĕтĕм коллектив ĕçне пĕтĕмлетсе памалла. Унăн вăйĕ коллектив шухăшне палăртса тăнинче пулать те. И.Тенюшев Чăваш Республикинчи хаçат редакцийĕсен рейд ĕçне-хĕлне хак парать. Тĕслĕхрен, Элĕк районĕнчи хаçат редакцине илет. Унти ялкорсем кахалсемпе бюрократсене, чăрмав кӳрекенсене хăюллăн тăрă шыв çине кăларнă.

Рейдсен темисене маларах планлани кирлĕ, тет, автор. Республикăри, районти тата нумай тиражлă хаçатсенчен ытларахăшĕ вĕсене редакцин пĕтĕмĕшле планĕсенче палăртаççĕ. Редакцин ĕç планĕнчи ыйтусемпе хăшпĕр çĕрте рейд ирттерни вырăнлă, тепĕр çĕрте уйрăм корреспондент хăй тĕллĕн материал çырса яни те çителĕклĕ. Тема пысăк пĕлтерĕшлĕ пулсан, ăна тĕплĕн те анлăн тĕпчеме тата темиçе автор авторитечĕпе çутатма шутласан, рейд ирттерни пысăк усă кӳрет. Рейдсен темисене чылай чухне ĕçялкорсем хăйсем сĕнеççĕ. Ĕçялкорсен рейчĕсене хăш ыйтусемпе ирттермеллине те палăртнă.

Иккĕмĕш сыпăк "Рейд тĕсĕсем" ятлă. "Тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ тĕллевпе хăйне йышши рейд тĕсĕпе усă курма тивет. Журналистсемпе ĕçялкорсем хальхи вăхăтра рейдсен нумай-нумай тĕсне пĕлеççĕ. Вĕсене тĕллевĕсене кура, миçе хут ирттерни, камсем йĕркелени тата хутшăнни тăрăх, пĕлтерсе е пĕлтермесĕр ирттерни енĕпе, хăш вăхăтра ирттернине шута илсе классификацилеççĕ".[14] И.Тенюшев тĕллевĕсене кура рейдсене çакăн пек тĕссем çине уйăрать: 1. Пĕррелĕх рейд. 2. Тепĕр хут тĕрĕслемелли рейд. 3. Тӳрремĕн хутшăну рейчĕ. 4. Малти

опыта çутатмалли рейд. Автор рейд тĕсĕсен пĕлтерĕшĕсене тата уйрăмлăхĕсене, тĕллевĕсене ăнлантарса парать. Пĕррелĕх рейчĕн уйрăмлăхĕ çакăнта: рейда пĕр бригада çеç тухать, тĕрĕслеве пĕр-пĕр уйрăм объектра е пĕрешкел темиçе объектра кăна ирттерет; çитменлĕхсене пĕтерме тӳрремĕн хутшăнмасть, хăйĕн сĕнĕвĕсене хаçатра çырса пĕлтерет. Иккĕмĕш тĕс – тепĕр хут тĕрĕслемелли рейд. Ку йышши рейда чылай чухне маларах ирттерни мĕнле улшăнусем кӳнине пĕлме йĕркелеççĕ. Тепĕр хут тĕрĕслемелли рейд ĕçялкорсен бригади унччен объектра е объектсенче иккĕмĕш хут пулассипе çыхăннă. Ку йышши рейд малтанхин йĕрĕпе пырать. Паллах, иккĕмĕш тĕрĕслеве пирвайхи бригада та, çĕнни те ирттерме пултараççĕ, анчах объектра мĕнле улшăнусем пулнине палăртма малтанхине ансатрах. Çавăнпа тепĕр хут тĕрĕслеме унченхи бригадăнах сĕнмелле. Тепĕр хут тĕрĕслемелли рейдăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Ăна тĕрĕсленĕ объектра тивĕçлĕ улшăнусем тумасан ирттереççĕ. Эппин, вăл рейд материалĕн витĕмлĕхĕшĕн кĕрешмелли майсенчен пĕри пулса тăрать.

Виççĕмĕш – тӳрремĕн хутшăну рейчĕ. Кунашкал рейдра бригада членĕсем тĕрĕслев ирттернипе тата хаçатра çырса кăларнипе çырлахмаççĕ, ĕçе хăйсем тӳрремĕн хутшăнаççĕ, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшаççĕ. Тăваттăмĕш тĕс – малти опыта çутатмалли рейд. Тĕп тĕллев – малтисен опычĕ – общество пуянлăхĕ, çавăнпа ăна массăсем хушшинче сарни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çӳлерехре пăхса тухнă рейдсен тĕсĕсем пĕр-пĕринчен тĕллевсемпе уйрăлса тăраççĕ. Миçе хут ирттерни, ĕçе йĕркелени тата хутшăнни енчен пăхсан, уйрăм рейд, пĕрлехи рейд тата массăллă рейд пуррине куратпăр. 1. Уйрăм рейд. Çак рейдăн тĕллевĕ, пĕррелĕх рейдăнни евĕр, хĕсĕкрех: пĕр-пĕр ыйтупа уйрăм участокра ĕç епле пынине тĕрĕслесси. Çавна май унта хутшăнакансен йышĕ пысăках мар. Вĕсене уйрăм та ирттерме пулать. Уйрăм рейда хаçат редакцийĕ е массăллă информацин урăх хатĕрĕ хăй тĕллĕн йĕркелет. Унта ĕçялкорсемпе журналистсем кăна хутшăнаççĕ. Иккĕмĕшĕ – пĕрлехи рейд. Çак рейд пирки С.Гуревич çапла çырать: "1960 çулхи май вĕçĕнче вулакансем

центрти икĕ чи пысăк хаçатра çĕнĕ рубрика курчĕç. Вăл "Правда" тата "Известия" рабочи корреспонденчĕсен рейчĕ" ятлă. Çавăнпа ку рубрика йăлана кĕчĕ, ун айĕнче рабкорсен рейд бригадисем хатĕрленĕ материалсене вырнаçтараççĕ, вĕсенче çĕршер пин вулакана шухăшлаттаракан ыйтусем хускатаççĕ". Çакăн хыççăн Чăваш Республикинче те пĕрлехи рейдсем ирттерме тытăннă. Çак рейдсен материалĕсем сумлăрах, вĕсен витĕмĕшĕ те пысăкрах. Виççĕмĕшĕ – массăллă рейд. Массăллă рейд ытти сенчен чи малтанах тĕрĕслев масштабĕсем анлă пулнипе, унта хутшăнакансен йышĕ пысăккипе уйрăлса тăрать. Ку рейда ĕççыннисен анлă массисем – рабочисем, колхозниксем, специалистсем – йышлăн хутшăнаççĕ. Тĕрĕслеве те пĕр объектра çеç мар, пĕр харăсах темиçе объектра е пĕрин хыççăн теприне ирттереççĕ. Çакна шута илсе, массăллă рейдсене икĕ ушкăна уйăраççĕ: пĕр вăхăтрисем, тĕрлĕ вăхăтрисем. Автор кунта та хаçат редакцийĕсем çак рейда еплерех ирттернине тĕплĕн çырнă.

Çавăн пекех сасартăк ирттерекен рейд бригади ăçта каяссине е çитес рейд ăçта пулассине малтанах пĕлтерсе, пĕр конкретлă ыйтупа темиçе хуçалăхра е объектра пĕрин хыççăн теприне ирттерекен рейда маршрутлă рейд теççĕ. Ку йышши рейдсене чи малтан Канаш районĕнчи пĕрлештернĕ "Коммунизмшăн" хаçат редакцийĕ ирттерме тытăннă. Çак рейда ирттернĕ чухне вăл пулассине малтанах хыпарлаççĕ. Пирвай ăна сăмахпа çырса пĕлтернĕ, кайрантарах хаçатри карттă çинче рейд ăçта пулнине пунктирлă стрелкăпа, ăçта ирттерессине хура стрелкăпа кăтартма пуçланă. Рейд ăçта тата хăçан пулассине малтанах пĕлтерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. И.Тенюшев "хăш вăхăтра ирттернине шута илсе, яланхи вăхăтри рейда, каçхи рейда тата вырсарникунхи рейда уйрăммăн палăртма май пур" тесе çырать.[16]

Виççĕмĕш сыпăк – "Рейд ирттерессин йĕркисем". Ĕçялкорсен рейчĕсене хатĕрлесе ирттерес ĕçре çак тапхăрсене уйрăммăн палăртмалла: 1. Тĕрĕслев объекчĕсене суйласа илесси. 2. Рейд ирттерессипе çинчен ĕççыннисене пĕлтерессипе. 3. Бригада йĕркелесси тата ун умĕнчи тĕллевсене сӳтсе явасси. 4. Рейда ирттересси.

5. Тĕрĕслевре палăртнине пĕтĕмлетесси, рейд материалне çырса хатĕрлесси. Рейд ирттерессин кашни тапхăрĕ çинчен çырать автор, йывăрлăхсене те асăнса хăварать. Çак темăпа çыракансен тĕп правилисем те пур вĕренӳ пособийĕнче. Тĕслĕхрен, 1. Мĕн çинчен лайăх пĕлетпĕр, çавăн çинчен кăна çыр. 2. Фактсемпе пулăмсене тĕрĕс кăтартмалла. 3. Цифрăсене тĕрĕс кăтартмалла. 4. Текста листан пĕр енне кăна çыр. Çакăн пек правилăсем пурĕ 16. Вĕсем пурте тĕрĕс те витĕмлĕ.

И.Тенюшев ĕçялкорсен рейдне ирттерессин йĕркисем çинчен маларах каланинчен тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тăвать. Хăшпĕрисене асăнса хăварма пулать. 1. Рейда пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтупа ирттермелле. 2. Рейдсен бригадин материалне хаçатра оперативлă пичетлесе кăлармалла. 3. Обществăлла тĕрĕслеве тухиччен унăн тĕллевĕсемпе задачисене тĕрĕс палăртмалла.

Тăваттăмĕш сыпăк – "Рейдсен витĕмлĕхĕшĕн кĕрешмелли майсем". Рейд материалĕн витĕмлĕхĕ пултăр тесен, ăна ĕнентерӳллĕ фактсемпе çирĕплетни кирлĕ. Тĕрĕслев темине тĕрĕс суйласа илмелле. Рейд материалĕн витĕмлĕхĕшĕн кĕрешесси – чи малтан редакци ĕçĕ. И.Тенюшев çапла çырать: "Информаци тата тишкерӳ жанрĕсемпе çырнă публицистика произведенийĕн композицийĕ виçĕ пайран тăрать: 1. Пуçламăшĕ. 2. Тĕп пайĕ. 3. Вĕçĕ". Рейд материалĕн жанрĕсем, тĕпрен илсен, корреспонденци, репортаж тата статья пулаççĕ. И.Тенюшев Чăваш АССРĕнчи ĕçялкорсен массăлла рейчĕсем темăна тарăн çутатса панă теме те юрать, мĕншĕн тесен автор теори ыйтăвне те ăнлантарнă, ĕнентерӳллĕ тĕслĕхсемпе çирĕплетсе панă. "Коммунизм ялавĕ", "Советская Чувашия" хаçатсенче пичетленнĕ материалсемпе усă курать. Рейд тĕсĕсене те палăртнă. Студентсене И.Тенюшевăн "Чăваш АССРĕнчи ĕçялкорсен массăллă рейчĕсем" вĕренӳ пособийĕ производство практики вăхăтĕнче çеç мар, малашнехи журналистика творчествинче те пулăшу кӳрĕ. Чăнахах та ку кĕнеке – вĕренӳ пособийĕ.

И.Тенюшев пултаруллă журналистсем вĕрентсе кăларас тĕллевпе нумай вăй хунă. Семинари занятийĕсене кăна мар, лекцисене те интереслĕ ирттерме тăрăшнă.

Акă вăл çапла калать: "Журналист пулма чун туртни кирлĕ. Эппин, кашни çын журналист пулма пултараймасть".[17]

Чăваш хаçачĕсемпе журналĕсен редакцийĕсенче ятарлă хатĕрленĕ кадрсем кирлине шута илсе, И.Н.Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнче журналистсене вĕрентсе хатĕрлессине йĕркеленĕ. 1985 вĕренӳ çулĕнчи кăларăма шутласан, университетран пурĕ 150 çамрăк журналист вĕрентсе кăларнă. Паянхи кун журналистикăна специализаци шучĕпе вĕрентмеççĕ, мĕншĕн тесен халĕ вăл журналистика факультечĕ пулса тăчĕ.

И.Тенюшев журналистăн тĕп тĕллевне, унăн ĕçĕ-хĕлне питĕ лайăх пĕлсе тăнă. Пулас журналистсене çав вăрттăнлăха туйса илме пулăшнă. Журналист яланах пĕрпĕр çын, коллектив çинчен çырать. Вăл çав çын е коллектив умĕнче уйрăмах ответлă. Журналист çырни яланах тĕрĕс те витĕмлĕ пулмалла. Унăн пурнăçа лайăх пĕлмелле, халăх ĕçне-хĕлне витĕр курса тăмалла. Пĕрпĕр статья е очерк çырнă чухне фактсем тĕрĕс пулмалла. Уйрăмах критикăлла материал çырнă чухне. "Журналистăн тем те пĕлмелле, çавăнпа унăн нумай вĕренмелле. Çавăн пекех публицистика теорине, лайăх та витĕмлĕ çырассин вăрттăнлăхĕсене пĕлмелле. Теорисĕр практика компассăр карап евĕр".[18] Материал çырнă чухне ятне пама автор тăтăшах пуçне ватать. И.Тенюшев – публицист çапларах вĕрентсе çырать: "Материала ят пама ăна çыриччен те, çырсан та юрать, анчах та витĕмлине шыраса тупмалла, çакна астумалла: материал ячĕ – авторăн пĕрремĕш сăмахĕ".[19]

Материала литература чĕлхипе çырас пулать. Витĕмлĕ шухăша илемлĕ калани пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Журналист пулма вĕренекен студентсем 2-мĕш курс хыççăн кашни çулах производство практикинче пулнă. Районти тата республика хаçачĕсенче вĕсен пĕр уйăх хушши практика иртнĕ. Практикăна кайиччен студентсем "Основы советской журналистики" курса вĕреннĕ. И.Тенюшев практика вăхăтĕнче усă курмалли "Журналистская практика" ятлă пĕчĕк брошюра 1983 çулта пичетлесе кăларать. Вăл вĕренӳ практикин программинчен тата методика кăтартăвĕсенчен тăрать. Брошюра кашни курс

хыççăн производство практикинче мĕнле планпа ĕçлемеллине те палăртнă. Еплерех ĕçсем туса ирттермеллине тата хăш жанрсемпе материала пичете хатĕрлесе памаллине те асăннă. Паянхи кун та студент-практикантсем çак брошюрăпа усă кураççĕ. Студентсемшĕн вăл çул кăтартса пыракансенчен пĕри пулса тăрать те.

Чăваш кĕнеке издательстви кăларнă "Шкул реформи тапхăрĕнче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентесси" ятлă статьясен пуххинче И.Тенюшевăн "Çыр та – пĕлсе çыр" статйи пур. Ăна автор çамрăк юнкорсем валли çырнă пулнă. И.Тенюшев "Пионер сассинче" /халĕ "Тантăш"/ кашни çулах университет абитуриенчĕсен "Çамрăк журналист" конкурсне йĕркелесе ирттернĕ тата юнкорсен "Çивĕч перо" шкулне ертсе пынă. Вăл акă мĕнле çырать: "Юнкор – пичетри сăмахăн çамрăк салтакĕ. Вăл хĕрӳ чĕреллĕ, канăçсăр чунлă. Ырри, лайăххи ăна савăнтарать, хăйпе пĕрле вулакансене хĕпĕртеттерес шутпа пичетре ăшă сăмах калас туртăм çуратать. Япăххине, юрăхсăррине вăл чăтма пултараймасть, унашкаллине пичетри сăмахпа тăрă шыв çине кăларать, критика вучĕпе çунтарать".[20]

Хаçат-журнал валли материал çырса хатĕрлес ĕçри сыпăксен пĕлтерĕшĕсене публицист уйрăммăн пăхса тухать. Пĕрремĕш сыпăк – "Тема суйласа илесси". Пичет валли материал çырса хатĕрлесси тема суйласа илнинчен пуçланать. Мĕн çинчен çырмаллине корреспондента пурнăç хăех вĕрентет. Чи малтан вăл ăçта тата хăçан мĕн курни-илтни, пĕлни çинчен çырать. Тема суйласа илмеллине пурнăç кăтартать. Иккĕмĕш сыпăк – "Темăна уçса парасси". Тема ăнăçлă суйласа илни кăна çителĕксĕр-ха. Илемлĕ литература вулаканăн чĕрине пырса тивес, унăн чун-хавалне хускатас тĕллев лартать, публицистика вара вулаканăн ăс-хакăлне витĕм кӳресшĕн. Çав тĕллевсене пурнăçлама писатель те, публицист та фактсемпе усă кураççĕ. Тĕрĕс тата тĕплĕн çырма хăв курни-илтни кăна сахал; кам çинчен çыратăн, çавăнпа курса калаçмалла. Пулăма, ĕçе хутшăннисемпе канашлани усăллă.

Лайăххи çинчен çырнипе пĕрлех корреспондентăн юрăхсăррине, чăрмантараканнине тăрă шыв çине кăлар-

малла. Ан ман: тĕрĕс критика малалла кайма пулăшать. Виççĕмĕш сыпăк – "Материала илемлĕ те тĕрĕс çырасси". Хаçат-журнал материалне калăпласси çинчен сăмах пуçарсан, малтанах çакна калар: форма енĕпе вĕсем тĕрлĕрен пулмалла. Ку вăл публицистика произведенийĕсене, содержанине тата тĕллевĕсене кура, тĕрлĕ жанрпа çырмаллине пĕлтерет. Çыравçă шухăшĕ вулакан патне туллин те хăвăрт çитесси сăмахпа вырăнлă, кирлĕ пек усă курнинчен нумай килет. Хаçат-журнал чĕлхи çивĕч пултăр тесен, кашни сăмах пирки тĕплĕн шухăшламалла.

Публицистсем час-часах усă куракан литература мелĕсем çаксем: хаçат материалне урăх çын сăмахĕсем кĕртни, чĕрĕ диалог, илемлĕ произведенисенчи сăнарсем, ăсларăшсемпе каларăшсем, иронипе сатира, тăрлавсăр çивĕч чĕлхелĕх, суя вăйлату, аллитераци, троп-сем, чĕлхене синтаксис енĕпе вăйлатмалли тĕрлĕ фигурăсем. Пĕтĕмĕшле илсен, алçырăвĕн чĕлхи уçăмлă та илемлĕ пултăр. Уçăмлă тени пурте çăмăллăнах ăнланмалла çырассине пĕлтерет. Илемлĕ тени материала литература чĕлхипе сăнарлă çырма, халăх сăмахлăхĕпе пуянлатма хистет. Пурте ăнланмалла тата илемлĕ çырассине содержанине тарăн шухăшлă тăвассипе çыхăнтармалла.

И.Тенюшев текстсене тăватă тĕсе уйăрма пулать, тет. Ўкерчĕклекен, калуллă, шухăшлав тата палăрту тексчĕсем. Кашни тĕсне ăнлантарать. Тĕслĕхрен: "Шухăшлав текстĕнче чăнлăх факчĕсемпе пулăмсене тишкереççĕ, вĕсем мĕнле пулса кайнине, шалти паллисене, ку е тепĕр шухăш тĕрĕссине, тĕрĕс мар пулсан – сăлтавсене кăтартса параççĕ. Шухăшлавра икĕ элемент – тезис тата аргумент пур".[21] Палăрту е определени – ăнланăвăн пĕлтерĕшне е содержание кĕскен те тĕрĕс уçса паракан текст.

Ўкерчĕклекен текст вара пулăмăн паллисене шутласа тухать, пуçламăшĕнче е вĕçĕнче çав япала мĕн, кам пулнине кăтартать. Калуллă текст пулни-иртнине хронологи йĕркипе, урăхла каласан, мĕн хыççăн мĕн пулнине шута илсе, çырса кăтартать. Юлашкинчен автор çамрăк çыравçăсене статьяна мĕнлерех çырмаллине вĕрентсе çырать. Ал çырăвĕ тиркемелле ан пултăр тесен, кирек

хăш авторăн та 11 правила асра тытмалла тет, автор. И.Тенюшевăн "Çыр та – пĕлсе çыр" статйи çамрăк юнкорсемшĕн çеç мар, студентсемшĕн те выранлă. Ку статья, паллах, вĕрентӳллĕ. Ытларах чухне эпир чăн та интереслĕ тема суйласа илме пĕлместпĕр. И.Тенюшев статйинче пире кирли питĕ нумай. Чăн-чăн журналиста ман шутпа практика кăна мар, теори те ĕçре пулăшу парать.

"Публицистика – вăл общество пурнăçне, политикăна пур енлĕн, фактсемпе чăн иртнĕ событисем çине таянса, çав вăхăтрах наукăпа илемлĕ литературăн элеменчĕсемпе туллин усă курса çутатакан литературăн хайне евĕр уйрăм тĕсĕ".[22]

И.Тенюшев хаçат редакцийĕнче те ĕçленĕ. Çавăнпа та очерксем, тĕрленчĕксем, фельетонсем нумай çырнă. Чи пысăк тĕпчев ĕçĕ И.Тенюшевăн чăвашсен малтанхи публицисчĕсен ĕçне-хĕлне тĕпчени. 1984 çулта тĕпчев институчĕ кăларнă "Народность и художественность произведений Я.Г.Ухсая" брошюрăра И.Тенюшевăн "Оружием публициста" статйи пичетленсе тухать. Унта автор Я.Ухсайăн творчествине тишкерет. Ухсай публицистикин тĕп темине, жанрне палăртать. Тĕрлĕ хаçатсенче пичетленнĕ статйисене пăхса тухать, шухăш тĕшшине тупса палăртать. Ухсай хăйĕн публицистикине поэзипе çыхăнтарать. Автор поэтăн статйисене пăхса тухни çителĕксĕррине курать, çавăнпа та ытти произведенисене те пăхать. Унта выранлă олицетворенисем тата ирони тĕл пулать. Ухсай публицистикин хайлавĕсем вулакана хавхалантараççĕ.

И.Тенюшевăн статйисем тĕрлĕ пичет изданийĕсенче пичетленнĕ. Тĕслĕхрен, "Блокнот агитатора" журналти "Добровольные помощники печати" статья. "Дружба" альманахра чăвашсен уявĕ çинчен çырнă. Публицистăн 1974 çулта каллех "Дружба" журналта "Такой статьи не было" материал кун çути курать. Кунта автор И.Я.Яковлева хӳтĕлесе çырать. Яковлев чи малтан чăваш ачисене вырăсла вĕрентме шухăшлă пулнă иккен. И.Тенюшев ку шухăша хирĕçлесе çакăн пек статья çырать те.

1958 çулта "Ял Советĕнче" кĕнеке пичетленсе тухать. Кĕнекере тĕп вырăнта Йĕпреç районĕнчи Березовка ял

Совечĕн ĕçĕ-хĕлĕ. И.Тенюшев чăн-чăн пулса иртнĕ пулăмсене илсе парать. Çавăн пекех кунта çак ял Совечĕн ĕçне сăнлакан сăнӳкерчĕксем те пур. Березовка ял Совечĕ кунран-кун ӳссе, çĕнелсе пыни пирĕн ума чĕр сăнар пек тухса тăрать.

1960 çулта "Халăх пуçарулăхне анлăн сарса пырар" кĕнеке пичетленет. Унта çыравçăсем Йĕпреç районĕнчи парторганизаци ĕçĕн опычĕпе паллаштараççĕ. И.Тенюшев публицистăн "Радио – партилле пропагандăн паха форми" статйи пичетленнĕ. Статьяра районти радиовещани тĕллевĕ, тематики еплерех пулмаллине калать, сĕнӳсем парать. Юлашки вăхăтра И.Тенюшев чăваш кĕнеке издательствинче вăй хурать. Тен, çавăнпа та 1990 çулта Алексей Павлович Павловпа пĕрле "Чăваш кĕнеке издательстви 70 çулта" ятлă кĕнеке кăлараççĕ. 1995 çулта иккĕшĕ пĕрле тепĕр кĕнеке çырса пичетлеççĕ.

"Литературно-публицистическая дечтельность чувашского просветителя И.Я.Яковлева" автореферат 1980 çулта Львовра тухнă. "Вопросы русской и чувашской филологии" кĕнекере 1973 çулта "Газета "Хыпар" и чувашский просветитель И.Я.Яковлев" статья çырса кăларать.

Журналистика тата публицистика ыйтăвĕсене мĕн вăй çитнĕ таран И.Тенюшев пĕтĕмĕшле çутатса панă. Маларах асăннă статйисене курсанах çак шухăша çирĕплетме пулать.

ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРА ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕНЕ ХАКЛАНИ

И.Тенюшев публицист, тĕпчевçĕ çеç мар, писатель те. Анлă сарăлнă, пурте пĕлекен çыравçă шутнех кĕрсе çитеймен пулин те, унăн шӳт калавĕсем, повеçсем тата 1994 çулта пичетленсе тухнă "Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç" романĕ тивĕç вырăн тупрĕç те.

Вăл чи малтанах сăвăсем çырма пуçланă. 1943 çулта "Шантарса калани" сăвви Чăваш писателĕсен Союзĕ кăларса тăнă "Илемлĕ литература" альманахра пичетленнĕ. Çак сăвă йĕркисем, паллах, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çуралнă. И.Тенюшев – вăрçă нушине, асапне, йывăрлăхне хăйĕн куçĕпе курса пиçĕхнĕ çын. Тен, çавăнпа та ку сăвă тарăн шухăшлă. Писателĕн таса

юратӑвӗ, шантарӑвӗ, ӗненӗвӗ витӗмлӗ курӑнса тӑрать.

Шӑнкӑрав пек шӑнкӑр-шӑнкӑр
Шыв юхать ял ҫумӗпе.

Автор тӑван яла, ҫуралнӑ вырӑна манӑҫа ямасть. Ӑна вӑл сӑввӑн пуҫламӑш йӗркинче асӑннӑ. Хӑйӗн савнӑ, юратнӑ хӗрупраҫне те асра тытать.

Аякра эс – тунсӑхлан-тӑр
Ҫырусем илменнипе.
Юратмасть е манчӗ пулӗ,
Тесе эс ан шухӑшла.

Хӑйӗн юратӑвне вӑл ӗненме сӗнет, ӑна ҫут хӗвелпе танлаштарать. Автор ун умӗнче нихӑҫан та шанчӑкран тухасшӑн мар.

Сӗмсӗр вилӗм ҫеҫ сӳнтерӗ
Ман вӗри юратӑва.

Темӗнле йывӑр пулсан та, ӑна вӑл чӑтса ирттерӗ. Анчах та вӗсен хушшинчи иксӗлми юратӑва вилӗм ҫеҫ сӳнтерме пултарать, тет автор.

Юлашки йӗркесенче И.Тенюшев ҫӗнтерӳпе таврӑнасса шанать, акӑ ҫапла сӑвӑ вӗҫленет те.

Шӑнкӑр-шӑнкӑр шывӗ юхтӑр,
Вӑхӑт ирттӗр ерипе.
Ан кулян эс, пит ан хуйхӑр,
Таврӑнӑп ҫӗнтерӳпе.

"Вӑрҫӑ ҫулӗсенчи писательсен халӑх умӗнчи тивӗҫлӗхӗ – кӗрешӗвӗн анлӑшӗпе тарӑнӑшне ӑнланса илсе, аслӑ вӑрҫӑ паттӑрӗсен улӑпла паттӑрлӑхне сӑнласа парасси, вӗсен мӗнпур этемлӗхшӗн пархатарлӑ пулса тӑракан аслӑ ӗҫӗсене чӑн художниксем пулса ҫутатса парасси, ҫапла вара хамӑрӑн халӑха паянхи кӗрешӳре татах та паттӑртарах пулма шухӑш-кӑмӑл тӗлӗшӗнчен хӗҫпӑшаллантарасси пулса тӑрать. Литературӑн аталану ҫулӗ вӑрҫа пула татӑлмарӗ, пачах та урӑхла, вӑл хӑватлӑн малалла та тӑвалла хӑпарса пычӗ. Тӑван ҫӗршыва пӗтӗм чун-чӗререн юратни, ылханлӑ тӑшмана хаяррӑн курайманни писательсен пултарулӑхне татах та ытларах ҫулӑмлантарчӗ".[23]

Писателӗн пурнӑҫра яр-уҫҫӑн тухса тӑракан геройсен сӑнлӑхӗсене кӑна мар, "вак-тӗвексене" те курма, пурнӑҫа пур енчен те ҫутатса пама пултармалла.

"Ҫӗнӗ кӗвӗ" кӗнекере И.Тенюшевӑн "Сухӑр вӗлтӗрен" калавӗ пичетленсе тухнӑ. Пурнӑҫра чӑн пулса иртнӗ пулӑма сӑнласа панӑ. Калавра танлаштарусем пур. Вӗсем пурте вырӑнлӑ тата содержание те пуянлатаҫҫӗ. Ӑна эпир чи малтан калав ятӗнченех куратпӑр. Автор сухӑр вӗлтӗренпе лавккара сутуҫӑ пулса ӗҫлекен Луизӑна танлаштарать. Мӗншӗн-ха ӑна ҫапла каланӑ? Вӑл модӑсен ателийинчи Ритӑн хӗр ҫумӗ пулма хатӗрленет. Унта валли ҫӗнӗ кӗпе ҫӗлеттерет. Анчах та кӗрен тӗслӗ, пурҫӑн платье Луизӑна кӑмӑла каймасть. Рита вара ҫанӑ вӗҫӗсене пӗрер миллиметра яхӑнах касса кӑларчӗ. Капла та килӗшмерӗ Луизӑна. Вара ҫӗвӗҫе тепӗр ҫур миллиметр сарлакӑш хӑйпӑк тума тивет. Ҫав хушӑра пӗр арҫыннӑн костюмне те ҫӗлесе пӗтермелле пулнӑ. Луизӑн кутӑнлӑхне пула вӑрах кӗтнӗ арҫын костюмсӑрах каять. Ҫапла, ҫӗр ҫаврака, пӗрре курнӑ ҫынпа тепре те тӗл пулма тивет хӑшпӗр чухне. Ку калавра та тӗп пулӑм ҫавӑн пекрех аталанса пырать те. Костюм ҫӗлеттерме пани Порфирий Ларионович пулнӑ. Вӑл атӑ-пушмак юсанӑ ҫӗрте ӗҫленӗ. Луиза шӑп та шай унта туфлине юсаса вӗр-ҫӗнӗрен сӑрлама илсе килсе панӑ. Ҫӗнӗ кӗпипе пӗр тӗслӗ пултӑр тесе, кӗрен лакпа сӑрлама ыйтнӑ. Кун пек пӑтӑрмах килӗшӳллӗ ҫӗлемен костюм пирки пулса тухать. Луиза, хӑйӗн хаяр ҫиллине ниҫта хурайманнипе, атӑ-пушмак юсакансене йывӑр сӑмахсемпе кӳрентерсе хӑварать. Ку ҫителӗксӗрха. Хӑйӗн ӗҫ вырӑнӗнче те апат-ҫимӗҫ туянакансен кӑмӑлне хуҫать. Вӗр-ҫӗнӗ гимнастерка тӑхӑннӑ ҫамрӑк каччӑна хуплу пӗҫерме аш кирлӗ пулнӑ. "Луиза пӗр касӑк сӗнчӗ – каччӑ ҫуллӑ тесе тиркерӗ, тепӗрне кӑтартса пӑхрӗ – шӑмӑллӑ иккен. Виҫҫӗмӗш касӑкне сутуҫӑ кӑтартса чӑрманмарӗ, тӳрех лач! тутарчӗ каччӑ умне". Кунта Луиза тавар туянаканӑн ыйтӑвне тивӗҫтерме пултараймарӗ. Ӗҫ хӗрсе пырать ҫеҫ кӑна, И.Тенюшев ӑна вӗҫлет те. Юлашкинчен калаври пур геройсем те Ритӑн туйӗнче куҫа-куҫӑн тӗл пулаҫҫӗ. Луиза ҫак самантра тин хӑйӗн киревсӗр ӗҫне туйса илет. "Сухӑр вӗлтӗрен" калав вӗрентӳллӗ теме те пулать. Ӑна унти тӗслӗхсем ҫирӗплетеҫҫӗ. Чӑн та, И.Тенюшев сӑмахӗсем тӗрӗс. "Сӑртпа сӑрт ҫеҫ тӗл пулмаҫҫӗ, ҫынпа ҫын яланах курнӑҫма пултарать". Ҫавӑнпа та кирек мӗнле ҫынпа калаҫнӑ чухне те шухӑшласа,

асăрханса калаçмалла, пули-пулми сăмаха персе ярас çук. Çăвартан тухнă сăмаха, темле тăрăшсан та, каялла чикеймĕн. Çакна автор асăрхаттарнă та калавĕнче. Кулленхи пурнăçра паянхи кун та Луиза пек çынсем пур. Сухăр вĕлтĕрен чăнахах та питĕ хытă ăшалать. Çынна сиенлет, лешĕ вара тарăхса, вĕчĕрхенсе каять. Çав вĕлтĕрене курайми пулать. И.Тенюшев хăйĕн кĕске калавĕнче мĕн кăтартассине пĕтĕмпех ăнланмалла çутатса панă та, вăл çамрăксемшĕн çеç мар, ваттисемшĕн те вĕрентӳллĕ тĕслĕх пулса тăрать. Çавăнпа та çынна нихăçан та усал тумалла мар. Чулпа перекене çăкăрпа хирĕç пер тенĕ, ваттисем.

1994 çулта "Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç" роман пичетленнĕ. "И.Тенюшев хăй те фронтовик. Автор фашистла Германие хирĕç пынă вăрçа хутшăннă, виçĕ хутчен аманнă. Унăн фронтри хăюлăхĕпе паттăрлăхне 1 степень Отечественнăй вăрçă тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе, медальсемпе палăртнă. Эппин автор хăй курни-тӳсни çинчен çырать, вăрçă çулĕсенчи паттăрлăхпа хастарлăха тĕрĕс сăнласа парать".[24] Хальхи вăхăтра автор "Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç" романăн иккĕмĕш кĕнекине çырать.

"Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç". Çак сăмахсене вуласассăн вырăссен пурте пĕлекен юрă йĕркисем аса килеççĕ: "Их оставалось только трое на безымянной высоте". Малтан миçен пулнă-ши пирĕн салтаксем çав сăрт çинче? Те пинĕн? Те вунă пинĕн? Те аллă пинĕн? Çак темиçе сăмахах хăрушă вăрçăн вĕçĕ-хĕррисĕр синкерлĕхне, тамăк хуранĕ пек тискерлĕхне аса илтерет.

"Çав отрядри боецсем тӳпем çине вăркăнса кĕнĕ çĕре унта чĕрри-аманни виççĕн çеç юлнăччĕ: Илья Лилипутов вырăс / асамçăран пуля хăй пăрăнать/, Энвер Булатов тутар / унăн çĕнтерсе таврăнса Эминепе кăштах пурăнас килет/ тата Иван Иванов чăваш /ачасене шкулта татах вĕрентме ĕмĕтлĕскер/".

Çак романти тĕп персонаж – Миккуль Пожеданов. Унăн пурнăçне автор мĕн пĕчĕкрен тĕплĕн сăнласа парать. Районти педучилищĕрен вĕренсе тухнăскер, вăтăрмĕш çулсем вĕçĕнче ялти шкулта учительте ĕçлеме пуçлать вăл. Ăста баянист, ялти çап-çамрăк активист.

Вăрçăн хăрушă пĕлĕчĕсем анăçра сăрт-ту пек кап-

ланса пыраççĕ. Анчах ăна халăх туйсах каймасть–ха, хаçатсенче кăна вуласа пĕлет. Çамрăксем хавaслă та шăв–шавлă. Кун каçипе пурте ĕçре. Каçхине – вăйă–кулăра. Уйрăмах вĕсен ашшĕ–амăшĕ тăрăшуллă. Мĕн кăна тумаççĕ–ши вĕсем кун каçа! Çĕр тĕрлĕ ĕç тăваççĕ пуль. Çĕнĕ пурнăç йĕркипе усă курса килти хуçалăха та, ялти хуçалăха та çирĕплетсе хăварасшăн вĕсем. Анчах та вăтăр çиччĕмĕш–вăтăр саккăрмĕш çулсем çĕкленӳллĕ кăна мар, çав тери хăрушă та пулнă. "Ним айăпсăр çынсем çухала–çухала пĕтнĕ. Вĕсене такам çăхавĕсене пула, пĕчĕк кайăксене çăхансем тыта–тыта кайнă пек, такамсем пуçтара–пуçтара кайнă".[25] Миккуль Пожеданов ашшĕне те çав шăпа лекет. Темĕн чухлĕ асап хыççăн тӳрре тухать вăл, вăрçă пуçлансассăн хăй ирĕкĕпе фронта каять.

Хăрушă вăрçă... Пĕтĕм вăй–халлă яш-кĕрĕме хăйĕн тамăкне сĕтĕрет вăл. Миккуль Пожеданов вĕрентекенĕн те унта кайма черет çитет. Мускава фашистсенчен хӳтĕлет вăл. Унта йывăр аманса Хусан госпиталĕнче чĕрĕлет. Вара ку аслă сержанта Владимир хулине яраççĕ, взвод пуçлăхĕ тăваççĕ. Унăн взводĕнче пĕтĕмпех Владимир тĕрминчен тухнă "зексем" иккен.

Пĕтĕмпе – вунсаккăрăн.

Стройра вунсакăр çын тăрать.

- Çак сехетрен пуçласа Пожеданов аслă сержант сирĕн командир пулать. Малашне сирĕн пурнăç шăпи унран килет.

Капитан çапла降 каларĕ те вăрт çаврăнса штаба кĕрсе кайрĕ, аслă сержанта палламан çынсемпе пĕчченех тăратса хăварчĕ. "Вольно!" команда парса Пожеданов строй умĕнче пĕр майлă та тепĕр майлă утса тухрĕ. Камсем кусем? Пурте пĕрешкел фуфайкăпа, ватка шăлаварпа, рабочи ботинкипе, ула–чăла кĕпепе. Командир стройри çынсем çине тинкерсе пăхать, стройрисем çамрăк командира сăнаççĕ. Сасартăк ун пуçĕнче тавçăруллă шухăш вĕлтлетсе иртрĕ.

–Владимир тĕрминчен-и эсир?

–Çавăнтан. Урăх ăçтан пулар? – ӳркевлĕн хуравларĕç стройрисем.

Пожеданов чăвашăн чĕри сăрăлтатса илет. Унăн хăйĕн

те çарти пурнăçĕ вăрăмах мар-ха. Çар ĕçне педагогика училищинче, Осоавиахим лагерĕнче, кĕске вăхăт хушши Саранскри запас полкра вĕренкеленĕ, унтан Мускава хӳтĕлеме хутшăннă та аманнă. Пĕтĕм биографийĕ те виç йĕрке çеç.

Мĕн кăна курма, тӳсме тивмест-ши Пожедановăн ăристансен взвочĕн пуçлăхĕ пулнă май! Унăн салтакĕсем утă çулма кайнă чухнех сутуçă лавĕнчен эрех кĕленчисем йăкăртаççĕ, хăйсен кукăр аллисене чăх-чĕп ферми енне тăсма та именсе тăмаççĕ. Аслă сержант вĕсене майĕпен-майĕпенех воспитани парать: "Эпир хăть кам пулсассăн та пирĕн пĕр тĕллев – Тăван çĕршыва хӳтĕлесси, хамăр халăхăмăра, тăвансене, атте-аннесене, савнисене, йăмăкăмăр-шăллăмăрсене сыхласа хăварасси. Çакна тусан кăна çĕршывăмăр пирĕн çылăхăмăрсене каçарĕ," – тет вăл.

Ăристансен шутĕнче ку ята сăлтавсăр-мĕнсĕр илнисем те сахал мар: Виктор Кураков – аспирант, Никифор Табаков– колхоз председателĕ, Илья Лилипутов – сиплевçĕ, Макар Молчанов– адвокат, Михаил Каримов– журналист, Иван Иванов– учитель. Çавсем пулăшнипе воспитани ĕçне йĕркелесе пырать Пожеданов. Унăн Владимир хулинче чăмăртаннă взвочĕ Горький облаçĕнчи Мăк сăрчĕ текен вырăнта запасри полкра çирĕпленет, каярахпа фронтри хаяр çапăçусенче паттăрлăх кăтартать. Взводра чăвашсем те, вырăссем те, тутар та, цыган та пур. Тăван çĕршыва çичĕ ютран хӳтĕлес тĕллев вĕсене пурне те пĕр çирĕп чăмăра пĕрлештерет.

"Мăн юханшыв хăйĕн юпписен вăйĕпе тулăхланать. Тинĕсе уйрăм юханшывсем тултараççĕ. Аслă Çĕнтерӳ патне те çĕршыв çавнашкал çитет: ун патне пĕчĕк çĕнтерӳсем илсе пычĕç. Çав Аслă Çĕнтерĕве çывхартма Миккуль Пожеданов взвочĕн паттăр утăмĕсем те пулăшнă." Çавăн пек И.Тенюшев çырнă "Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç" романăн тĕп шухăшĕ. Ку роман автобиографиллĕ теме те пулать. Автор хăй те вăрçăра пулнă.

"Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç" роман – анлă панорамăллă произведени. Унта вăрçă кăна мар, чăваш ялĕнчи йăла-йĕрке те, уявсем те аван сăнарланнă. Акă автор кĕнекен малтанхи пайĕнче "Хĕр сăри" текен кĕр мăн-

тăрĕн уявне, хĕрупраçăн тыр-пул, çĕрулми, пахча çимĕç пухса кĕртнĕ хыççăнхи Пукравпа пĕрле ирттерекен праçникне тĕплĕн кăтартса панă. Хĕрсемпе каччăсем, пĕрле пухăнса, вăхăта епле хаваслă ирттереççĕ, мĕнле кăна такмаксем каламаççĕ, мĕнле кăна ташламаççĕ!

Курăк епле шăтать-ши,

Çави епле витет-ши.

Хĕр сăрине килейменĕн

Чунĕ епле чăтать-ши.–

йышши юрăсем вĕçĕ-хĕррисĕр янăраççĕ унта.

"Çавах та романти тĕп тема – фронтри хаяр çапăçусем, Тăван çĕршыва тăшмансенчен паттăррăн хӳтĕлени. Вăрçă епле хаяр пулсан та – юрату çухалмасть, иксĕлмест. Çакна автор çине-çинех кăтартса парать".

"Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç" романа И.Тенюшев Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 50 çул çитнĕ ятпа çырса кăларнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин пулăмĕсем историре мĕн чухлĕ каярах та каярах тăрса юлаççĕ, çавăн чухлĕ ытларах та ытларах кăсăкланатпăр вĕсемпе. Ун чухнехи салтаксен паттăрлăхĕн пĕлтерĕшĕ паянхи тата малашнехи пурнăçшăн ӳснĕ çемĕн ӳссе пырать. Çав вăрçă умĕнхи пурнăçа, чăваш халăх ывăлĕсем ытти халăх çыннисемпе пĕрле тăшмана хирĕç паттăрла çапăçнине çырса кăтартнă ку произведенире. Кирек камшăн та – телей çăлтăрĕ тухнă-и е тухман-иуншăн, салтак-и е офицер-и вăл, айăппа е айăпсăрах тĕрмене çакланнă-и – çуралса ӳснĕ çĕршыв пĕрре кăна. Унран хакли урăх нимĕн те пулма пултараймасть. Çак шухăш романта чи тарăн йĕр хăварнă.

И.Тенюшев вăрçă темипе нумай калав хайланă. "Тавăру" произведение 1945 çулта çырнă. Ку калавра тĕп вырăнта хĕрарăм сăнарĕ. Ĕçсем вăрçă вăхăтĕнче пулса иртеççĕ. Автор çăмăл та ăнланмалла чĕлхепе çырса панă. Калава вуланă çемĕн чĕрем вĕчĕрхенсе ыратса илет. Хăвна та унти тĕп персонаж пек туятăн. Мĕн чухлĕ хĕн-хур тăкать ирсĕр тăшман халăх пуçĕ çине, мĕн чухлĕ асап кăтартать ним айăпсăр çынсене. Çăткăн фашистсем станицăри çуртсене çунтарса яраççĕ, вată-вĕтĕсене персе пăрахаççĕ. Маринăсен килне те асап çитет. Листовка сарнăшăн упăшкине полицайсем тытса каяççĕ,

кăкăр ачине персе вĕлереççĕ. Халиччен лăпкă та кăмăллă пулнă Марина палламалла мар улшăнать, чĕре тулли тарăхупа хаярланса, часовоя вĕлерет, пӳртри фашистсене çунтарса ярать. "Ку пуçламăшĕ çеç,– тет Марина. – Юншăн-юн! Вилĕмшĕн-вилĕм! Унăн чĕринче курайманлăх вучĕ вăйлăран та вăйлă çунса çĕкленчĕ. Çав курайманлăх ăна васкаса утма хистет, сукмакпа вăрмана, шалтан шала, çăлăнăçшăн çапăçакансем патне хăюллăн илсе пырать". И.Тенюшевăн çак калаври хĕрарăм çирĕп чунлă, вĕри юнлă, хастар чĕреллĕ. Нимĕç салтакĕ Маринăн пепкине аллинчен туртса илсе кантăкран урамалла ывăтать. Ачине тытас тесе пĕшкĕннĕ вăхăтра ирсĕр фашистсем персе те вĕлереççĕ. Анчах хĕрарăм çухалса каймасть. Вĕсене тавăрма шут тытать. Унăн чунĕнче курайманлăх хуçаланать. Часовоя пуртăпа мăйĕнчен касса вĕлерет. Вăл хĕрарăм пулсан та, çак тискер ĕçе хăюллăн тăвать. Вăрçăра арçынсем кăна мар, хĕрарăмсем те паттăр пулнă. Калав кĕске пулин те, автор унта мĕн калассине пĕтĕмпех календă теме юрать. Мĕншĕн тесен вăл тĕп темăна та, идейăна та тĕплĕн çутатса панă. И.Тенюшев урăх хĕрарăм сăнарне те çутатма пултарнă. Мĕншĕн-ха автор çак героя илнĕ? Çакна та калама пулать, вăрçă вăхăтĕнче хастар хĕрсемпе хĕрарăмсем татах та пулнă темелле. Ман шутпа кунта И.Тенюшев хăй те çак ĕçе хăйĕн куçĕпе курнă ĕнтĕ. Вăл ăна шелленĕ те, унăн паттăрлăхĕпе хавхаланнă.

Вăрçă темипе И.Тенюшев тепĕр калав "Манăн янташ Санька" çырнă. Кунта та ĕçсем вăрçă çулĕсенче пулса иртеççĕ. Анчах та ку калавра хурлăхлă вырăнсем сахал. Пуçламăшĕ те Санькăн кулăшла калаçăвĕсенчен тытăнать. Вăл хăйĕнпе пĕр командăри салтаксене хавхалантарас шутпа, темĕнле кулăшла пулса иртнĕ ĕçсем çинчен каласа парать. Пĕррехинче Санька нимĕç офицерне тытса килет, унта та шӳтсĕр ĕç пулмасть. Хастар та çамрăк каччă офицерăн йĕм тӳмисене татса ярать.

–Мĕн вăл аллисене кăвапи тĕлĕнчен пĕртте илмест! Тавăрса каласса кĕтмесĕр комбат гитлеровец аллисене вăйпа аиккинелле сирчĕ те, ак тамаша: лешĕн йĕмĕ анчĕ-ларчĕ. Вăрăм френч айĕнчен çăмламас урасем курăнчĕç.

–Унӑн тӳмисене эпӗ веҫех касса татрӑм...

Штабрисем пурте ахӑлтатса кулса ячӗҫ.

Санька – чӑн-чӑн шӳт ӑсти. Анчах юлашкинчен йывӑр аманать те госпитальте операци тунӑ чухне вилсе каять. Калава И.Тенюшев 1946 ҫулта ҫырнӑ. Тӗп шухӑш – ҫамрӑк каччӑн паттӑрлӑхӗ. Вӑл 19 нимӗҫе вӗлерет, хӑй те йывӑр аманать. Автор пулса иртнине ҫырса кӑтартать.

И. Тенюшев калавсем ҫеҫ мар, юмахсем те ҫырма ӑста. "Кипарис мӗншӗн хӳхӗм" юмаха Крымра каласа пани тӑрӑх хайланӑ. Ҫавӑнпа та ку юмах вырӑсенне питӗ ҫывӑх тӑрать. Эпир хӑнӑхнӑ ӗнтӗ кашни юмахра тенӗ пекех виҫӗ ывӑл е виҫӗ хӗр ҫинчен вуласа пӗлме. Юмахри тӗп тема– вӑрҫӑ кунӗсенче палӑрнӑ виҫӗ каччӑн паттӑрлӑхӗ– малти вырӑна тухса тӑрать. Тӗп шухӑшӗ, тӗп идейи юмах теминченех паллӑ. Кунта И.Тенюшев каллех хастарлӑ, хӑюллӑ хӗрарӑмсене сӑнарлать. "Тавӑру" калаври пекех, виҫӗ хӗр ирсӗр тӑшмана хирӗҫ кӗрешӗве тухаҫҫӗ. Тата ҫакна каласа хӑвармалла. Юмахри хӗрсем питӗ ӑслӑ. Арҫынла тумланса, утсем ҫине ларса, хӑйсен каччисене йывӑрлӑхра пулӑшу парас тесе, кӗрешӗве тухаҫҫӗ. И.Тенюшев – ҫутҫанталӑка сӑнама пӗлекен ҫын темелле, юмахра ҫакна асӑрхатӑн. Тӗслӗхрен, "Палларӗ таса тӳпе тӑшмансене, тӗксӗмленчӗ, пӗлӗтсемпе каркаланчӗ. Асӑрхарӗҫ тусем тӑшмансене, хӑйсен канӑҫлӑхне ҫухатрӗҫ, ҫиллессӗн кӗмсӗрт те кӗмсӗрт тума пуҫларӗҫ. Курчӗ тинӗс тӑшмансене, кӑвакран хуралса кайрӗ, хаярланса хумхана пуҫларӗ". Чӗрӗ мар япалана чӗр чун пек сӑнланӑ. Ӑна сӑпатлантару теҫҫӗ. Сӑпатлантару мелӗпе вырӑнлӑ усӑ курнӑ. Вулакана ҫавӑн пек ҫырни питӗ интереслӗ. Вӑл чи малтанах произведенийӗн чӗлхине тата содержанине пуянлатать. Юмахӑн пуҫламӑшӗнче те кун пек йӗркесем пур. "Хуллен– хулленех тул ҫутӑлса килнӗ. Хӗп-хӗрлӗ хӗрелсе хӗвел хӑпарнӑ. Унӑн пайӑркисем чи малтанах ту тӑррине ылтӑн тӗспе ялкӑштарнӑ, унтан сӑрт айккинчи ҫамрӑк чинарӑпа выляса илнӗ. Часах урӑм-сурӑм тинӗс те ирхи хӗвелпе йӑлтӑр-ялтӑр ҫиҫе пуҫланӑ".

Юмахра яланах кӗҫӗннине хастар, ӑслӑ, ӗҫчен, ҫивӗч ҫын пек туса кӑтартаҫҫӗ. Ытларах вӗсен ырӑ енӗсене сӑнарлаҫҫӗ. "Кипарис мӗншӗн хӳхӗм" юмахра та кӗҫӗнни

вăйлă, пысăк хумран пĕр хăрамасăр тинĕсе ишсе кĕрет. Анчах та вăл чее те питĕ ăслă. Хум ун çине, хĕр ун ăшне кĕрсе каять. Хĕрсем те, каччисем те – ырă геройсем. Юмахра сивлек сăнарсем çукпа пĕрех. Хайлав интереслĕ пулни ятĕнченех палăрса тăрать. Автор вара çав ят пĕлтерĕшне ăнлантарса çырса парать. Юмах ячĕ– ыйтуллă предложени. Кипарис йывăçĕ мĕншĕн хӳхĕм пулнине юмах тăршшĕпех эпир куратпăр. Çак йывăçра виçĕ хĕрпе виççĕ каччăн хӳхĕмлĕхĕпе паттăрлăхĕ пытаннă.

И.Тенюшев ваттисен сăмахĕсемпе те анлă усă курать. Юмахра çакă чи кирли шутланать те. Мĕншĕн тесен вĕсем пире мĕне те пулин вĕрентеççĕ, ăс-хакăл параççĕ. Юмах тĕп шухăшне, пĕлтерĕшне юлашкинчен каласа хăварать. "Часах виçĕ туй пулнă. Туй кунĕ пахчаçă ывăлĕсем виçĕ хĕр ячĕпе пĕр йывăç лартнă, ăна кипарис тесе ят панă. Унран вара акăш-макăш çӳллĕ йывăç ӳссе ларнă. Çак йывăç кĕçĕн хĕр пек яштака, илемне вăл вăталăх хĕртен илнĕ, тӳлек те шухăшлă пулнипе аслă хĕре аса илтерет. Эппин кипарис мĕншĕн хӳхĕм пулнине халĕ ĕнтĕ пурте пĕлетпĕр. Хӳхĕмлĕх илеме çеç мар, паттăрлăхпа ăса та палăртать. Мĕн хӳхĕм, çавна кирек кам та хисепе хурать". Çапла юмах сюжечĕ вĕçленет. Автор хăйĕнчен ним те туртса кăларман тет, мĕн калани йăлтах чăн тесе çырать. И.Тенюшев хăй те Крымра пулнă, ăна унта каласа панă та çак юмаха. Автора каласа пани питĕ кăмăла кайнă, çавăнпа та ăна çырса пичетлесе кăларса вулакан патне çитернĕ.

Чăваш халăх сăмахлăхне тĕпе хурса, "Кĕлĕм, Энтри тата Чăрăш" легенда та пичетленĕ. Автор ăна Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкасси ялĕнчи Васса Ивановна Иванова пенсионеркăран 1964 çулта çырса илнĕ. Тĕп тема çак ялсем мĕнле пулса кайни. Тискер те хаяр улпутăн чăтмалла мар йывăр пусмăрĕнчен таракан хăюллă чăвашсем Кĕлĕм, Энтри тата Чăрăш Аталран Сĕвене ишсе кĕрсе, Кĕтне тăрăхне тухнă. Виççĕшĕ те тĕрлĕ вырăнсене вырнаçса ларнă. Çĕнĕ çĕрте пурте ăнăçлă пурăннă. Виçĕ çемье виçĕ тĕлте хунама пуçланă. Çулсем иртсе пынă май Кĕлĕмкасси, Энтриел тата Чăрăшкасси ялĕсем пулса кайнă. Чăваш ялĕсем ытларахăшĕ вăрмансенче тата шыв хĕрринче вырнаçнă. Вĕсем хан куçĕ курман

улах вырăн шыранă. Çавăнпа та чăвашсем шăплăхра пурăннипе кăштах кичемрех, йăпшăнма юратаççĕ. Çак чăвашсем турра ĕненнĕ. Пӳлĕхçĕрен пурăнмалли вырăн ыйтнă. И.Тенюшев ку легендăра ялсен пуçламăш историне никам та манса ан кайтăр тесе, уйрăмах çав тăрăхра пурăнакан çынсемшĕн пысăк парне кӳнĕ. Çулсем иртсе пынă май эпир хамăр чăваш халăх историне манăça кăларатпăр. Автор кĕнекере пичетлесе кăларни паха ĕç шутланать.

"Юрă хăвачĕ" лирикăлла новелла та И.Тенюшевăн çырав пултарулăхĕнче пысăк вырăн йышăнать. Ĕçсем утă çулнă вăхăтра пулса иртеççĕ. Кунта вăтам шкултан вĕренсе тухнă Миша сăнарĕпе паллашатпăр. Вăл çивĕч, ĕçчен каччă. Çанталăк ăшă тăнипе ĕç нимĕнле те малалла каймасть. Анчах çамрăк Миша ваттине те, çамрăккине те хавхалантарма пултарать. Вăл юрлама питĕ ăста. Утă çулнă вăхăтра та юрă пулăшать. Вăл ĕçченсене салтакла та уттарать, команда панă пек сăвăлласа калать.

–Ать-два! Ать-два!

Çирĕпрех пус атăпа!

Ать-два! Ать- два!

Ан юл-ха, Ульха аппа!

Миша халăх юррисене аван пĕлет. Вăл темĕнле кĕвĕллĕ юрра та шăрантарма маттур.

Тӳнкки-тӳнкки параппан та
Çапмасăрах тӳнклетет.
Эпĕр вăйййа тухсассăн та–
Чĕнмесĕрех çын килет.

И.Тенюшев "Юрă хăвачĕ" лирикăлла новеллинче çакна каласшăн пулнă. Юрă çынна темĕнле йывăр самантра та пулăшать. Пире кĕвĕ савăнтарма та, хурлантарма та пултарать. Утă çулнă чухне тĕп командир çын мар, юрă пулса тăчĕ. Унăн хăвачĕ ĕçе кал-кал илсе пычĕ. И.Тенюшев ăна "Кивелми те ватăлми хӳхĕм юрă", тет.

Çак новеллăна вырăсла та куçарнă. Вырăсла та çăмăллăн вуланать, автор ансат чĕлхепе çырнă. Сăнарсем те йышлă. Уйрăмах çамрăксен сăнарĕсем. Диалог формипе те И.Тенюшев пĕлсе усă курнă. Ăна чĕрĕ калаçу евĕр хайланă. Ваттисен сăмахĕсем те пур. Тĕслĕхрен, "Паян çумăр пулмасть. Çумăр хăпартма тур–

Иван Яковлевич
ТЕНЮШЕВ



Чествование Ивана Яковлевича Тенюшева.
Слева направо: Председатель Государственного Совета ЧР, ректор Чувашского государственного университета академик Л.П. Кураков, генеральный директор Батыревской фирмы "Баярк" В.В. Леонтьев, генеральный директор агрофирмы им. Ленина А.Г. Хитров. Январь 1998 года.



Поздравления юбиляра. На сцене Алманчиковского Дома культуры: директор Батыревского филиала ЧГУ В.А. Мукин, ректор ЧГУ Л.П. Кураков, И.Я. Тенюшев и его супруга Ольга Захаровна.

Перспективы развития факультета журналистики обсуждают доценты И.Я. Тенюшев, А.П. Данилов, К.К. Петров.

рăн лаши ватăлнă", тесе çырать автор.

И.Тенюшевăн истори темипе çырнă "Патăрьелсен паттăрĕ" халапĕ "Ялав" журналта пичетленнĕ. Ăна писатель вăхăтсăр çĕре кĕнĕ К.К.Юлдашев журналист каласа панине никĕсе хурса, ăна сума суса çырнă. Тĕп вырăнта Патăрьел ялĕн историйĕ. Халап питĕ интереслĕ, сăнарлă йĕркесенчен пуçланать. "Халап хĕлле хĕскĕчрен хăтăлать. Хам хĕпĕртесе хăйчикки хӳттинче хăлатла хăлаçланам, хитре хунавран хамăрла халап хайлам".

Юман ятлă йĕкĕт пулнă, анчах акатуйĕнче хăйпе кĕрешекенсене çулсеренех çĕнтернĕрен ăна Паттăр тесе чĕннĕ. Вăл асап пурнăçпа пурăннă. Ясак тӳлейменшĕн мăрса Паттăрăн мĕнпур вырьăхне хăваласа тухма хушнă. Мăрсана Паттăр иртĕхме памасть, ăна ялтан хăваласа кăларса ярать. Хăй вара çемйипех тухса каять. Аслă Пăла хĕрринчи уçланкăра чарăнать. Кунта та май килмест. Паттăр Ункă тăрăхне вырнаçса ларать. Халапра И.Тенюшев чăвашпа тутар хушшинчи туслăха çырса кăтартать. Паттăрăн кĕçĕн ывăлĕ Талпай тутар хĕрне Дильбарăна качча илет. Эпир ку халапа вуласа тухсан, чăваш паттăрлăхне, хăюлăхне куратпăр. Писатель тутарла пĕлни те палăрать. Ăна Камильпе Талпай хушшинчи калаçура тĕл пулатпăр. И.Тенюшевăн çак халапăн чĕлхине тишкерсен, çакна калама пулать. Предложенисем халăх сăмахлăхĕпе пуян. Анатри диалект сăмахĕсем те пур. Тĕслĕхрен, тетĕшĕ- пиччĕшĕ. Тутар чĕлхин сăмахĕсемпе усă курни пĕрре халапа пуянлатать, тепре ăна йывăрлатать. Уйрăмах вулаканшăн хăшпĕр сăмахĕсем ăнланмалла мар пулса тăраççĕ. Анчах та тутар калаçăвĕнче чăваша хисеплени пур темелле. Ăна вăл хăналать, парнесем парать. И.Тенюшевăн "Патăрьелсен паттăрĕ" халап "Кĕлĕм, Энтри тата Чăрăш" легендăна çывăх тăрать. Автор Паттăр çинчен каланă халапа тĕплĕнрех çырнă. Геройсен шалти туйăмне те кăтартать. Тĕп тема- чăваш каччин манăçми паттăрла ĕçĕсем. И.Тенюшевăн илемлĕ произведенийĕсене хакласан, çакна каласа хăвармалла: вăл роман, калав, легенда, юмах жанрĕпе, ял, вăрçă, юрату темипе çырнă. Кашниех вĕрентӳллĕ, çивĕч шухăшлă.

И.Я.ТЕНЮШЕВ – ШӲТ ĂСТИ ТАТА УНĂН КУÇАРУ ĔÇĔНЧИ ĂСТАЛĂХĔ

И.Тенюшев хăйĕн шӳтлĕ те кулăшла калавĕсене "Çыхман çапă шăпăр мар" кĕнекинче пичетлесе кăларнă. Çак кĕнекере тĕрлĕ пĕлӳллĕ, тĕрлĕ шайлă çынсем тĕл пулаççĕ. Акă "Капла тата лайăхрах" калава илер. Хăй вată ĕнтĕ Микихвер, чылай чухне пурнăçра çĕннине тӳрех тавçăрса та илеймест. Апла пулин те тăван колхозшăн хыпса çунать. Ахальтен мар ĕнтĕ ун пирки ялта "колхоз критикĕ" тесе сăмах çӳрет. Ревизи комиссийĕн членĕ Микихвер çине тăнине кура хĕлле ферма ĕнисене ăшă шыв ĕçтерме тытăнаççĕ, ял хуçалăх машинисене вăхăтра юсаса пĕтереççĕ. Автор колхозлă ял пурнăçне, унти улшăнусене художник куçĕпе курса хаклать. Чĕрĕ çынсене сăнарлама кирлĕ сăмах, кирлĕ шухăш тупать. Схемăллă сăнарсем те тĕл пулмаççĕ. Вăл, кулленхи пурнăçран чи кирлине суйласа илсе, ăна ăста кăтартса пама пĕлет.

И.Тенюшев çак калаври Микихвер сăнарне чĕрĕппе танлаштарать. Чĕрĕпĕн шăрчĕ йĕплĕ пулсан, унăн – сăмахĕ. Вăл ĕçри пĕтĕм çитменлĕхсене, тумхахсемпе кăлтăксене асăрхамасăр хăвармасть. Анчах Микихвер – ĕлĕкхи çын. Çавăнпа та паянхи пурнăç улшăнса пынине курсах каймасть. Симĕсле çулса пăрахнă пăрçана тĕрĕс мар тунă тесе шутлать. Хăйĕн килти пăрăвĕ шыва путса вилсен те, вăл колхоз правленине чупать. Анчах ку колхозăн мар, килти пулнă. Микихвер пĕтĕм чунĕпех колхозшăн тăрăшать. И.Тенюшев кулăш мелĕпе усă курса çырнă вырăнсем те тĕл пулаççĕ калавра. Арăмĕ ăна час-часах çупкăпа е турчкапа хăратса илет. Вăл мăшăрне хисеплет, хăй йăнăш ĕç тăвасран питĕ шикленсе тăрать. Калаври тĕп шухăш– вата çыннăн критикле ĕçĕсем вырăнлă тата хăшпĕр чухне вырăнсăр пулса тухни. Анчах çак критика кирлех. Эпир ытларах чухне ĕçе çиелтен тума вĕреннĕ. Микихвер ун пеккине чăтма пултараймасть, çавăнпа та йĕркесĕрлĕх çине тиркевлĕ куçпа пăхать.

Кирек хăш ĕçре те çитĕнӳ хăй тĕллĕн килменни такамшăн та паллă. Çакна писатель чĕрĕ сăнарсемпе, аса юлакан эпизодсем урлă тĕрĕс те уçăмлă çутатса парать.

"Пукра" калава вуласан та, çакна аванах туйса илме пулать. Тĕрлĕ ултавçăсене, ĕçке ярăннă çынсене, хăйсене мăнна хуракан пуçлăхсене сатира вучĕпе пĕр хĕрхенӳсĕр çунтарать автор, вĕсене питлет, халăх сучĕ умне кăларса тăратать. Кун пек чухне новеллăсен çивĕч те йĕплĕ йĕркисенче ăшă юмор хĕлхемĕ те татти-сыпписĕр сăрхăнса тăрать.

"Пукра" калавра И.Тенюшев çынсене шӳтлесе, критиклесе сăнарлать. Укахви аппа пасара тир сутма каять. Анчах тирне питĕ йӳнĕ хак параççĕ, çитменнине тата варринче пукра шăтарнă пулса тухать. Укахвин ывăлĕ пысăк вырăнта ĕçленĕ пулнă. Тепĕр ирхине вăл хатĕрлев кантурне шăнкăравлать, килсе тир илсе кайма хушать. Хатĕрлев кантурĕнче Укахвин ывăлĕ директор пулнă. Тир пухакан Унтри чĕр таваршăн 5 тенкĕ те 30 пус парса хăварать. Пасарта çав тиршĕнех пĕр тенкĕ те 20 пус панă. Автор çак шӳтлĕ калава тĕрĕс факт илсе çырнă, мĕншĕн тесен паянхи кун та çакăн йышши тĕслĕхсемпе час-часах тĕл пулатăн. Пысăк пуçлăхсене пурте хисеплеççĕ. Вĕсене пăхăнса тата вĕсем мĕн каланине, хушнине итлесе туса пыраççĕ. Анчах та пĕчĕк шайра тăраканни никама та кирлĕ мар. Унпа нимĕнле ĕç тума та пулмасть. Калавра та пасарта тире йӳнĕ хак параççĕ, пукра шăтарнă пулин те çав тирех пуçлăхран виçĕ-тăватă хут хаклатса туянаççĕ. Ун пеккисем çынсен ĕнси çинче ларма хăнăхнă. И.Тенюшев хăйĕн "Пукра" калавĕнче пысăк шайра тăракансене питлесе çырнă. Паллах, ватă карчăк никама та кирлĕ мар. Директора пăхăнас, ун майлă çаптарма пĕлес пулать. Çуллă чĕлхеллисем çавăн майлăрах пулса тăраççĕ.

И.Тенюшевăн шӳтлĕ калавĕсенче çемье темине çутатса çырни те пур. "Çĕнĕ кĕвĕ" ятлă çамрăк авторсен хайлавĕсем пуххинчи "Ытарайми арăмăм" калавĕнче те пурнăçра чăн пулни сăнарланнă. Геройсене калăпланă чухне çакă палăрать. Яланах хĕрарăмсем арçынсене хăратаççĕ. Вĕсене хĕрарăм ĕçĕсене те тутараççĕ. Ку калавра та çавнашкалах. Соня упăшкине апат пĕçерттерет, япала çутарттарать, çуса-тасатнă кĕпе-йĕме те якаттарать. Арçын çакна тӳссе çитерейместь. Арăмĕпе те калаçма пăрахать. И.Тенюшев çак калава хăйĕнпе пĕрле

кӳршӗре пурӑнакан ҫемье ҫинчен ҫырса панӑ. “Ытарайми арӑмӑм” пичетленсе тухсан, нумайӑшӗ автортан ыйтнӑ: “Эсир хӑвӑрӑн ҫемье ҫинчен ҫырнӑ-и?” – тенӗ. Кунта Соня упӑшкине хисеплеменни куҫ умне тӳрех тухса тӑрать. Вӑл упӑшкине урӑх арҫынсемпе танлаштарма юрататать. Ӑна вӗсем пек тӑвасшӑн. Анчах унӑн упӑшки пӑхӑнасшӑнах мар-ха. Ман шутпа Соньӑн чеерех пулмалла пулнӑ. Кашни кун пур ӗҫе те тутарма тӑрӑшас ҫук. Арӑмӗпе упӑшки пӗр-пӗрне яланах пулӑшмалла. Пирӗн хӗрарӑмсен Соня пек пулмалла мар. Арҫынсем арҫын ӗҫне туччӑр. Эпир пулӑшу ыйтсан, нихҫан та ан пӑрӑнччӑр. Михӗ ани тулса пырать те, кайран тӑкӑнса каять. Калаври арҫын та чӑтса ҫитерейместь. Тӗп конфликт – пӗр-пӗрне ӑнланманлӑх. Ҫавна пулах телейлӗ ҫемьере хирӗҫӳ сиксе тухать те.

“Усӑк хӑлхасем” кулӑшла калавра ҫемье темине ҫутатнӑ. Конфликт икӗ тӑхлачӑ хушшинче пулса иртет. Хветура аппа колхоза сысна ҫури туянма каять. Кулине инкерен, пулас тӑхлачинчен, чи лайӑх ҫура илсе килессе шанакан Хветура, килне нимсӗрех таврӑнать. Вӑрӑм та усӑк хӑлхаллисене илесшӗн пулнӑ Хветура аппа. Анчах та ку амана кӑҫал кӑна туянса килнӗ, ун ӑратне малтан колхозра ӗрчетесшӗн пулнипе ҫурасем туянакана лекмеҫҫӗ. Ҫиллине вӑл ниҫта хураймасӑр Кулине инкене ятлать.

–Хветура та Хветура, тетӗн, май мар хитре калаҫатӑн, – сасартӑк сассине улӑштарчӗ Хветура аппа. – Чӗлхӳпе ҫума ай-ай ӑста эсӗ. Маншӑн сысна ҫури те шел пулсан, эппин, эп те саншӑн хӗр ӳстермен. Сыснусемпех савӑнса пурӑн, туй сӑри туса ан чӑрман. Ман хӗре ан хӗрӗн! Ан хӗрӗн!

Медпункта вӑркӑнса кӗрет те хӗрне вӑрҫса тӑкать. Ҫул ҫинче шӑп та лӑп Кӗҫтука курать. Хӑйӗн хӗрне ӑна качча памастӑп, тет. Сысна ҫуришӗн ҫамрӑксен хушшине тӑрать Раис амӑшӗ. Юлашкинчен Кулине инке хӑйӗн пулас тӑхлачине пӗрне мар, иккӗшӗпех пама килӗшет. Хветура аппа хӑйӗн йӑнӑшне туйса илет, вӑтанса каять. Вӑл ҫапла калать: “Ҫук ӗнтӗ, мана урӑх аманне парӑр”.

И.Тенюшев ҫак хӗрарӑм сӑнарӗпе мӗн кӑтартасшӑн пулнӑ-ха? Темӗнле хытӑ ҫилленсен те, хӑвӑн ҫиллӳне

çиеле кăларас çук. Сăмахсене шухăшласа калас пулать. Кулине инкене унăн кӳренмелле те марччĕ. Вăл тĕрĕс калать чи малтан колхозра ĕрчетесси çинчен. Хветура аппа пек хĕрарăмсем упăшкисенчен те хăрамаççĕ, тепĕр майлă каласан маххă памаççĕ. Хветут мучи лăпкă, йăваш, çепĕç чунлă арçын. Вăл çавăн пек пулнине хăй каланă сăмахсенчен те куратпăр.

–Ман карчăка ан çиллен эс, ачамккă. Ун характер çавнашкал. Хамăр пур чух покамĕç ан хăра, майлаштарăпăр. Ак, хăйĕн мехелĕ çитсен, карчăк кăмăлĕ çаврăнĕ те, туйна та туса пăрахăпăр.

Хветут мучи ăслă, хăйĕн "философийĕ" тăрăх çынсене тăвата ушкăна уйăрать. Арăмне вăл тăваттăмĕш ушкăна кĕртет. И.Тенюшев хăйĕн калавĕсенче арçынна яланах мĕскĕнрех, хĕрарăма çӳлерех шайра илсе парать.

"Пурте йĕркеллех" калавра сатира та, юмор та пур. Автор ялти Виталий Петрович Лекарев фельдшерпа, шкул завучĕпе тата математика учителĕпе пулса иртнĕ пĕр мыскара çинчен сăмах пырать. Вĕсем мĕн тĕттĕмчен шахмăтла выляса лараççĕ, çитменнине медицина спиртне те тиркемеççĕ. Георгий Иванович шӳтлĕ халап каласа парать, хăйсемпе те юлашкинчен çавăн пекрех пулса тухать. Шахмăтла вылякансене хупса хăварнă, алăкне çăрапа питĕрнĕ. Хайхискерсем фельдшер пунктĕнчен ниепле те тухаймаççĕ. Кантăк илме тăраççĕ, кун пек те ĕç каймасть. Кайран вара мачча хăмине илсе унта тухаççĕ. Мачча çинчен сикеççĕ те шайккана кĕрсе ӳкеççĕ. Калаври пулăмсем питĕ шӳтлĕ, кулăшлă. И.Тенюшев ку калавра çакна кăтартасшăн пулнă. Çав арçынсем шахмăтла выляса спирт ĕçсе лармасан, мыскара пулмасчĕ те. Йĕркесĕрлĕх тени те палăрать. Мĕнле-ха фельдшер пунктĕнче вĕреннĕ çынсем шахмăтла выляса, патшалăх спиртне ĕçсе ларма пултараççĕ. Виталий Петрович çынсене сыватас вырăнне спиртпа хăйĕн юлташĕсене хăналать. Викентий Викентьевич завуч хăйĕн мăшăрне те улталама пултарать. Калавра чĕрĕ калаçу чĕлхи диалогра палăрать. Вырăсларах предложенисем те пур. Автор сăнласа пани мар, ытларах геройсен калаçăвĕ мала тухса тăрать. Çав калаçу тăрăх калаври

персонажсен характерне хаклама пулать. Кун пек мыскарасем паянхи кун та хальхи арçынсем хушшинче час-часах пулса иртеççĕ.

И.Тенюшев çырса кăтартнă вăйлă характерсем çамрăксене хăюллă та пултаруллă пулма вăрентеççĕ, умри чăрмавсене сирсе, малалла сукмаклăн утма йыхăраççĕ.

Кĕнеке çăмăллăн вуланать. Калавсен чĕлхи пуян та сĕтеклĕ. Автор халăх сăмахлăхĕпе, çунатлă сăмах майлашăвĕсемпе перекетлĕн усă курать, сюжет йĕрне çирĕп тытать.

“Калас пулать, кĕнекере тĕллĕн-тĕллĕн “саваласа” çитереймен вырăнсемпе вырăсла конструкциллĕ предложенисем те курăнкалаççĕ. Хăшпĕр сăнарсем пĕтĕмĕшпех чăмăртанса çитеймен. Анчах чăваш литературине хăйне евĕр сасăпа кĕрекен çĕнĕ прозаик малашне тата ăнăçлăрах ĕçлессине çирĕппĕнех шанас килет”[30].

Пединститутра вĕреннĕ çулсенче И.Тенюшев тăлмачсен кружокĕн ертӳçи пулса ĕçленĕ. Вăл ертсе пынипе кружок членĕсем Кави Наджмин “Çурхи çилсем” кĕнекине чăвашла куçарса кăлараççĕ. Вăл Л.Н.Толстойăн “Ача чухнехи тата çамрăклăхпа яш-ĕмĕр”, Н.Котышăн “Чайка” кĕнекисене куçарса пичетлет.

Кави Наджмин “Весенние ветры” кĕнекине куçарма А.Ф.Талвир тата В.Л.Садай сĕннипе ĕçе пуçăннă. Ку кĕнекере революци хумĕсем çинчен ĕç пырать. И.Тенюшев кунта чĕлхе законне пăсни те курăнать. Çилсем нумайлă хисепре çырнă. Тĕрĕссипе çурхи çил пулмалла.

Вилĕм кӳрекен Израиле – Эсрел тесе куçарнă. Чăваш халăх сăмахлăхне адекватлă. Ваттисен сăмахĕсене чăвашла питĕ вырăнлă куçарнă. Тĕслĕхрен, “Мулкач усси çур пуслăх, сиенĕ çĕр пуслăх”, “Тухман çын тухсан, тăман тухать”, “Йĕпе çине сапа”. Сăнласа панисем нумай. Роман 48 сыпăкран тăрать.

Иккĕмĕш куçару ĕçĕ – Н.Котышăн “Чайка” повеçĕ. Çак кĕнекене вырăслинчен маларах куçарса пичетленĕ. Куçару авторĕ ăна “Пионер сасси” хаçатра кăларнă. Кайран уйрăм кĕнекен пичетленĕ, ăна В.Терешковăна парнеленĕ. Çак кĕнеке иллюстрацисемпе пуян. Виççĕмĕш куçару ĕçĕ – Л.Толстойăн “Детство, отроче-

ство, юность" кĕнеки. Унăн ятне И.Тенюшев ăнăçлă куçарнă темелле: "Ача чухнехи тата çамрăклăхпа яш ĕмĕр". Куçару ĕçне пуçăнма Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ Н.Я.Любимов тата И.Н.Никифоров – Янташ сĕннĕ пулнă. Автор ăна 1955 çулта пичетлесе кăларнă.

ПĔТĔМЛЕТӲСЕМ

"Иван Яковлевич Тенюшев – публицист, тĕпчевçĕ, писатель" темăпа çырнă диплом ĕçĕ хыççăн, эпĕ пултаруллă çыннăн творчествипе тĕпĕ-йĕрĕпе паллашса тухрăм тесе шутлатăп. Паллах, пĕр диплом ĕçĕнче тарăннăн çырса кăтартма пултараймастăн. Çавăнпа та çак темăпах тата тĕплĕнрех тĕпчесе уйрăм кĕнеке пичетлесе кăлармалла. И.Тенюшевăн пултарулăхне тишкерсе рецензи материалĕсем çырманпа пĕрех. Авторăн хăйĕн мĕн чухлĕ интереслĕ, пуян шухăшлă тĕпчев ĕçĕсем. Ман шутпа çак диплом ĕçĕн темине урăхларах ятпа, тепĕр студента диплом ĕçĕ çырма хушмалла. Çавăн хыççăн вара уйрăм кĕнеке пичетлесе кăлармалла. Чăн та çак ĕçе пурнăçланă чухне йывăрлăхсемпе тĕл пулма тиврĕ. Уйрăмах иккĕмĕш сыпăка çырнă вăхăтра. И.Тенюшев анчах пиçсе çитме тытăннă писатель темелле. Ăна писатель тесен, чылайăшĕ пĕлмеççĕ те пулĕ, мĕншĕн тесен вăл публицистика тата тĕпчев темипе ĕçсем çырнă. Çавăнпа та илемлĕ произведени хайлавĕсене хамăнах тишкерсе хак пама тиврĕ. Диплом ĕçне пурнăçланă чухне унăн тĕрлĕ тĕпчев материалĕсемпе те, публицистика статйисемпе те паллашма тӳр килчĕ. Ытларах эпĕ хамăн шухăшсене çырма тăрăшрăм тата автор кĕнекисенчен илсе тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕм. И.Тенюшев çырнă шӳтлĕ калавсем тата унăн пысăк романĕ кăмăла кайрĕç. Чăваш патшалăх университетĕнче ĕçленĕ май студентсем валли вĕренӳ пособийĕсем хатĕрлесе кăларма тăрăшнă. Уйрăмах манăн "Чăваш АССРĕнчи ĕçялкорсен массăллă рейчĕсем" ятлă пособине асăнса хăварас килет, мĕншĕн тесен вăл кĕнекене паянхи кун та журналистсем хăйсен кулленхи ĕçĕнче усă кураççĕ. Публицистика статйисене те пысăк хак пама пулать. И.Тенюшев чăвашсен просветителĕн И.Я.Яковлевăн пул-

тарулӑх ҫул-йӗрне тишкерсе, кандидат диссертацине хӳтӗленӗ. Ҫав темӑпах кӗнекесем ҫырса кӑларнӑ.

И.Тенюшев куҫаруҫӑ тата тӑлмачсен кружокӗн ертӳҫи пулнӑ май виҫӗ кӗнеке вырӑсларан чӑвашла куҫарса пичетлет.

И.Тенюшев – журналист та. Унӑн статьясем те питӗ йышлӑ. Кашнинех асӑнса ҫитерейменӗн. Вӗсене вӑл тӗрлӗ вӑхӑтра тӗрлӗ темӑпа ҫырнӑ. Ҫавӑнпа та унӑн пичетленнӗ хайлавӗсен списокне туса патӑм. Юлашкинчен ҫакна каласа хӑвармалла: И.Тенюшев пултаруллӑ тӗпчевҫӗ, писатель тата хастар публицист.

И.Я.Яковлев публицист ӗҫӗ-хӗлӗ пирӗн ума тӗпӗ-йӗрӗпех тухса тӑрать. Ку ӗҫ тарӑн шухӑшлӑ. Тӗпчев ӗҫӗ И.Тенюшевӑн ӑнаҫлӑн пурнӑҫланса пыни палӑрать. “Чӑвашсен малтанхи публицисчӗсем” кӗнекинче публицистсен пултарулӑхӗн ҫул-йӗрне тишкерсе тухса пысӑк ӗҫ тунӑ. Чӑваш ҫыравҫисен шутӗнче публицистсен ӗҫне ҫутатакансем халлӗхе никам та пулман темелле. И.Тенюшев вара хӑйӗн тӗпчевӗнче ку ыйтӑва витӗмлӗ пӑхса тухнӑ. Писатель ӗҫне тишкерсен, И.Тенюшев паллӑ ҫыравҫӑ теме пулмасть пулин те, анчах та вӑл унта ерипен-ерипен кӗрсе пырать.

“Вӗсем виҫҫӗн ҫеҫ юлчӗҫ” романӗ унӑн ӗҫне тивӗҫ хак пама ирӗк парать. Роман ҫивӗч шухӑшлӑ пулнипе, геройсемпе пуяннипе витӗмлӗ тухса тӑрать. Автор тӗрлӗ жанрсемпе ҫырма пултарни, илемлӗ произведенисене вуласа тухсан куртӑмӑр. Вӗсем пурте тенӗ пекех вӗрентӳллӗ. И.Тенюшев пултарулӑхӗн тӗшши тулли, сӗтеклӗ, пиҫӗхсе ҫитнӗ тесе, юлашкинчен пӗтӗмлетӳ тума пулать.

Из отчета доцента Тенюшева И.Я. о научно-творческой и учебно-воспитательной работе в 1997-1998 учебном году

Опубликованы мною следующие научные статьи в журналах и книге:

1. Пусть надежда и вера умирают последними. // Егорова- Анисимова К.А. Жду встречи с тобой. Санкт-Петербург: Политехника, 1998. С. 5-6. 0,2 авт. л.

2. Халăха парнеленĕ пурнăç (И.Я.Яковлев асаилĕвĕсем виççĕмĕш хут пичетленнĕ май) // Ялав. 1998. 3№. 96-100 с. 0,5 авт. л.

3.Просветительная деятельность И.Я.Яковлева в современной прессе // Дело его жизни. Ульяновск, 1998. С. 53-61. 0,5 авт. л.

4. К вопросу освещения деятельности И.Я.Яковлева в современной прессе // Тăван Атăл. 1998. 2№. 68-69 с. 0,3 авт. л.

5. Чăн пысăк мул // Ялав. 1998. 7№. 0,6 авт.л.

6. К вопросу освещения деятельности И.Я.Яковлева в печати // Выйдет в следующем номере журнала "Вестник университета".

7. Публицисты и журналисты из школы И.Я.Яковлева // Школа государственной жизни, науки и приобщения к мировой цивилизации. Чебоксары, 1998. С.123-125.

В газетах опубликованы статьи:

1. Памфлет ăçтан тупăннă? //Хыпар. 1998. Кăрлачăн 21-мĕшĕ.

2. Как накипь всплывает навет //Советская Чувашия. 1998. 11 февр.

3. Мы гордимся своей газетой //Ульяновец. 1998. 10 апреля.

4. КнЯçпа çĕрпӳ туслашсан //Тантăш. 1998. Кăрлачăн 22-мĕшĕ.

5. Травля чувашского просветителя //Вести Альма - Матер. 1998. 24 апреля.

6. Шăтнă курăк ӳсетех //Хыпар. 1998. Çу уйăхĕн 8, 13, 14, 15-мĕшĕ.

7. Министрпа курнăçни //Вести Альма- Матер. 1998. 10 ноября.

8. Министрпа курнăçни //Хресчен сасси. 1998. Ноябрĕн 10-мĕшĕ.

Выступил с научными докладами:

1. Травля И.Я.Яковлева в печати //На научной конференции факультета журналистики.

2. И.Я.Яковлев в современной печати //На научной конференции института чувашской филологии и культуры.

3. Освещение деятельности И.Я.Яковлева в современной прессе //На научно-практической конференции Батыревского филиала университета.

4. Дискуссии И.Я.Яковлева с оппонентами //На научно- практической конференции Цивильского регионального научно-образовательного центра.

5. Просветительная деятельность И.Я.Яковлева в современной прессе //На научной конференции в Ульяновске, посвященной 150-летию со дня рождения И.Я.Яковлева, проведенной 17 апреля 1998 г.

6. Полемика И.Я.Яковлева с оппонентами //На международной конференции в подсекции "И.Я.Яковлев и развитие национальных литератур".

7. Публицисты и журналисты из школы И.Я.Яковлева //На научно-практической конференции, посвященной 130-летию Симбирской чувашской школы, проведенной университетом совместно с Чувашским государственным институтом гуманитарных наук в ноябре 1998 г.

8. Н.А.Резюков - мастер перевода //На научно-практической конференции в Чувашском государственном институте гуманитарных наук 8 декабря 1998 г.

В истекшем учебном году мною велись лекционные курсы: история русской журналистики, история чувашской журналистики и литературное редактирование Проводилась специализация по книгоиздательскому делу. Годовая нагрузка кафедрой предусматривалась в количестве 880 часов, фактически выполнил 918 часов

(без включения часов журналистской практики по книгоиздательскому делу). Некоторое увеличение часов годовой нагрузки вызывалось дополнительной работой по руководству курсовыми работами студентов.

Студенты, занимавшиеся в творческой студии, по рекомендации Министерства по развитию предпринимательства, торговли и ремесел Чувашской Республики готовили рукопись книги "Мечты и разочарования бизнесменов". Лучшими признаны очерки студентов Эрбины Никитиной "Палестина у чувашского моря", Ольги Никитиной "Туристическая компания "Интур-люкс", Ирины Скворцовой "Вот он – хороший хозяин". Работа в творческой студии в новом учебном году будет продолжена с тем, чтобы довести подготовку рукописи до полной кондиции и издать книгу в 1999 году.

Студенты, специализирующиеся по книгоиздательскому делу, знакомились с историей и теорией книгопечатания, изучали широкий круг вопросов, с которыми сталкивается редактор в процессе работы над рукописью. Группой студентов этой специализации задумано создание и издание книги "Тăван ял- епле эп сансăр!" с показом многосторонней плодотворной деятельности агрофирмы им. Ленина Батыревского района. В целях осуществления этой задачи летняя журналистская практика студентов проводилась в хозяйстве этой агрофирмы. Каждый студент-практикант имел конкретное задание по освещению накопившегося опыта той или иной отрасли передового хозяйства. Книга, подготовленная студентами, уже издана в объеме 12,4 п. л. тиражом 1200 экземпляров.

Большинство курсовых работ студентов II и III курсов выполнены путем нахождения и изучения значительного круга дополнительной литературы, отличаются глубиной обобщений и выводов. Кроме того, следует отметить такое новое явление: курсовые работы набираются компьютерами, что положительно сказывается на их внешнем оформлении. Таковы, например, курсовые работы студентов группы ФЖ-22-96 Владимира Васильева "Основные авторы журнала "Русская мысль",

Ольги Ткаченко "Периодизация русской и чувашской журналистики" и др.

Тяга ряда студентов к научным разысканиям нами всячески поощряется. Это дало нам возможность к XXXII студенческой научной конференции, посвященной 150-летию со дня рождения И.Я.Яковлева, подготовить новую секцию по истории журналистики, где выступило с докладами 11 студентов. На научной конференции по этой секции первое место заняла студентка группы ФЖ-22-96 Ольга Никитина, выступившая по теме "Н.А.Некрасов как публицист и редактор", второе место – студентка группы ФЖ-21-94 Вера Никитина, выступившая по теме "Научная и публицистическая деятельность доцента К.К.Петрова", третье место– студентка группы ФЖ-22-96 Наталия Дмитриева, выступившая по теме "А.П.Чехов и периодическая печать".

Определенная работа проводилась нами по организационно - методической работе. Вновь составлена рабочая программа по теории и практике литературного редактирования с учетом чувашского материала. Учебная и практическая работа проводилась в академической группе ФЖ-21-94 на основе этой программы.

Относительно моей личной научно-исследовательской работы надо сказать следующее. Сдано в набор научное издание "Зарождение и развитие чувашской публицистики и журналистики. Ч.I" совместно с А.П.Даниловым. Продолжается работа над составлением ч. II этого учебного пособия.

ПЕДАГОГ ТАТА ЖУРНАЛИСТ

Патăрьел районĕнчи Алманчăра Пантелеймон Яковлевич Волков учителе паян кунчченех лайăх астăваççĕ. Иван Тенюшева вăл пĕрремĕшпе иккĕмĕш классенче вĕрентнĕ. Пантелеймон Яковлевич колхоз счетовочĕн ачипе ним тума аптраса çитет: арифметика урокĕнче учитель задача условине кăна çырса ĕлкĕрет, ку ача, аллине тăратса, кăшкăрса та ярать:

–Пăнчулимон Яккăлч, манăнне тĕрĕслĕр-ха, эп шутларăм...

Ытти предметсемпе те çавах. Хăйне кура мар тавçăруллă. Виççĕмĕш кла₋а куçарсан, вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче П.Я.Волков хай ачана çавăтать те 4-мĕш класа илсе кайса лартать.

–Вĕрен çакăнта...– тесе хушса хăварать.

Пĕчĕк Ванюшка /ăна ялта çапла чĕннĕ/ вĕренӳре тăваттăмĕшсемпе те чиперех ĕлкĕрсе пырать. Ялти çичĕ çул вĕренмелли шкултан ултă çул хушшинче вĕренсе тухсан, вăл Патăрьелĕнчи педагогика училищине вĕренме кĕрет. Кунта икĕ çул çурă вĕренсен, Чăваш АССР Çутĕç министрĕн приказĕ тăрăх ăна вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыракан темиçе юлташĕпе пĕрле учителе яраççĕ. Иван Тенюшевăн Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимешĕнчи пуçламăш шкулта пĕрремĕш класа вĕрентмелле пулса тухать. Ун чухне çак учитель хăй те партăран кăшт кăна çӳллĕрех пулнă. Малтанхи вăхăтра йывăрлăхсем те сике-сике тухнă. Вăл кунта часах ачасем валли илемлĕ литература тата хор кружокĕсем йĕркелет. Художество пултарулăх енĕпе çывăхри шкулсен Сăръелĕнчи смотрĕнче Аслă Пăла Тимеш шкулĕ мала тухать. Çакăн хыççăн вара тути çине тинрех тĕк тухма пуçланă каччă ялти шкулта ачасем хисеплекен учитель пулса тăрать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче ăна V– VII классенче вĕрентме куçараççĕ.

Педучилищĕрен вĕренсе тухсан, Тенюшев аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕме ĕмĕтленнĕ. Анчах çак ĕмĕт Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнипе ун чухне пурнăçа кĕреймесĕр юлнă. Ирсĕр фашистсемпе вăл Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче, каярахпа Великие Луки çывăхĕнче çапăçнă. “Чăваш коммуни” хаçат 1942 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче Тенюшев фронтовикăн çырăвне “Манăн пурăнас килет”

ятпа пичетлесе кăларать. Унта çакăн пек йĕркесем пур:

"Манăн пурăнас килет! Манăн çут тĕнче илемĕпе савăнас килет. Манăн хам çуралнă тăван кил-çуртра тăван атте-аннене йăпатса, телейлĕ пурăнас килет. Манăн Тăван çĕршыва татах та ытларах илем кӳрессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлес килет. Манăн çын пек пурăнас килет. Çавăнпа та тискер кайăк пулса кайнă нимĕçе вĕлермелле. Çавăнпа эпĕ пеме– винтовка, чике-чике вĕлерме çивĕч хĕç тытрăм."

Вăрçăн вăрăм çулĕсем Будапешта илсе çитеричченех вăл виçĕ хут аманнă, сывалсан – каллех алла хĕç-пăшал тытнă.

Демобилизаци йĕркипе киле таврăнсан, Тенюшев Чкаловски районĕнчи "Коммунизм байрагы" хаçат редакцийĕн ответлă секретарĕнче, Йĕпреç районĕнчи "Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн" хаçат редакторĕнче, каярахпа республикăри "Молодой коммунист" хаçат редакторĕнче, "Коммунизм ялавĕ" хаçат редакцийĕн пай заведующийĕнче ĕçлет. КПСС Чăваш обкомĕнче пичет, телевиденипе радио секторĕн заведующийĕнче ĕçленĕ тапхăрта И.Я.Тенюшев "Пионер сасси" хаçата, "Капкăн" библиотечкине кăларма пуçлассишĕн тăрăшать. Ку кăларăмсем халĕ, куратпăр, чиперех тухса тăраççĕ.

Шупашкарта университет уçăлсан, И.Я.Тенюшева унта вĕрентме чĕнеççĕ. Республикăна журналистсен квалификациллĕ кадрĕсем кирлĕ. Çакна май И.Н.Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш государство университетĕнчи чăваш чĕлхипе литератури уйрăмĕнче студентсене журналистикăна специализаци йĕркипе вĕрентме пуçлать Иван Яковлевич. Студентсен малтанхи ушкăнĕ журналистикăна вĕренме университет уçăлсанах пуçăннă. 1971 çулта вара вĕсем, аслă пĕлӳ илсе, прессăра ĕçлекенсен йышне хушăннă. Унтанпа факультет кăнтăрлахи уйрăмран– 89, заочнăй уйрăмран– 23, пурĕ 112 журналист вĕрентсе кăларнă. Кунсăр пуçне, хамăр университетра виçĕ çул вĕреннĕ хыççăн 10 студента журналистикăна малалла вĕренме Мускав, Ленинград, Урал университечĕсене янăччĕ. Вĕсенчен тăххăрăшĕ, Чăваш республикине дипломпа таврăнса, хаçат-журналта ĕçлеме тытăнчĕç. Пĕри журналистика специальноçĕпе аспирантурăра.

Чăваш университечĕ вĕрентсе хатĕрленĕ журналистсене халĕ нумай тиражлă тата район хаçачĕсен, Шупашкарта тухса тăракан хаçатсемпе журналсен редакцийĕсенче те,

Чăваш АССР телевиденипе радиовещани государство комитетĕнче те, Чăваш кĕнеке издательствинче те курма пулать. Ачасен тусĕ "Пионер сасси" редакцийĕнчи литература сотрудникĕсем – пурте тенĕ пекех журналистикăна университетра специализаци йĕркипе вĕреннĕ çамрăксем. Чăваш прессин флагманĕ – "Коммунизм ялавĕ" хаçат хăйĕн редакцийĕн чылай пайĕсене университет çунатлантарнă çамрăксене йышăнчĕ. Тĕп пайсенчен пĕринче – ялхуçалăх пайĕнче сотрудниксем тăваттăшĕ те Чăваш университетĕнчен вĕренсе тухнисем. Сăмах май каласан, редакцири ку пай заведующийĕ те унтанах вĕренсе тухнă /Полкачев Сергей Капитонович/.

Университет хатĕрленĕ журналистсенчен чылайăшне ответлă ĕçсем шанса панă: хаçат редакторĕсемпе вĕсен заместителĕсем, ответлă секретарьсем, пай заведующийĕсем пулма çирĕплетнĕ. 1976 - 1981 çулсенче университетран вĕренсе тухнă 48 специалистран çирĕм виççĕшне прессăри ертсе пыракан ĕçе, çав шутран иккĕшне хаçат редакторне, пиллĕкĕшне – редактор заместительне, вуниккĕшне пай заведующине лартнă. Ыттисем корреспондентра тата аслă корреспондентра ĕçлеççĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, вĕсем хăйсене шаннине тӳрре кăларма тăрăшаççĕ.

Çамрăкрах чухне И.Тенюшев сăвă хыççăн сăвă шăрçалать, вĕсене Патăрьел районĕнчи "Колхоз байрагы" тата Елчĕк районĕнчи "Колхоз ялавĕ" хаçатсенче пичетлет. Çакна каччă чухнехи йăпану теме те пулать. Анчах сăввисем вара Шупашкарти хаçат-журналта та курăнма пуçлаççĕ. "Сунтал" 1940 çулти тăххăрмĕш номерте пичетленĕ "Çуллахи каç" сăвăра çутçанталăк илемĕ тулли пуянлăхпа тухса тăрать:

Ял çине çу кунĕн каçĕ
Лăпкăн та тӳлеккĕн ларчĕ.
Ешĕл сад пахчисем çийĕн
Бархат чатăрне вăл карчĕ.
Ярăнса тухать ак уйăх,
Ун тавра хисепсĕр çăлтăр.
Йăпшăнать те çил сад тăрăх,
Ал çупать сад шăпăр-шăпăр.

Сăвăç-фронтовик "Илемлĕ литература" журналта /1944, вунулттăмĕш кĕнеке, 63 с./ хăй çĕнтерӳпе таврăнасса шантарать:

Шăнкăр-шăнкăр шывĕ юхтăр,
Вăхăт ирттĕр еррипе.
Ан кулян эс, пит ан хуйхăр,
Таврăнăп çĕнтерӳпе.

"Чăваш коммуни" хаçатра автор Тăван çĕршывĕпе мухтанать:

Хĕвелĕмĕр– Тăван çĕршывăм,
Хуть уявра, хуть хуйхă чух,
Эс пурпĕр чаплă, пурпĕр сывă,
Санран вăйлийĕ урăх çук.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн Тенюшев сăвăсем мар, ытларах калавсем тĕрлет. Вĕсене республикăри хаçат-журналта пĕрин хыççăн тепĕрне кун çути кăтартать. Каярахпа çав калавсене "Çыхман çапă шăпăр мар" ятпа уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларать. Ю.Иванов рецензент ку кĕнекене çапла хаклать: "Кашни произведени хăйне евĕр илĕртет пире. Хăшпĕр кĕнеке кăмăла майĕпен, систермесĕр тыткăна илет, ăна вуланă çемĕн вулас килет. Ун пек чухне кĕнеке авторĕпе пĕрле хумханатăн, хурланатăн, савăнатăн. И.Тенюшевăн нумай пулмасть республикăри кĕнеке издательствинче пичетленсе тухнă "Çыхман çапă шăпăр мар" кĕнекене алла илсен, тӳрех çавăн пек кăмăл -туйăм çуралать". /Иванов Ю. Ăнăçлă утăм. // Коммунизм ялавĕ. 1965. Дек. 4-мĕшĕ/.

Тепĕр статьяран пĕр-ик йĕрке илсе пăхар: "И.Тенюшевăн "Çыхман çапă шăпăр мар" кĕнекинчи калавсем пысăк мар. Анчах автор пире çак пĕчĕк калавсенчех пысăк шухăш патне илсе çитерет. Кĕнеке лайăх вуланать",– тесе хаклать чăваш халăх писателĕ Василий Алендей. /Алендей Василий. Яланах халăхпа, тăван партипе. //Коммунизм ялавĕ. 1966. Мартăн 4-мĕшĕ/.

Пединститутра вĕреннĕ çулсенче ăна тăлмачсен кружокĕн руководителĕ туса хураççĕ. Вăл ертсе пынипе кружок членĕсем Кави Наджмин "Çурхи çилсем" кĕнекине чăвашла куçарса кăлараççĕ. Çавăн хыççăн Тенюшев белорус калавĕсене, А.Серафимович произведенийĕсене куçарас ĕçе хутшăнать. Л.Н.Толстойăн "Ача чухнехи тата çамрăклăхпа яш ĕмĕр", Н.Котышăн "Чайка" кĕнекисене куçарса пичетлет.

И.Я.Тенюшев массăлла информаци хатĕрĕсем енĕпе тата ытти ыйтусемпе пайтах тĕпчев ĕçĕсем турĕ. Çав

шутра “Ял Советěнче” /1953/, “Роль стенной печати в организации и воспитании детского коллектива” /1959/, “Радио – партилле пропагандăн паха форми” /1960/, “Из опыта работы школьной парторганизации” /1961, тепěр авторпа пěрле/, “Ленинизм – знамя миллионов” /1965/, “Çамрăк журналистсен кружокě” /1980/, “Литературно-публицистическая деятельность чувашского просветителя И.Я.Яковлева” /1980/ кěнекесемпе статьясене асăнса хăвармалла. Ăслăлăх енěпе юбиляр пурě 54 статья пичетлесе кăларнă.

И.Я.Тенюшев университетăн методика советěнче “Студентсем харпăр хăй тěллěн ěçлессине йěркелесси” секци ěçне активлă хутшăнать. Историпе филологи факультетěнче И.Я.Тенюшева Ученăй совет членне суйланă, факультетри “Студенческий горизонт” стена хаçачěн редколлегийěнче вăй хурать. Вăл ертсе пынипе факультетри çамрăк журналистсен “Çивěч перо” кружокěн занятийěсем интереслě те усăллă иртеççě. Унта студентсем опытлă журналистсемпе час-часах тěл пулаççě. Тенюшев хăй ěçлекен кафедрăра – партгрупорг.

“Пионер сассинче” Тенюшев кашни çулах университет абитуриенчěсен “Çамрăк журналист” конкурсне йěркелет. Ку хаçатрах юнкорсен “Çивěч перо” шкулне ертсе пырать. Çав вăхăтрах Иван Яковлевич – журналистсен икě çуллăх семинарěн руководителě. Шупашкарти рабкорсен икě çуллăх семинарěн руководителě.

И.Я.Тенюшев юлташа, пропаганда пайěн штатра тăман инструкторě пулнă май, КПСС обкомěн пичет, телевиденипе радио секторěнче те час-часах курма пулать. Районсене кайсан, хаçатçăсемпе тěл пулса калаçассине, вěсене доклад е лекци туса парассине хăйěн тивěçě тесе шутлать. И.Я.Тенюшев– Чăваш АССР журналисчěсен Союзěн правленийěн членě, журналистсене çулсерен паракан С.В.Элкер ячěпе хисепленекен преми комиссийěн членě.

Хăйне вěл телейлисенчен пěри тесе шутлать. Тăван çěршыв ăна аслă вěренӳ заведенийěсем иккě – И.Я.Яковлев ячěпе хисепленекен Чăваш государство педагогика институтне тата КПСС Центральнăй Комитечě çумěнчи Партин аслă шкулне – вěренсе пěтерме май панă. Кунсăр пуçне, “Чăваш халăх просветителěн И.Я.Яковлевăн литературăпа публицистикăри ěçě-хěлě” темăпа диссертаци хӳтěлесе, вăл истори наукисен кандидачě пулса тăнă. Хăйпе

пĕрлех университетра педагогикăпа психологи кафедринче тăван ывăлĕ Борис Иванович ассистентра вăй хурать. Аслă вĕренӳ заведенийĕнче ывăлĕпе пĕрле ĕçлесси те ашшĕшĕн пысăк телей. Ывăлĕ те ашшĕ çулĕпех пыни уйрăмах ырă: нумаях та пулмасть вăл аспирантурăран вĕренсе тухрĕ, çывăх вăхăтрах диссертаци хӳтĕлеме ĕмĕтленет.

И.Я.Тенюшев хăйне чи малтанах педагог тата журналист тесе шутлать. Икĕ профессийĕпе те унăн ӳсĕмсем çук мар: ялти пуçламăш шкул учителĕнчен – аслă вĕренӳ заведенийĕн доценчĕ, факультет деканĕн заместителĕ /1972-1979 çулсенче/, райхаçат редакцийĕ секретарĕнчен – республикăри çамрăксен хаçачĕн редакторĕ, парти обкомĕнчи сектор заведующийĕ таран илсе пырать ăна ĕçченлĕхпе пултарулăх çулĕ. Университетри ĕçĕ Тенюшевăн икĕ профессийĕнчен пĕрре туса хурать: вăл тăван Чăваш Республикинчи хаçат- журнал валли журналистсем хатĕрлет. Çапла вара ăна халĕ педагог-журналист теме пулать.

И.Я.Тенюшева 1961 çулта РСФСР Педагогика наукисен Академийĕн Грамотине, 1968 çулта Культура работникĕсен профсоюзĕн Центральнăй Комитет Президиумĕн Хисеп грамотине, 1980 çулта ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн Хисеп грамотине панă. Кунсăр пуçне, ăна Хĕрлĕ Çăлтăр, I степень Отечествăлла вăрçă орденĕсемпе тата пилĕк медальпе наградăланă.

Юбиляр сывлăхĕпе те, кăмăл-туйăмĕпе те патвар-ха. Çакна май унăн çыру сĕтелĕ пĕртте пушă мар. Нумаях та пулмасть "И.Я.Яковлев-публицист" кĕнеке пичете пама хатĕрлесе çитерчĕ. Çак уйăхра "Чăваш АССРĕнчи ĕçялкорсен массăллă рейчĕсем" брошюра набора кайма хатĕр пулать. Ун вырăнне çыру сĕтелĕ çине "Чăваш публицистикипе журналистики /Октябрь революцийĕчченхи тапхăр/" алçырăвĕ тухса выртмалла. Планпа вăл 1984 çулта пичетленмелле. И.Я.Тенюшев ĕмĕчĕсем пысăк, пархатарлă. Вĕсене пурнăçа кĕртме чĕререн ырлăх-сывлăх сунатпăр.

И.И.ОДЮКОВ,

чăваш литература кафедрин ертӳçи.

Пионер сасси. 1983. Январĕн 19-мĕшĕ.

В ЖУРНАЛИСТЫ ПОШЕЛ ПО ПРИЗВАНИЮ

Судьба доцента ЧувГУ Ивана Яковлевича Тенюшева интересна тем, что ему довелось стоять у истоков подготовки журналистских кадров в Чувашии. В результате междоусобицы среди ученых ему пришлось на некоторое время оставить кафедру. Но ученый не захандрил, "ударился" в беллетристику и прекрасно доказал, что справляется с этим, издав роман. Затем он плавно перешел в бизнес, продемонстрировав тем гибкость ума и напористость.

–Иван Яковлевич, в Чувашии вы известны как основатель важного дела подготовки национальных журналистских кадров. Как все это начиналось?

–В шестидесятых годах в республике остро ощущалась нехватка национальных журналистских кадров. С открытием университета возникла идея готовить их с первого же года его существования. Первый ректор профессор С.Ф.Сайкин одобрил эту идею. В 1967 году мне было поручено организовать подготовку национальных журналистских кадров путем специализации.

В первое время журналистские дисциплины преподавал я один. Затем пригласили вести их на почасовых началах тогдашнего редактора газеты "Пионер сасси" Клима Сергеева, ответственного секретаря редакции газеты "Коммунизм ялавӗ" Владимира Петрова. Через некоторое время нам удалось заманить из Казанского университета доцента Константина Петрова.

В стенах университета путем специализации было подготовлено и направлено в средства массовой информации 150 молодых журналистов. Подавляющее большинство воспитанников университета успешно справляется со своими обязанностями.

–Что вы считаете главным в журналистике?

–Пресса должна быть честной, независимой, боевой, действительно четвертой властью. Народный поэт Я.Г.Ухсай прессу считал оружием защиты общества, а журналистов – борцами за народное счастье. Чтобы войти в доверие народа, надо им дышать тем же воздухом, каким дышат люди труда, жить теми же интересами, какими живет трудовой народ. Если бы он и сегодня оставался

в строю, то, оседлав Пегаса и взяв в руки перо публициста, повел бы острый разговор о чрезмерно высоких налогах и непостижимом казнокрадстве, об унизительной битве регионов с Москвой за выживание любой ценой, против ее льгот за счет концентрации огромных денежных средств из других областей и республик страны.

И, конечно, будущий журналист должен знать не только историю и теорию публицистики. В стенах университета он получает такие знания, которые помогут ему правильно ориентироваться в подлинных ценностях культуры народа. Засучив рукава изучает язык и литературу. Проходит так необходимые в наше время азы экономической деятельности и менеджмента. Молодой журналист, воспитанник университета, мечтает о возрождении святых традиций чувашского "ниме", сплачивающих волю и труд для общественного созидания. "Ниме" нужно не только для подъема производства и культуры, но и для осуществления лозунга "Жить дружно".

–Как я знаю, вы прошли через войну. Пользуетесь ли льготами как бывший фронтовик?

–В Великую Отечественную войну я вместе со всеми ровесниками надел шинель. Признаться, оказался счастливее многих. Из парней 1923 года рождения девяносто девять из ста остались лежать на полях сражений. Был трижды ранен, однако находил силы снова воспрянуть духом. Награжден орденами Красной Звезды, Отечественной войны 1 степени, медалями, удостоился личной благодарности маршала И.С.Конева. В старые времена я пользовался вниманием, как персональный пенсионер и ветеран труда и войны. Ныне органы социальной защиты республики на просьбу выделить путевку для подкрепления здоровья отвечают: "Работающим пенсионерам путевки не выдаем".

–Считаете ли себя счастливым человеком?

–Счастье – это та звезда, которая светит где-то, зовет и зовет к себе. Счастье в том, что судьба свела меня с такими верными друзьями, как профессора М.М.Михайлов, М.Я.Сироткин, И.И.Одюков, доцент К.К.Петров. Друзья приглашали меня обратно в Будапешт для продолжения службы, друзья доверяли мне работу в редакциях, друзья выражали желание трудиться вместе на кафедре.

–Расскажите о своей предпринимательской деятельности.

–Мне удалось создать производственно-издательское и торговое малое предприятие “Булгар”. Я имею личный патент на печатную продукцию. Выпущено полтора десятка книг, много другой печатной продукции. К ним следует отнести “Рецепты народной медицины”, “Там, где жил и воевал В.И.Чапаев”, “Рассказы о животных”, “Чудо природы– грибы” и т.д.

Известно, книгоиздание не является прибыльным бизнесом, но существующее альтернативное издательство используется нами как творческая студия студентов-журналистов. В данное время они готовят книгу “Мечты и разочарования предпринимателей”. Запланирован выпуск книги об агрофирме им. Ленина Батыревского района “Тăван ял– епле эп сансăр!“.

–Как вы оцениваете работу факультета журналистики?

–Скажу прямо, что это новая, более высокая ступень в деле подготовки журналистских кадров. Здесь найдены новые формы обучения будущих журналистов.

Работа в творческих студиях, учеба по индивидуальному плану с сочетанием работы в средствах массовой информации, преобладание доли самостоятельной работы над учебным материалом – это очень важно.

Открытие факультета журналистики стало возможным только тогда, когда у руля университета встал иниацитивный академик, профессор Л.П.Кураков. А ведь было время, когда некоторые опытные профессора под видом того, что специализация по журналистике якобы мешает филологическому образованию студентов, пытались прекратить подготовку журналистов.

–Расскажите о ваших планах.

–Сдал в печать первую часть учебного пособия “Зарождение и развитие чувашской публицистики и журналистики”. В текущем году должен завершить работу над второй книгой. Одновременно подошел к завершению подготовки к печати сборника исторических легенд. Дописываю вторую книгу романа “Их оставалось только трое”, где ведется повествование о боевых буднях.

Беседу вел А.ДАНИЛОВ.

Советская Чувашия. 1998. 28 января.

ХАЛĔ ТЕ ПУЛТАРУЛЛĂ, ХАСТАР

Кашни ир тенĕ пекех Чăваш патшалăх университечĕн капмар та илемлĕ çĕнĕ çуртне пысăках мар, тăн-тăн кĕлеткеллĕ, çӳçĕ кăвакарнă арçын кĕрсе кайнине курма пулать. Никам та ăна 75 çула çитсе пыракан çын тесе шутламасть – халĕ те çамрăк каччă пекех вăр-вар та пултаруллă вăл. –Ырă кун сунатпăр сире, Иван Яковлевич,– тесе ăшшăн саламлаççĕ ăна кунта вĕренекен студентсемпе университет преподавателĕсем.

Çапла, хаклă вулаканăмăрсем, пирĕн паянхи пысăках мар очеркра сăмах Иван Яковлевич Тенюшев çинчен пырĕ. Унăн ятне пирĕн республикăра пĕлмен-илтмен çын сахал тесен те йăнăш пулмĕ. Эпĕ, çак йĕркесене çыраканĕ, сăмахран, ăна 30 çул ытла лайăх пĕлетĕп. Хальхи пекех ас тăватăп: ун чухне комсомол органĕсенче ĕçлеттĕм. Пĕр пленумра Иван Яковлевича çамрăксен ун чухнехи хаçачĕн / "Молодой коммунист" ятлăччĕ вăл/ редакторĕ пулма çирĕплетрĕç. Çавăн чухне чи пирвайхи хут Иван Яковлевича ăшшăн алă тытса саламларăмăр.

Кайрантарах манăн комсомол обкомĕн аппаратĕнче ĕçлеме тӳр килчĕ. Пулса курман хулапа ял çукчĕ республикăра. Çапла пĕррехинче Патăрьел таврашĕнче ĕçпе эрнене яхăн пурăнтăм. Вăл çуралса ӳснĕ Алманчăна та çитсе килнĕччĕ çав çулла. И.Тенюшев çинчен калаçу хускалчĕ. Алманчăра Пантелеймон Яковлевич Волков учителе паян кунччченех лайăх астăваççĕ. Иван Тенюшева вăл пĕрремĕшпе иккĕмĕш классенче вĕрентнĕ. Пантелеймон Яковлевич колхоз счетовочĕн çак ачипе нимĕн тума аптраса çитет: арифметика урокĕнче учитель задача условине класс доски çине çырса ĕлкĕрет кăна, ку ача, аллине тăратса, кăшкăрса та ярать:

–Пантелеймон Яккăлч, эп шутларăм, тĕрĕслĕр-ха.

Ванюшка ытти предметсемпе те çавнашкалах вĕреннĕ – хăйне кура мар тавçăруллă. Виççĕмĕш класа куçарсан вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче учитель хайхи Ивана çавăтать те аслăрах класа– тăваттăмăшне илсе кайса лартать. Пĕчĕк Ванюшка вĕренӳре тăваттăмĕшсемпе те чиперех ĕлкĕрсе пырать. Ялти çичĕ çул вĕренмелли

шкултан ултă çул хушшинче вĕренсе тухсан, вăл Патăрьелĕнчи педагогика училищине кайса кĕрет. Ăна вĕренсе пĕтеричченех, Чăваш АССР Çут ĕç министрĕн приказĕпе килĕшӳллĕн, вĕренӳре ăнăçлă ĕлкĕрсе пынă темиçе юлташĕпе пĕрле учительте ĕçлеме яраççĕ. Иван Тенюшев Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимешĕнчи шкула лекет. Унта хăйĕн тĕп ĕçне йĕркеллĕ туса пынипе пĕрлех ачасем валли часах илемлĕ литература тата хор кружокĕсем йĕркелесе ертсе пырать. Илемлĕ пултарулăх енĕпе çывăхри шкулсен смотрĕнче Аслă Пăла Тимеш ачисем мала тухаççĕ.

Педучилищĕрен вĕренсе тухсан Тенюшев аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕме ăнтăлнă. Анчах çак ĕмĕт Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнипе ун чухне пурнăçа кĕреймесĕр юлнă. Ирсĕр фашистсемпе вăл Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче, каярахпа Великие Луки çывăхĕнче çапăçнă. "Чăваш коммуни" хаçат 1942 çулхи раштавăн 31-мĕшĕнче тухнă номерĕнче Тенюшевăн фронтран янă "Манăн пурăнас килет" ятлă çырăвне пичетлесе кăларать. Унти çак йĕркесене хумханмасăр вулама çук: "Манăн пурăнас килет! Манăн çут тĕнче илемĕпе савăнас килет. Манăн хам çуралнă тăван кил-çуртра тăван атте-аннене йăпатса, телейлĕ пурăнас килет. Манăн ытарайми Тăван çĕршывăма татах та ытларах илем кӳрессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлес килет. Çавăнпа та тискер кайăк пек ирсĕрленсе кайнă нимĕçсене тĕп тумалла. Çавăнпа эпĕ алла вĕсене пемешкĕн – винтовка, чике-чике вĕлерме – çивĕч хĕç тытрăм".

Вăрçăн вăрăм çулĕсем Будапешта илсе çитериччен Иван Яковлевич виçĕ хут аманнă, сывалса тухсан аллине каллех хĕç-пăшал тытнă.

Вăрçă çĕнтерӳпе вĕçленсен паттăр фронтовик Чкаловски районĕнчи /каярахпа Патăрьел районĕ/ "Коммунизм байрагы" хаçат редакцийĕн явапла секретарĕнче, Йĕпреç районĕнчи "Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн", каярахпа республикăри "Молодой коммунист" хаçатсен редакторĕнче, "Коммунизм ялавĕ" хаçат редакцийĕн пай пуçлăхĕнче вăй хурать, вулакансене илемлĕ очерксемпе, тĕрленчĕксемпе, çивĕч публицистика хайлавĕсемпе савăнтарать. Ун хыççăн парти обкомĕнче пичет

секторне ертсе пырать.

И.Тенюшев И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренсе пĕтерет тата партин аслă шкулĕнчен чи лайăх паллăсемпе вĕренсе тухать. Паллă журналист пичет ĕçне хывнă тӳпе пирки каланă чухне çак ĕçсене те асăнмасăр иртме çук: шăпах çак çулсенче республикăри "Пионер сасси" хаçата çĕнĕрен чĕртсе тăратас тесе тăрăшаттăмăрччĕ, ку енĕпе те Иван Яковлевич сахал мар вăй хунă, "Капкăн" библиотекине йĕркелесе янă.

Педагогика енне туртăнни ăна часах И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне илсе çитерет. Кунти чăваш чĕлхипе литератури уйрăмĕнче студентсене журналистикăна специализаци йĕркипе вĕрентме пуçлать Иван Яковлевич. Студентсен малтанхи ушкăнĕ журналистикăна вĕренме университет уçăлсанах пуçланă. Истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ И.Я.Тенюшев доцент юлашки 25 çул хушшинче /вĕсенчен 7 çулне историпе филологи факультечĕн деканĕн çумĕ пулса ĕçленĕ/ çак факультетра тăрăшнипе чăваш журналисчĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçĕн никĕсне туса ĕçе кĕртнĕ. 1975-1986 çулсенче И.Тенюшев республикăри обществăлла корреспондентсен университечĕн ректорĕнче ĕçлерĕ.

Паян эпир Иван Яковлевич Тенюшева пултаруллă ученăй тата республикăри пичет ĕçĕнче палăрнă çын тесе хаклатпăр. Анчах ку çеç мар: И.Я.Тенюшев – чăвашсен паллă çыравçи те. Литература ĕçне Иван Тенюшев Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăнах пуçланă. Малтанхи вăхăтра вăл ытларах калавсем çырать. Каярахпа вĕсене "Çыхман çапă шăпăр мар" ятпа уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларать. "Калавсем пысăк мар. Анчах автор пире çак пĕчĕк калавсенченех пысăк шухăш патне илсе çитерет. Кĕнеке лайăх вуланать", – тесе хаклать чăваш халăх писателĕ Василий Алентей çак кĕнекене.

Педагогика институтĕнче вĕреннĕ çулсенче И.Тенюшев тăлмачсен кружокне ертсе пырать. Кружок членĕсем Кави Наджмин "Çурхи çилсем" кĕнекине чăвашла куçараççĕ. Çавăн хыççăн Тенюшев белорус калавĕсене, Александр Серафимович произведенийĕсене куçа-

рас ĕçе хутшăнать. Лев Толстойăн “Ача чухнехи тата çамрăклăхпа яш ĕмĕр”, Николай Котышăн “Чайка” кĕнекисене чăвашла куçарса пичетлет.

Виçĕ çул каялла Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 50 çул çитнине анлăн паллă турăмăр. Чаплă юбилей тĕлне паттăр фронтовик И.Я.Тенюшев “Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç” ятлă роман пичетлесе кăларчĕ. Хăй тӳсни-чăтнине, хăй утса тухнă вăрçă çулне витĕмлĕн те ĕненмелле сăнласа парать çак кĕнекере пултаруллă çыравçă. Анчах ку кĕнеке автор пурнăçне йĕрлесе-çутатса паракан произведени мар. Ку вăл пĕтĕм халăх тӳссе ирттернĕ хăрушă та йывăр çулсен ĕненмелле сăнарласа панă летописçĕ. “Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç” – пысăк романăн пĕрремĕш кĕнеки. Халĕ автор романăн ытти пайĕсене хайлать.

Иван Тенюшев тĕпчевçĕ, ученăй, журналист, çыравçă чăвашсене çутта кăларас тĕлĕшпе ырми-канми тăрăшнă Иван Яковлевич Яковлев пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне тĕпчес ĕçре те палăрмалла ӳсĕмсем тунă. “Чăваш халăх просветителĕн И.Я.Яковлевăн литературăпа публицистика ĕçĕ-хĕлĕ” темăпа диссертаци хатĕрлерĕ, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ пулса тăчĕ. Тĕпчев ĕçĕсене пĕтĕмлетсе 1990 çулта “И.Я.Яковлев – публицист” кĕнеке кăларчĕ. И.Тенюшев – пурĕ 11 кĕнеке авторĕ.

Кĕнеке тенĕрен, Иван Яковлевичăн ку ĕçри урăх енне те палăртса хăварас килет. Пенсие тухнă хыççăн вăл пĕр кун та килте ахаль ларман. Часах ăна Чăваш кĕнеке издательствине илеççĕ; кунта вăл редакторта, кайрантарах аслă редакторта тимлет. Çак хушăра урăх авторсем хайланă сахал мар кĕнекене редакцилесе кăларать. Хăй те, пултаруллă çыравçă пулнă май, ытти писательсемпе поэтсене те çивĕчрех, витĕмлĕрех çырма, чĕлхе сĕткенне чухласа илме, кашни сăмахпа выранлă усă курма хăнăхтарать, издательствăри çамрăк редакторсене çак вăрттăнлăхсене алла илме вĕрентет. Çавăншăн ăна издательство ертӳçисем пĕтĕм йыш умĕнче пĕрре кăна мар тав тунă.

Кĕнеке издательствинче манăн Иван Яковлевичпа чылай вăхăт пĕрле ĕçлеме тӳр килчĕ. Çав хушăра унăн килĕнче пĕрре кăна мар пулнă. Тĕлĕнмелле ырă кăмăллă çынсем пурăнаççĕ ку хваттерте. Мăшăрĕ Ольга Заха-

ровна, вăл та ялтах çуралса çын пулнă, çамрăклах ĕçре пиçĕхсе ӳснĕ, хăйĕн пурнăçне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнă: вăл аслă пĕлӳллĕ агроном – Мускаври ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухнă. Ĕмĕр тăршшĕпех хăйĕн специальноçĕпе ĕçленĕ – агрономра, колхоз председателĕнче...

Ачисем те вĕсен, ашшĕ-амăшĕ пекех, тӳрĕ кăмăллă, ырă чунлă, ĕçчен те пултаруллă, нумай вĕреннĕ ăста специалистсем. Пĕр ывăлĕ ашшĕ пекех ăслăлăх кандидачĕ, доцент. Тепри- министерствăри пай пуçлăхĕ, виççĕмĕшĕ – аслă инженер, рационализатор...

Тăван çĕршыв И.Я.Тенюшевăн халăхăмăр умĕнчи тава тивĕçлĕ, сумлă ĕçĕсене манман. Вăрçăри паттăрлăхшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр, I степень Отечественнăй вăрçă орденĕсемпе, пилĕк медальпе наградăланă, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ И.С.Конев тав туса çырнă хут халĕ те И.Тенюшевăн çемье архивĕнче чыслăн упранать. Çавăн пекех ытти хаклă документсем хушшинче ĕçри хастарлăхпа тӳр кăмăллăхшăн панă вун-вун Хисеп грамоти, тав хучĕсем. 1987 çулта Алексей Талвир ячĕллĕ литература премине тивĕçнĕ.

Иван Яковлевич Тенюшев кăрлачăн 19-мĕшĕнче 75 çул тултарать. Апла пулин те килте канса ларасси пирки шухăшламасть. “Пăлхар” ятлă издательствăпа суту-илӳ енĕпе ĕçлекен пĕчĕк предприяти директорĕ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ.

Эпир те хамăрăн хиселлĕ вĕрентекенĕмĕре, чăвашсен паллă тĕпчевçине, журналистне, çыравçине, Тăван çĕршывăн паттăр та хăюллă салтакне юбилей ячĕпе чун- чĕререн ăшшăн саламлатпăр, пурнăçра çирĕп сывлăх та телей, творчествăра çĕнĕ ăнăçусем сунатпăр.

Алексей ПАВЛОВ,
ЧР културăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

АЛМАНЧĂРИ УЯВ

Иртнĕ шăматкун Патăрьел районĕнчи Алманчă ялĕнче паллă тĕпчевçĕ-журналист, çыравçă-романист Иван Яковлевич 75 çул тултарнă май "Алманчă ялĕнчи университет кунĕ" уяв-конференци иртрĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ пĕчĕк мар пулнине çакă та лайăх çирĕплетет: уява ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Л.П.Кураков хутшăнчĕ.

Юбиляр, ЧПУ ăсчахĕсем, журналистсем, çыравçăсем, юрăçсем кăнтăрла Алманчă вăтам шкулĕнчи вĕрентӳçĕсемпе тата ачасемпе тĕл пулчĕç. Кайран ялти культура керменĕнче уяв-конференци уçăлчĕ.

–Паян ялта уяв. Савăнса килтĕм сирĕн пата. Иртнĕ суйлавра алманчăсем Н.Федорова тата мана шанса хăвăр сассăрсене /90 процент/ патăр. Çак чыса ĕçпе çирĕплетсе парăпăр, –терĕ ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Л.П.Кураков. –И.Я.Тенюшев Алманчăри, хăй çуралса ӳснĕ ялти чи хисеплĕ çынсенчен пĕри. Эпĕ ЧПУн экономика факультечĕн деканĕн çумĕнче ĕçленĕ вăхăтра Иван Яковлевич историпе филологи факультечĕн деканĕн çумĕччĕ. Ун чухнех журналистика факультечĕ уçасси пирки ĕмĕтленетчĕ. Эпĕ ректора çитрĕм, сирĕн ентешĕрĕн кун-çул тăршшĕнчи тĕллевне пурнăçлама пултартăм. Университетра халĕ журналистика факультечĕ ăнăçлă ĕçлет. Иван Яковлевич, çулĕпе 75 çула çитрĕ пулсан та, чунĕпе ватăлмасть, паян кун та журналист кадрĕсем хатĕрлес енĕпе тимлĕ ĕçлет.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Л.П.Кураков çавăн пекех ял çыннисен, вырăнти Ленин ячĕллĕ агрофирмăн ĕçĕ-хĕлĕпе те интересленнине пĕлтерчĕ. Хуçалăх иртнĕ çул гектартан вăтамран 37 центнер тĕш тырă туса илнĕ, ытти кăтартусем те пĕчĕк мар. Çак çитĕнӳсен çăл куçне Чăваш енĕн Вице-президенчĕ, Министрсен Кабинечĕн Председателĕ халăхăн ĕçченлĕхĕнче, туслăхĕнче курать. "Ĕçлекен çынна тата пулăшас килет, – терĕ Лев Пантелеймонович.– Пулăшма вара ачасенчен пуçлас терĕм. Вăтам шкула паян хальхи вăхăтри чи паха компьютер парнелерĕм. Каярах ятарлă компьютер класĕ те уçма пулĕ".

ЧПУн Патăрьел филиалĕн директорĕ В.А.Мукин, уни–

верситетăн профсоюз комитечĕн председателĕ О.А.Маркиянов профессор, чăваш филологийĕпе культурин институчĕн директорĕ В.И.Сергеев профессор, чăваш филологийĕпе культурин факультечĕн деканĕ В.Г.Родионов профессор, журналистика факультечĕн деканĕ А.П.Данилов доцент, ЧР Журналистсен союзĕн яваплă секретарĕ А.И.Михайлов, "Ялав" журналăн тĕп редакторĕ Ю.С.Сементер, "Тăван Атăл" журналăн яваплă секретарĕ Г.Н.Желтухин, "Хыпар" хаçатăн тĕп редакторăн çумĕ Г.А.Максимов тата ыттисем те юбиляр пирки ăшă сăмахсем каларĕç, педагог-ăсчах-тĕпчевçĕн чăваш журналистика аталанăвĕнчи пĕлтерĕшĕ пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕç. Тĕрлĕ çулсенче И.Я.Тенюшев доцент патĕнче ăс пухнă студентсенчен чылайăшĕ паян республикăри паллă журналистсем, çыравçăсем. Юлия Силэм, Людмила Сачкова, Галина Платонова, Петр Сидоров-Лаштай, Николай Ларионов... Вĕсем те хутшăнчĕç уяв-конференцие.

Алманчă ял администрацийĕн пуçлăхĕ Б.С.Французов, Ленин ячĕллĕ агрофирма ертӳçи А.Г.Хитров хăйсен ентешĕшĕн савăннине, Иван Яковлевич çак ялта çитĕннĕ тăвата наука кандидатĕнчен пĕрремĕшĕ, Тенюшевсен йăхĕ ĕмĕртенпех ĕçчен те сăпайлă, пултаруллă пулнине палăртрĕç.

Уяв сăвă-юрăсăр епле пултăр? Ялти культура çурчĕ çумĕнчи художество пултарулăх коллективĕ, университетăн "Чăваш ен" ансамблĕ концерт кăтартрĕç. Тата çакна та асăнни вырăнлă: çак каç сцена çинче пуçласа ял гимнĕ янăрарĕ. Унăн авторĕсем – Алманчă пики Лидия Ковалюк тата Юрий Кудаков композитор.

Юбиляр хăйĕн сăмахĕнче "Чăваш журналистикипе публицистикин" учебникне хатĕрлесе çитернине, "Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç" романăн иккĕмĕш томĕпе ĕçленине, "Тăван ялăм, епле эп сансăр" кĕнеке хатĕрленине пĕлтерчĕ.

Мăшăрĕпе, Ольга Захаровнăпа, юлашкинчен "Тăван яла килсе эп курам" юрра шăрантарчĕç.

Н.СМИРНОВА.

"Хыпар". 1998. Кăрлачăн 27-мĕшĕ.

Многоуважаемый Иван Яковлевич!

От всей души поздравляем Вас с замечательной датой - 75-летием со дня рождения. Желаем крепкого здоровья, счастья, успехов в благородном деле подготовки журналистов. Пусть в жизни сопутствуют Вам удача и благодарность учеников.

В течение 20 лет Вы преподаете журналистские дисциплины в Чувашском государственном университете. Вами заложены основы подготовки чувашских журналистских кадров в республике. Ваши выпускники успешно трудятся в редакциях средств массовой информации. Научно-педагогическую и литературную деятельность Вы, Иван Яковлевич, успешно сочетаете с коммерцией, являясь директором Производственно-издательского и торгового малого предприятия “Булгар”.

Ректорат и профсоюзный комитет Чувашского государственного университета выражают Вам, Иван Яковлевич, благодарность за многолетний плодотворный труд и выражают уверенность в том, что Вы и впредь останетесь верным другом университета и будете служить делу воспитания подрастающего поколения.

Л.П.КУРАКОВ,
вице-президент Чувашской Республики,
ректор Чувашского госуниверситета, академик.

О.А.МАРКИЯНОВ,
председатель профкома, профессор.

г.Чебоксары,
19 января 1998 года.

Уважаемый Иван Яковлевич!

Правление Союза журналистов Чувашской Республики сердечно поздравляет вас с 75-летием со дня рождения!

С юношеских лет Вы посвятили себя профессии журналиста и уже более полувека несете эту нелегкую ношу. На всех этапах деятельности - от ответственного секретаря районной газеты до редактора республиканской молодежной газеты, старшего редактора Чувашского книжного издательства - Вы с высокой ответственностью исполняли свой гражданский и профессиональный долг, служили примером творческого отношения к делу.

Глубоким знанием профессии, трудолюбием и отзывчивостью Вы заслужили любовь и признание товарищей по перу, студентов и преподавателей Чувашского государственного университета.

С удовлетворением отмечаем Вашу многолетнюю и плодотворную работу по подготовке журналистских кадров, Ваш весомый вклад в развитие средств массовой информации республики.

Крепкого Вам здоровья, дорогой наш Иван Яковлевич, творческих успехов, сил и энергии, добра и счастья!

г. Чебоксары,
19 января 1998 года

Правление Союза
журналистов Чувашии

ПООЩРЕНИЯ И ПОЧЕТНЫЕ ЗВАНИЯ

1. Грамота Академии Педагогических Наук РСФСР выдана за работу по теме: "Роль школьной парторганизации в укреплении связи школы с жизнью," доложенную на "Педагогических чтениях" 1961 года.

2. Почетная Грамота Президиума Центрального Комитета профсоюза работников культуры выдана за долголетнюю и безупречную работу в органах печати и в связи с 50-летием со дня выхода первого номера газеты "Коммунизм ялавĕ". Москва, апрель, 1968 год.

3. Почетная Грамота Центрального Комитета ВЛКСМ за большую работу по воспитанию подрастающего поколения, активное участие в общественной жизни. Москва, 15 июля, 1980 г.

4. Постановлением бюро Чувашского обкома КПСС и Совета Министров Чувашской АССР от 28 декабря 1982 года за многолетнюю плодотворную работу в партийных органах, печати, научно-педагогическую деятельность и в связи с 60-летием со дня рождения награжден Почетной Грамотой Чувашского обкома КПСС и Совета Министров Чувашской АССР.

5. Почетная Грамота Союза журналистов СССР выдана за многолетнюю плодотворную работу в печати и активное участие в деятельности Союза журналистов Чувашии в связи с 60-летием со дня рождения. Москва февраль 1983 г.

6. Диплом выставки достижений народного хозяйства и культуры Чувашской АССР, посвященной 70-летию Великого Октября, выдан за высокие показатели, достигнутые в предъюбилейном социалистическом соревновании и активное участие в работе выставки. Чебоксары, 1987 г.

7. Постановлением правления Союза журналистов Чу-

вашской АССР от 29 апреля 1988 г. присуждена ежегодная республиканская премия имени Семена Эльгера за лучшие журналистские произведения 1987 г. И присвоено звание лауреата ежегодной республиканской журналистской премии имени Семена Эльгера за книгу "Первые чувашские публицисты", выпущенную Чувашским книжным издательством в 1987 г.

9. Присвоено звание "Почетный член кафедры чувашской литературы" 18 сентября 1989 г.

10. Присуждена Премия имени Алексея Талвира Всечувашской национальной газеты "Вучах" за 1992 г.

11. Свидетельство о присвоении звания "Почетный гражданин села Алманчиково" выдано постановлением главы Алманчиковской сельской администрации от 23 января 1998 г.

12. Присвоено почетное звание "Заслуженный работник культуры Чувашской Республики". Указ Президента Чувашской Республики от 17 февраля 1998 г.

ТРУДЫ И.Я.ТЕНЮШЕВА, ОПУБЛИКОВАННЫЕ В ЖУРНАЛАХ И КНИГАХ

Тавӑру (очерк) //Ялав. 1947. 3№. І,0 п.л.

Ял Советӗнче //Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви; 1958. 2,66 п.л.

Усӑк хӑлхасем (очерк) //Тӑван Атӑл. 1958. 5 №. 0,8 п.л.

Роль стенной печати в организации и воспитании детского коллектива (статья) //В помощь учителям и пионерским вожатым. Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1959. 1,0 п.л.

Ҫӗнӗ ҫӑкӑр (очерк) //Тӑван Атӑл. 1960. – 9 №. 0,8 п.л.

Радио – партилле пропагандӑн паха форми (статья) //Всемерно развивать творческую инициативу масс. Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1960. 0,5 п.л.

Из опыта работы школьной парторганизации (в соавторстве с В.Н.Николаевым) //Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1961. 2,46 п.л.

Ҫыхман ҫапӑ шӑпӑр мар (сборник). Шупашкар: Чӑ

ваш кĕнеке издательстви, 1965. 5,3 п.л.

Пукра (очерк) //Пирĕн пултарулăх. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1965, 0,2 п.л.

Почему красив кипарис (очерк) //Парус. Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1967. 0,7 п.л.

У истоков чувашской письменности (статья) //Искорка. 1971. Декабрьский номер. 0,5 п.л.

Чувашский праздник "Учюк" (статья) //Дружба. 1971. №10. 1,0 п.л.

Дивные всходы (статья) //Наши земляки– Герои Соц. Труда. Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1971. 0,5 п.л.

Сухăр вĕлтĕрен (очерк) //Çĕнĕ кĕвĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1973. 0,5 п.л.

Тăванла пулăшсан (статья) //Ялав. 1973. II №. 0,5 п.л.

Газета "Хыпар" и чувашский просветитель И.Я.Яковлев (статья) //Вопросы русской и чувашской филологии. Чебоксары: ЧувГУ, 1973. 1,0 п.л.

Такой статьи не было (статья) //Дружба. 1974. № 18. 1,0 п.л.

Ытарайми арăмăм (очерк) //Çĕнĕ кĕвĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1976. 0,5 п.л.

Çамрăк журналистсен кружокĕ (статья) //Чĕлхепе литература вĕрентессин хăш-пĕр ыйтăвĕсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1980. 0,5 п.л.

Литературно-публицистическая деятельность чувашского просветителя И.Я.Яковлева /Автореферат //Львов: Укрполиграфинститут, 1980. 1,0 п.л.

Журналистская практика /Методическое пособие //Чебоксары: ЧувГУ, 1983. 1,16 п.л.

Чăваш АССРĕнчи ĕçялкорсен массăллă рейчĕсем //Шупашкар: Чăваш патшалăх университечĕ, 1983. 4,75 п.л.

Оружием публициста (статья) //Народность и художественность произведений Я.Г.Ухсая. Чебоксары: НИИ, 1984. 0,7 п.л.

Манăçми тĕлпулусем (статья) //Тăван Атăл. 1984. 8 №. 0,5 п.л.

Организация самостоятельной работы студентов (В соавторстве) /Чебоксары: ЧувГУ, 1984. 1,0 п.л.

Çĕнĕрен çĕннине шыраса (статья о новом труде

К.К.Петрова) //Тăван Атăл. 1984. 2 №. 0,5 п.л.

Алманчă паттăрĕ (очерк) //Ялав. 1985. 8 №. 0,5 п.л.

Кăткăс задача (статья) //Хатĕр пул. 1986. 4 №.0,5 п.л.

Этем ĕçĕпе илемлĕ (И.Д.Кузнецов 70 çул тултарнă май) //Тăван Атăл. 1986. 6 №. 0,7 п.л.

Кĕрешӳ йыхравçи /Д.А.Демидов //Хатĕр пул. 1986. 7 №. 0,5 п.л.

Ырă ĕçĕн виçĕ сыпăкĕ (статья) //Хатĕр пул. 1986. 9 №. 0,2 п.л.

Темăна уçса парасси //Хатĕр пул. 1987. 1 №. 0,2 п.л.

Сумлă çыравçă халалĕ (В.З.Иванов-Паймен 80 çул тултарнă май) //Хатĕр пул. 1987. 2 №. 0,5 п.л. /И.Яковлев тесе алă пуснă/.

Текстсен тĕсĕсем //Хатĕр пул. 1987. 3 №. 0,2 п.л.

Çимĕçне кура савăт-сапа //Хатĕр пул. 1987. 5 №. 0,2 п.л.

Тиркемелле ан пултăр //Хатĕр пул. 1987. 10 №. 0,2 п.л.

Чăвашсен малтанхи публицисчĕсем //Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1987. 3,95 п.л.

Çыр та пĕлсе çыр //Шкул реформи тапхăрĕнче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентесси. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1988. 1,0 п.л.

Чувашскому книжному издательству – 70 лет (В соавторстве с А.П.Павловым) //Чебоксары: Чувашкнигоиздат. 1990. 2,1 п.л.

Çĕнĕ вăйă //Анне хăçан канать-ши? Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1990. 0,2 п.л.

И.Я.Яковлев – публицист //Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1990. 7,66 п.л.

Юхма енче, Алманчăра //Ялав. 1992. 3 №. 1,0 п.л.

Юрату пурах-ши е çук-ши? //Пике. 1994. 1 №. 0,5 п.л.

Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç //Ялав. 1994. 5 №. 2,6 п.л.

Юманпа Чĕкеç //Çилçунат. 1994. 2,3 №. 0,8 п.л.

Малтанхи çапăçусем //Çилçунат. 1994. 5 №. 1,0 п.л.

Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç //Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1994. 19,72 п.л.

Йĕпреçпе Шемек //Ялав. 1995. 6 №. 1,0 п.л.

Чувашскому книжному издательству– 75 лет /В соавторстве с А.П.Павловым //Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1995. 3,25 п.л.

Это наша с тобой биография //Пресса Чувашии. 1995. № 4. 0,5 п.л.

Вăрт-вăрт – вăрăм шăрт //Çилçунат. 1996. 2 №. 0,2 п.л.

Патăрьелсен паттăрĕ //Ялав. 1997. 1-2 №. 1,0 п.л.

Асаматпа Илемпи (Халăх хушшинчи халап тăрăх) //Пике. 1997. 9-10 №. 1,0 п.л.

Халăха парнеленĕ пурнăç //Ялав. 1998. 3 №. 0,5 п.л. /И.Я.Яковлев çинчен/.

Просветительная деятельность И.Я.Яковлева в современной пессе //Дело его жизни. Ульяновск, 1998. 0,5 п.л.

К вопросу освещения деятельности И.Я.Яковлева в современной прессе //Тăван Атăл. 1998. 2 №. 0,3 п.л.

Пусть надежда и вера умирают последними //Егорова– Анисимова К.А. Жду встречи с тобой . Санкт-Петербург: Политехника, 1998. 0,2 п.л.

Чăн пысăк мул //Ялав. 1998. 7 №. 0,7 п.л.

Публицисты и журналисты из школы И.Я.Яковлева //Школа государственной жизни, науки и приобщения к мировой цивилизации. Чебоксары: ЧГУ, 1998. 0,2 п.л.

Просветительная деятельность И.Я.Яковлева в прошлой и современной печати //Вестник Чувашского университета. 1998. № 1-2. С. 216 – 223. 1,0 п.л.

Чĕмпĕр çути Шăнкăртам хĕррине те çитет //Тăван ял – епле эп сансăр! Шупашкар, 1999. 97 – 114 с. 1,0 п.л.

Тутирекпе Севкке //Çавăнтах. 139 – 155 с. 1,5 п.л.

Алманчă паттăрĕ //Çавăнтах. 155 – 162 с. 0,5 п.л.

Всего опубликовано 88,41 п.л.

Находятся в стадии опубликования.

Первые чувашские публицисты. 3,0 п.л.

Зарождение и развитие чувашской публицистики и журналистики. Ч.1. 7,4 п.л.

Роль и значение И.Я.Яковлева в развитии чувашской журналистики. 1,0 п.л.

И.Я.Яковлев – друг алманчиковцев. 1,0 п.л.

Новое о Симбирской чувашской школе /К выходу в свет книги “Вопросы яковлеведения. Вып.1./.

ПУБЛИКАЦИИ И.Я.ТЕНЮШЕВА В ГАЗЕТАХ

/выборочно/

Зимовке скота – неослабное внимание (массовые рейды селькоров) //Советская Чувашия. 1962. 2 февраля.

Общественным началам в печати – широкую дорогу //Советская Чувашия. 1965. 31 января.

Боевые помощники партийных организаций (о стенных газетах) //Советская Чувашия. 1965. 16 июля.

Вĕсем парторганизацисене пулăшаççĕ (стена хаçачĕсем çинчен) //Коммунизм ялавĕ. 1965. Июлĕн 16-мĕшĕ.

Важной теме – глубокое освещение //Советская Чувашия. 1966. 13 марта.

"Пионер сасси" хаçат мĕнлерех пулать-ши? //Коммунизм ялавĕ. 1966. Апрелĕн 24-мĕшĕ.

Рейд бригадисем çула тухрĕç //Коммунизм ялавĕ. 1967. Июлĕн 7-мĕшĕ.

Ялкор тата тăлмач (Ф.Д.Кузнецов çинчен) //Коммунизм ялавĕ. 1968. Майăн 6-мĕшĕ.

Рейдсене ялкорсен посчĕсем ирттереççĕ //Коммунизм ялавĕ. 1968. Сентябрĕн 14-мĕшĕ.

Пысăк телей //Коммунизм ялавĕ. 1969. Октябрĕн 8-мĕшĕ.

Вăй илнĕ тапхăрта (чăваш пичечĕ историйĕнчен) //Коммунизм ялавĕ. 1970. Майăн 5-мĕшĕ.

Вăрăм çул тата пĕр утăм //Пионер сасси. 1970. Июлĕн 18-мĕшĕ.

Улăпсен вăйĕ (И.Н.Ульяновпа И.Я.Яковлев хушшинчи чаплă туслăх çинчен) //Пионер сасси. 1970. Августăн 25,29-мĕшĕсем, сентябрĕн 5, 8 тата 12-мĕшĕсем.

Дело увенчалось успехом (страничка из большой и неизменной дружбы И.Н.Ульянова и И.Я.Яковлева) //Ленинское знамя. 1970. 12 ноября.

Неле ийлаште (великая дружба) //Марий Коммуна. 1970. 16 декабря.

Кун çути те, чун çути те... //Пионер сасси. 1970. Декабрĕн 8, 12, 19, 22-мĕшĕсем. /М.Я.Сироткин профессорпа пĕрле/.

Подруги (письмо из Ульяновска) //Молодой коммунист. 1970. 12 февраля.

Хулари тĕп стройка (Ульяновскран килнĕ çыру) //Коммунизм ялавĕ. 1970. Мартăн 21-мĕшĕ.

Чи ăшă туйăмпа (Ульяновскран килнĕ çыру) //Пионер сасси. 1970. Мартăн 21-мĕшĕ.

Чăвашсем-и? Вĕсем те пур (Ульяновскран килнĕ çыру) //1970. Мартăн 24-мĕшĕ.

Çил арманĕ çунаттипе тарăн суха касси //Пионер сасси. 1971. Августăн 15-мĕшĕ.

Тĕрĕс куçарас тесен... //Пионер сасси. 1972. Январĕн 18-мĕшĕ.

Шучĕшĕн мар, техĕмĕшĕн //Пионер сасси. 1972. Июлĕн 12-мĕшĕ.

Тайма пуç, юратнă профессор! (С.П.Горский çинчен). //Пионер сасси. 1972. Февралĕн 29-мĕшĕ.

Наш друг наставник (о С.П.Горском) //Молодой коммунист. 1972. 1 марта.

Анкарти хыçĕпе таврăнас марччĕ //Коммунизм ялавĕ. 1973. Июнĕн 9-мĕшĕ.

Боевые помощники партии (в связи с 50- летием первого всесоюзного совещания рабкоров) //Ульяновец. 1973. 6 декабря.

Крылья крепнут в полете (к 60-летию профессора С.Ф.Сайкина) //Ульяновец. 1974. 12 сентября.

Пирĕн ректор (С.Ф.Сайкин профессор 60 çул тултарчĕ) //Коммунизм ялавĕ. 1974. Сентябрĕн 14-мĕшĕ. /М.М.Михайловпа пĕрле çырнă/.

Вăл Чаткасран (С.Ф.Сайкин çинчен) //Пионер сасси. 1974. Сентябрĕн 14-мĕшĕ.

Ырă кăмăлпа, тӳрĕ сăмахпа (Н.С.Дедушкин çуралнăранпа 60 çул тултарнă май) //Пионер сасси. 1975. Мартăн 25-мĕшĕ.

Наставник требовательный и добрый (известному чувашскому критику и литературоведу Н.С.Дедушкину – 60 лет) //Молодой коммунист. 1975. 27 марта.

Слово о друге (о С.П.Ухъянкине) //Молодой коммунист. 1975. 15 мая.

Сума суса ("Салтак мухтавĕ" кĕнеке çинчен) //Коммунизм ялавĕ. 1975. Июнĕн 6-мĕшĕ.

Тĕшши тутă пултăр //Пионер сасси. 1975. Июлĕн 10-мĕшĕ.

Счастье – в труде (О Канюкове В.Я.) //Молодой коммунист. 1976. 8 января.

Кĕрешӳ йыхравçи ("Хыпар" хаçат тухма пуçланăранпа 70 çул çитрĕ) //Коммунизм ялавĕ. 1976. Январĕн 21-мĕшĕ.

Трудная дорога к большому счастью //Ульяновец. 1976. 9 июня.

Воля и труд дивные всходы дают (к 60-летию заслуженного деятеля науки Чувашской АССР профессора В.Ф.Каховского) //Ульяновец. 1976. 15 декабря.

Ырă ĕмĕтпе /В.Ф.Каховский çинчен //Коммунизм ялавĕ. 1976. Декабрĕн 18-мĕшĕ.

Воля и труд (о В.Ф.Каховском) //Молодой коммунист. 1976. 18 декабря.

Тĕпчевçĕ, вĕрентекен (В.Ф.Каховский профессор çинчен) //Пионер сасси. 1976. Декабрĕн 21-мĕшĕ.

Мĕншĕн ырланă? Мĕн пирки тиркенĕ? //Пионер сасси. 1977. Августăн 7-мĕшĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче //Пионер сасси. 1978. Майăн 1-мĕшĕ.

Тăрăшсан, чăтăмлăх çитерсен //Пионер сасси. 1978. Августăн 1, 5-мĕшĕсем.

Ступени роста //Ульяновец. 1979. 28 апреля.

Трудная ступень (о первом празднике Дня печати в Чувашии) //Молодой коммунист. 1979. 5 мая.

Тĕллевлĕ шухăша – такăнман чĕлхепе //Пионер сасси. 1979. Июлĕн 17-мĕшĕ.

Пултарулăх çумне ăсталăх //Пионер сасси. 1979. Августăн 18-мĕшĕ.

Репортаж //Пионер сасси. 1979. Ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Интервью //Пионер сасси. 1979. Декабрĕн 8-мĕшĕ.

Вăрманти тĕлпулу //Пионер сасси. 1980. Апрелĕн 12-мĕшĕ.

Строки о семье Ульяновых /По воспоминаниям чувашского просветителя И.Я.Яковлева //Ульяновец. 1980. 18 апреля.

Вилĕмсĕр улăп (К.В.Иванов произведенийĕсен публицистика туртăмĕсем) //Пионер сасси. 1980. Майăн 27-мĕшĕ.

Такое не забывается //Молодой коммунист. 1980. 28 июня.

Вутне хурсах тӑрсан, вучах хӗрӳ ҫунать //Пионер сасси. 1980. Августӑн 12-мӗшӗ.

Тӗрленчӗк //Пионер сасси. 1980. Октябрӗн 18-мӗшӗ.

Фундаментальный труд //Ульяновец. 1980. 12 декабря.

Тарӑн тӗпчесе ҫырнӑ //Коммунизм ялавӗ. 1980. Декабрӗн 12-мӗшӗ.

Пӗлмен енчен пӗлтӗр, курман енчен куртӑр //Пионер сасси. 1981. Июлӗн 21-мӗшӗ.

Фельетон //Пионер сасси. 1982. Мартӑн 2-мӗшӗ.

Этапы большого пути //Ульяновец. 1982. 30 апреля.

Этапы большого пути /Из истории развития чувашской публицистики и журналистики //Молодой коммунист. 1982. 4 мая.

Хапӑл туса кӗтетпӗр //Коммунизм ҫулӗ /Шӑмӑршӑ/. 1982. Июлӗн 6-мӗшӗ.

Сахал сӑмахпа – тарӑн шухӑш //Пионер сасси. 1982. Июлӗн 10-мӗшӗ.

Хаҫатри материал ячӗ //Пионер сасси. 1982. Ноябрӗн 30-мӗшӗ.

Чӑваш публицистикин малтанхи утӑмӗсем //Коммунизм ялавӗ. 1983. Ноябрӗн 25-мӗшӗ.

Пӗрремӗш пуплев //Пионер сасси. 1983. Февралӗн 1-мӗшӗ.

Юханшыв ҫӑлкуҫран пуҫланать //Пионер сасси. 1983. Мартӑн 5-мӗшӗ.

Растим журналистов //Ульяновец. 1983. 29 апреля.

Оценку ставит читатель //Молодой коммунист. 1983. 5 мая.

Ученый, педагог, воспитатель (об Одюкове И.И.) //Советская Чувашия. 1983. 27 сентября.

Ӑслӑлӑх ҫулӗпе (И.И.Одюков ҫинчен) //Пионер сасси. 1983. Сентябрӗн 27-мӗшӗ.

Вӑл Атӑлъялтан (И.И.Одюков ҫуралнӑранпа 60 ҫул тултарнӑ май) //Ленинец /Шупашкар районӗ/. 1983. Сентябрӗн 27-мӗшӗ.

Ученый, педагог, воспитатель (об Одюкове И.И.) //Ульяновец. 1983. 30 сентября. /Совместно с Дедушкиным Н.С./.

Ими гордится вуз //Ульяновец. 1984. 5 октября.

Ыттисемшĕн тăрăшни пултăр саншăн чун ăшши //Пионер сасси. 1985. Февралĕн 2-мĕшĕ.

Çапла аталаннă пирĕн культура (Т.С.Сергеев кĕнеки çинчен) //Коммунизм ялавĕ. 1985. Февралĕн 26-мĕшĕ.

Пропагандист литературы, критик (к семидесятилетию Н.С.Дедушкина) //Молодой коммунист. 1985. 26 марта.

Пропагандист литературы, критик (к семидесятилетию Н.С.Дедушкина) //Ульяновец. 1985. 29 марта.

Перо фронтра çивĕчленнĕ (чăваш журналисчĕсем Аслă Отечественнăй вăрçăра) //Коммунизм ялавĕ. 1985. Майăн 5-мĕшĕ.

Чунĕпе ачасемшĕн çунать (С.П.Ухъянкин 60 çул тултарнă май) //Пионер сасси. 1985. Майăн 14-мĕшĕ.

Ценный вклад в литературоведение (о книге Н.С.Дедушкина "Дорогою Великой Победы") //Советская Чувашия. 1985. 16 ноября /Совместно с Одюковым И.И./.

Иксĕлми ăнтăлу (И.Д.Кузнецов профессор 80 çула çитнĕ май) //Пионер сасси. 1986. Июнĕн 10-мĕшĕ.

Çĕнтериччен кĕрешме чĕннĕ (Д.А.Демидов- Юлташ çуралнăранпа 100 çул çитрĕ) //Коммунизм ялавĕ. 1986. Июлĕн 27-мĕшĕ.

Патăрьел – паттăр ял //Вучах. 1995. Утă уйăхĕн 26-мĕшĕ.

Тимĕр нумай калаçмасть //Хыпар. 1995. Утă уйăхĕн 28, 29-мĕшĕсем.

Памфлет ăçтан тупăннă? //Хыпар. 1998. Кăрлачăн 21-мĕшĕ.

Как накипь всплывает навет //Советская Чувашия. 1998. 11 февраля.

Мы гордимся своей газетой //Ульяновец. 1998. 10 апреля.

Княçпа çĕрпӳ туслашсан //Тантăш. 1998. Кăрлачăн 22-мĕшĕ.

Юрă хăвачĕ //Авангард /Патăрьел/. 1998. Кăрлачăн 22-мĕшĕ.

Патăрьел – паттăр ял //Çавăнтах.

Травля чувашского просветителя //Вести альма матер. 1998. 24 апреля.

Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç /Шăтнă курăк ӳсетех //Хы-

пар. 1998. Çу уйăхĕн 8, 13, 14, 15-мĕшĕсем.

Министрпа курнăçни (чăвашсен аслă çутлăхçи И.Я.Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçнăранпа 130 çул çитнĕ май) //Хресчен сасси. 1998. Чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕ.

Министрпа курнăçни //Вести альма матер. 1998. 10 ноября.

ПУБЛИКАЦИИ О ЖИЗНЕННОМ ПУТИ И ТВОРЧЕСКОЙ ДЕЯТЕЛЬНОСТИ И.Я.ТЕНЮШЕВА

/выборочно/

Иванов Ю. Ăнăçлă утăм //Коммунизм ялавĕ. 1965. Раштавăн 4-мĕшĕ.

Иванов Ип. Усăллă пулĕ //Коммунизм ялавĕ. 1984. Апрелĕн 5-мĕшĕ.

Иванов Ип. Чăвашсен малтанхи журналисчĕсем //Çавăнтах. 1987. Çурла уйăхĕн 6-мĕшĕ.

Петров К. Еще одна грань //Советская Чувашия. 1990. 20 июля.

Ермилов А. "И.Я.Яковлев – публицист" //Канаш. 1990. Авăн уйăхĕн 29-мĕшĕ.

Пласкин Г. Чăваш публицистикин ашшĕ //Коммунизм ялавĕ. 1990. Августăн 15-мĕшĕ.

Пласкин Г. Чăваш публицистикин ашшĕ //Ялав. 1991. 3 №. 23 с.

Петров К. И.Я.Яковлев çинчен çĕнĕ сăмах //Тăван Атăл. 1991. 6 №. 71 – 72 с.

Васильев Н. Тăван çĕршыв пĕрре кăна //Чăваш Ен. 1994. 49 №.

Алексеев 0. Çĕнĕ кĕнеке /50 – 60 çул каярахри пурнăç тĕкĕрĕ //Хыпар. 1994. Чӳкĕн 12-мĕшĕ.

Тимаков В. Чĕкеç тӳпемĕ мĕн тĕслĕ? //Тантăш. 1994. Чӳкĕн 26-мĕшĕ.

Данилов А.П. Журналистами становятся по призванию //Ульяновец. 1998. 15 января.

Павлов А. Халĕ те пултарулла, хастар //Хыпар. 1998. Кăрлачăн 17-мĕшĕ.

Михайлов А. Паллă тĕпчевçĕ-журналист //Хресчен сасси. 1998. Январĕн 27-мĕшĕ.

Смирнова Н. Алманчăри уяв //Хыпар. 1998. Кăрлачăн 27-мĕшĕ.

Данилов А. В журналисты пошел по призванию //Советская Чувашия. 1998. 28 января.

Желтухин Г. Салтак, ученăй, писатель //Чăваш Ен. 1998. 3 №.

Данилов А.П. Журналист и его работа /К 75-летию со дня рождения И.Я.Тенюшева //Вестник Чувашского университета. 1998. № 1-2. С. 236 – 240.

ЖУРНАЛИСТИКА ЫЙТĂВĔСЕНЕ ÇУТАТСА ÇЫРНĂ ХАЙЛАВСЕМ

1.Тенюшев И. Ял Советĕнче. Шупашкар, 1958.

2.Тенюшев И. Роль стенной печати в организации и воспитании детского коллектива. //В помощь учителям и пионерским вожатым. Чебоксары: книгоиздат, 1959.

3.Тенюшев И. Радио – партилле пропагандăн паха форми //Халăх пуçарулăхне анлăн сарса пырар. Шупашкар, 1960.

4.Тенюшев И. Из опыта школьной парторганизации. Чебоксары, 1961.

5.Тенюшев И. Общественным началам в печати – широкую дорогу //Советская Чувашия. 1965. 31 января.

6.Тенюшев И. Ялкор тата тăлмач //Коммунизм ялавĕ. 1968. Майăн 6-мĕшĕ.

7.Тенюшев И. Рейдсене ялкорсен посчĕсем ирттереççĕ //Коммунизм ялавĕ. 1968. Сентябрĕн 14-мĕшĕ.

8.Тенюшев И. Тĕрĕс куçарас тесен... //Пионер сасси. 1972. Январĕн 18-мĕшĕ.

9.Тенюшев И. Интервью //Пионер сасси. 1979. Декабрĕн 8-мĕшĕ.

10.Тенюшев И. Репортаж //Пионер сасси. 1979. Ноябрĕн 11-мĕшĕ.

11.Тенюшев И. Пултарулăх çумне ăсталăх //Пионер сасси. 1979. Августăн 18-мĕшĕ.

12.Тенюшев И. Çамрăк журналистсен кружокĕ //Чĕлхепе литература вĕрентессин хăшпĕр ыйтăвĕсем. Шупашкар. 1980. 75-86 с.

13.Тенюшев И. Тĕрленчĕк. Юнкорсен "Çивĕч перо" шкулĕ //Пионер сасси. 1980. Октябрĕн 18-мĕшĕ.

14.Тенюшев И. Этапы большого пути //Ульяновец. 1982. 30 апреля.

15.Тенюшев И. Хаçатри материал ячĕ //Пионер сасси. 1982. Чӳкĕн 30-мĕшĕ.

16.Тенюшев И. Пĕрремĕш пуплев //Пионер сасси. 1983. Нарăсăн 1-мĕшĕ.

17.Тенюшев И. Журналистская практика. Чебоксары, 1983.

18.Тенюшев И. Чăваш АССРĕнчи ĕçялкорсен массăллă рейчĕсем. Шупашкар, 1983.

19.Тенюшев И. Организация самостоятельной работы студентов. 1984.

20.Тенюшев И. Ырă ĕçĕн виçĕ сыпăкĕ //Хатĕр пул. 1986. 9 №. 23 с.

21.Тенюшев И. Тема суйласа илесси //Хатĕр пул. 1896. 11 №. 25 с.

22.Тенюшев И. Темăна уçса парасси //Хатĕр пул. 1987. 1 №. 26 с.

23.Тенюшев И. Çимĕçне кура савăт-сапи //Хатĕр пул. 1987. 5 №. 28 с.

24.Тенюшев И. Текстсен тĕсĕсем //Хатĕр пул. 1987. 3 №. 28 с.

25.Тенюшев И. Тиркемелле ан пултăр //Хатĕр пул. 1987. 10 №. 22с.

26.Тенюшев И. Çыр та – пĕлсе çыр //Шкул реформи тапхăрĕнче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентесси. Шупашкар, 1988. 39-51 с.

ПУБЛИЦИСТИКА ХАЙЛАВĔСЕМ

1.Тенюшев И. Чувашский праздник учюк // Дружба. Чебоксары, 1971. № 10. С.115–122.

2.Тенюшев И. У истоков чувашской письменности //Искорка. 1971. Декабрь.

3.Тенюшев И. Тăванла пулăшсан //Ялав. 1973. 11№.

4.Тенюшев И. Газета "Хыпар" и чувашский просветитель И.Я.Яковлев // Вопросы русской и чувашской филологии. Чебоксары: ЧГУ, 1973.

5.Тенюшев И. Такой статьи не было //Дружба. Чебоксары. 1974. № 18.

6.Тенюшев И. Литературно-публицистическая деятельность чувашского просветителя И.Я.Яковлева. Львов: Укр. пол. институт, 1980.

7.Тенюшев И. Оружием публициста / О публицистической деятельности чувашского народного поэта Я.Г.–Ухсая //Народность и художественность произведений Я.Г.Ухсая. Чебоксары: ЧНИИ, 1984.

8.Тенюшев И. Манăçми тĕлпулусем //Тăван Атăл. 1984. № 8.

9.Тенюшев И. Кĕрешӳ йыхравçи //Хатĕр пул. 1986. № 7.

10.Тенюшев И. Чăвашсен малтанхи публицисчĕсем. Шупашкар, 1987.

11.Тенюшев И. И.Я.Яковлев – публицист. Чебоксары, 1990.

ИЛЕМЛĔ ПРОИЗВЕДЕНИСЕМ

1.Тенюшев И. Çыхман çапă шăпăр мар. Шупашкар, 1965.

2.Тенюшев И. Почему красив кипарис. Чебоксары, 1967.

3.Тенюшев И. Сухăр вĕлтĕрен //Çĕнĕ кĕвĕ. Шупашкар, 1973.

4.Тенюшев И. Ытарайми арăмăм //Çĕнĕ кĕвĕ. Шупашкар, 1976.

5.Тенюшев И. Дивные всходы. Чебоксары, 1971.

6.Тенюшев И. Алманчă паттăрĕ //Ялав. 1985. 8 №.

7.Тенюшев И. Кăткăс задача //Хатĕр пул. 1986. 4 №.

8.Тенюшев И. Чувашскому книжному издательству– 70 лет / В соавторстве с А.П.Павловым /Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1990.

9.Тенюшев И. Юманпа Чĕкеç //Çилçунат. 1994. 2-3 №.

10.Тенюшев И. Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç. Шупашкар, 1994.

11.Тенюшев И. Малтанхи çапăçусем //Çилçунат. 1994. 5 №.

12.Йĕпреçпе Шемек. Легенда //Ялав. 1995. 6 №. 97-105 с.

13.Вăрт-вăрт– вăрăм шăрт. // Çилçунат. 1996. 2 №. 14-15 с.

Анатолий Порфирьевич Данилов

Журналистами становятся по призванию

Творческая деятельность

Ивана Яковлевича Тенюшева

Дизайн-верстка:

В.И.Капралов, А.А.Данилов

Книга набрана и сверстана в учебно-издательском центре факультета журналистики Чувашского госуниверситета им. И.Н.Ульянова.

Изд. лиц. ЛР № 020279 от 14.01.97.
Подписано в печать 10.01.98.
Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать офсетная.
Гарнитура Times New Roman Cyr.
Усл. печ. л. 6.0. Уч.-изд. л. 6.97.
Тираж 300 экз. Заказ № 5.

Издательство Чувашского госуниверситета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский проспект, 15.

15